Геннадий САВЕЛЬЕВ

# Юрлатăп юрату çинчен

**Хушса çĕнетнĕ кăларăм**

**Кĕнекене 1979-2009-мĕш çулсенче
çырнă 60 сăвă-юрă кĕнĕ**

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2010

УДК 94 (470.344)
ББК 85.731+63.3 (2Рос.Чув-5Али)+
76.123 (2Рос.Чув) 6-8 Савельев Г.А.
С -12



*Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанаш ялĕнче 1873-мĕш çулта йывăçран туса лартнă чиркӳ, ăна 1985-мĕш çулхи кĕркунне пăснă. Халĕ, 1991-мĕш çултанпа, ун вырăнĕнче çĕнĕ йывăç чиркӳ усăлнă.*

С 12 Геннадий Савельев. **Юрлатăп юрату çинчен.** Сăвă-кĕвĕ. Шупашкар, «Çĕнĕ Вăхăт», 2010. — 144 с.

Сăвă-юрăсенче автор çамрăклăхпа таса юрату туйăмĕсене уçса парать, çуралса ӳснĕ тавралăхпа атте-анне тата Тăван çĕршыв уншăн чи хакли пулнине палăртать. çĕр чăмăрĕ çинчи хăватлă СССР-а туса хурассишĕн тата ăна упраса хăварассишĕн тăрăшнă юлташсене мухтать, социализм çӳлĕпе пыракан нумай нациллĕ туслă Союза аркатакансене тата сăра-эрехпе иртĕхсе пурăнакансене вара чунтанах сивлет.

Çыравçăн чун-чĕринче çулсерен калăпланнă сăвă йĕркисем хальхи çамрăксене тăрашса вĕренме, вăй хурса ĕçлеме, ваттисене хисеплеме, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма, пурнăçа юратма тата çирĕп миршĕн сыхă тăма чĕнеççĕ.

Кĕнекере çавăн пекех Элĕкпе Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпӳпе Етĕрне тăрăхĕсенчи обществăпа политика, культурăпа искусство, вĕрентӳпе медицина, литературăпа мухтавлă çар деятелĕсен, ĕçпе вăрçă ветеранĕсен тата ĕлĕкхипе хальхи çуртсен сăнӳкĕрчĕкĕсене те курма пулать.

© Г. А.Савельев, 2010

# УМСĂМАХ

Ку манăн пиллĕкмĕш кĕнеке. Унччен хисем тăван тавралăх историйĕн документла произведенийĕсем пулнăччĕ, хальхинче вара – юлашки вăтăр çул хушшинче çырнă сăвăсем, хăшĕсем юрăсем те пулса тăчĕç.

…Ачаранах юрра-кĕвве юратса ӳснĕ май, Мăн Ямашри сакăр çул вĕренмелли (халĕ вăтам) шкул саккинчен уйрăличчен, кĕçĕн классенче пĕлӳ паракан атте (Александр Петрович Савельев учитель-фронтовик, коммунист-офицер), 1965-мĕш çулхи мартра, мана ял лавккинчен купăс туянса пачĕ. Çав çулсенче (1963-1969) магазинра Яккушкăньри Василий Никитич Никитин (1906-1973) фронтовик Зоя (1931) хĕрĕпе сутă турĕ. Аттене вăл: «Ан хĕрхен 45 тенкĕ укçуна, ывăлун кăмăлне ан хуç», – терĕ те çӳлĕк çинчи купăса тыттарчĕ. Эпĕ, 8-мĕш класри комсомолец, уншăн питĕ савăнтăм. Шуя хулинчи фабрикăра туса кăларнă музыка инструменчĕпе майĕпен выляма хăнăхрăм: Шупашкарти профтехучилищĕре вĕреннĕ çулсенче те, Байкал леш енчи çар службинче те, ăна аларан ямарăм. Сăмах май, ялти Иван Миронов комсомолецпа (халĕ вăл подполковник, Воронеж хулинче пурăнать) сакăр çул пĕрле вĕрентĕмĕр. Вăл ун чухне класра кĕлеткипе пĕчĕккисен шутĕнчеччĕ, анчах та лăпкă та сăпайлăччĕ, яланах савăнăçлăн кулкаласа çӳретчĕ, хăй вара лайăх вĕренетчĕ. Пултарулăх енчен Ванька сăрлă кăранташсемпе хитре ӳкерчĕксем тунипе тата купăспа хитре кĕвĕсем выляма пĕлнипе те палăратчĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ эпир унпа класри тата коридорти «За учебу» стена хаçачĕсен номерĕсене çулсеренех йĕркеллĕ кăларса пынă, хорпа драма кружокĕсене те çӳренĕ. Купăс калама ăна кӳршĕри Алексей

Грачев (1947-1979) комсомолец вĕрентнĕ пулсан, мана вара Ванька хавхалантарнă.

Çуллахи кунсенче урама тухаттăм та купăса тăсса яраттăм: колхоз кĕлечĕсем çывăхне пуçтарăнакан вăйăри хĕрсемпе каччăсене чăваш композиторĕ-сен лирикăлла юррисемпе тата чуна çĕклентерекен ташă кĕввисемпе савăнтараттăм. Тутарсен юрри-кĕв-ви те çамрăксене килĕшетчĕ. Хĕллехи вăрăм каçсенче концерт-спектакльсем те хатĕрлеттĕмĕр. Хамăр пултарулăха Мăн Ямаш клубĕн сцени çинче çеç мар, кӳршĕ ялсенче те сахал мар кăтартнă, районти смотр-конкурссенче те хутшăннă.

Вăтăр çулалла çывхарса пынă чух чун-чĕрере сăвă йĕркисем те майлашма тытăнчĕç. Ку, паллах, ахальтен пулмарĕ ĕнтĕ. Мĕншĕн тесен, 70-мĕш çулсен варринчен, манăн статья-информацисем райхаçат страницисенче час-часах пичетленсе пычĕç, палланă юлташсем вара сăвăсем те çыратчĕç. Поэзи жанрĕ мана та илĕрте пуçларĕ. Унăн литературăри йĕркисене хамран аслăрах та ăслăрах поэтсен-чен майĕпен вĕренсе пытăм. Пĕрремĕш сăвă-юрă – «Канăçа çухатрăм». Вăл 1979-мĕш çулхи май вĕçĕнче шăрçаланчĕ, кĕр енне Элĕкри радиовещани урлă радио итлекенсем пат-не çитрĕ, каярахпа хаçат-журнал страницисенче пичетленсе тухрĕ. Иккĕмĕш сăвви – «Икĕ юлташ». Ăна эпĕ тепĕр çул пуçламăшĕнче ялти шкулта ĕçпе физика урокĕсем ирттере-кен Василий Бармин (1939-1997) учитель ыйтнипе çырнăччĕ. Хĕрĕхрен иртнĕскер, питĕ савăнчĕ, мари кĕввипе сцена çинче те юрларĕ, çав çулах (1980) авланса та ячĕ. Шӳтлĕ сăвă та часах хаçатсен тата «Капкăн», «Ялав» журналсен страни-цисенче вырăн тупрĕ. Эпĕ вара ялти художество пултарулăх коллективне 1980-1995-мĕш çулсенче ертсе пытăм, пушă вăхăтра çĕнĕ сăвăсем те çыртăм.

Сăвă çырма тата ăна валли килĕшӳллĕ кĕвĕ тупма пĕрре те çăмăл мар. Ку енĕпе пире ăсталăх, чăтăмлăх, чун туртăмĕ

тата пушă вăхăт чылай кирлĕ. Малтанхи сăввăмсем вулакансем патне çитни, паллах, савантарчĕ, çĕнĕ произведенисем çырма хавхалантарчĕ. Хăй тĕллĕн çырма вĕренсе поэзин сарлака çулĕ çине тухасшăн тапаçланакан çыншăн ку çавтери пысăк утăм пекех туйăнчĕ. Эпĕ вара хам 60 çул тултарнă тĕле 60 сăвă çырма çирĕп шухăш-тĕллев тытрăм. Палăртни пурнăçланчĕ.

Хисеплĕ вулаканăм! Сирĕн умăрта – пурнăçри фактсемпе çыхăнтарса çырнă сăвă-юрă кĕнеки. Ăна «Юрлатăп юрату çинчен» ят патăм, мĕншĕн тесен çав сăвăсенче юрату туйăмĕсем уççăнах палăраççĕ. Эпир, сăмах май, çакă çутă тĕнчере ытлашши нумай пурăнаймастпăр. Çавăнпа та çуралнă çĕршывпа тавралăха, аттепе аннене упрамалла тата ялан асра тытмалла, тăвансемпе ял-йыша тата тус-юлташсене хисеплемелле, савнисен таса юратушăн çунмалла тата çуратнă ачисене тĕрĕс воспитани парса ӳстермелле. Юлашкинчен çапла калас килет:

*Юратса пурăнмалла, юратса кăна!*<br>
*Пĕтĕм пурнăç, чăнахах, çĕр çинче кăна.*

Черетлĕ кĕнекеме вара аттепе (1920-1983) аннене (Матрена Елисеевна ял хĕрех пулнă, «Заря» колхоз уй-хирĕнче вăй хурса пенсие тухрĕ, çичĕ ача амăшĕ халĕ кĕçĕн хĕрĕ патĕнче пурăнать, кĕркунне 88 çул тултарать), хамăра пăхнă Анна (1907-1986) мăнака, шăллăмсемпе йăмăксене, тăвансене, пире вĕрентнĕ педагогсене, ялйышпа тус-юлташсене, çавăн пекех иртнĕ вăрçăра (1941-1945) Çĕршыва хӳтĕлесе вилнисене тата Çĕнтерӳпе таврăннă фронтовиксене, партипе комсомол тата тылпа ĕç ветеранĕсене, культурăпа искусство çыннисене, чун-чĕрене ватăлма тата юрату хĕлхемĕсене сӳнме паман маттур хĕрсене халаллатăп.

Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа – 90 çул, Германи рейхсканцлерĕ Адольф Гитлер (1889-1945) СССР-а хирĕç



*Геннадий Савельев Лидия йăмăкĕпе. 2003-мĕш çул*

пуçарса янă вăрçăра Совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшаллă Çарĕ пысăк Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул тултарни те произведенири сăвăсенче яр-уççăн палăрать.

**Геннадий Савельев,**
журналистсемпе писательсен
тата краеведсен Союзĕсен членĕ,
Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ деятелĕ,
Чăваш халăх академикĕ тата хисеплĕ краевед.

## ÇУЛĚСЕМ ТАÇТА ВАСКАÇÇĚ



Вăтăр çул каярах, 1979-мĕш çулхи август пуçламăшĕнче, районти радиовещани редакторĕнче тата дикторĕнче Мăн Ямашра пурăнакан 29-ти Геннадий Александрович Савельев ĕçлеме тытăнчĕ. Пултарулăхĕ ку енĕпе çителĕклĕччĕ. Ара вăл Выла тăрăхĕнчи «Заря» колхоз правленийĕн, партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен ĕç-хĕлне вырăнти радиовещани передачисенче кулленех çутатса тăнă вĕт-ха, ĕçре малта пыракансене хавхалантарас енĕпе концерт программисем те хатĕрленĕ. КПСС Элĕк райкомĕн 2-мĕш секретарĕ Л.М. Владимиров пĕррехинче Геннадий Савельева хăй патне чĕнтернĕ те, пур енлĕн тĕрĕсленĕ хыççăн: «Килĕшмелле. Ыран районти радиовещани редакцийĕнче ĕçлеме пуçăн», – тенĕ. Çавăнтанпа райцентрти тата ялсенчи репродукторсенче унăн уçă та янравлă сасси радио итлекенсене тыткăна илнĕ.

Район хаçачĕн штатра тăман корреспонденчĕ радиопередачăсене интереслĕ тăвассишĕн тимлетчĕ, информацисем пухас енĕпе такампа та çыхăнатчĕ, предприятисемпе организацисен тата учрежденисен пуçлăхĕсене микрофон умне чĕнетчĕ. Района ертсе пыракансем те, сывлăхпа пушар хуралçисем те, миліципе прокуратура тата халăх сучĕн ĕçченĕсем те, вĕ-

рентӳпе воспитани ĕҫĕнче вăй хуракансем те час-часах радио итлекенсем умĕнче тĕрлĕ темăсем хускататчĕҫ.

Эпĕ ун чухне Пионерсен ҫурчĕн директорĕччĕ. Шăпах ҫавăнтанпа пирĕн хушăра та туслă та ĕҫлĕ ҫыхăнусем ҫирĕпленчĕҫ. Хамран вунă ҫул кĕҫĕнрех юлташăм мана та микрофон умне чĕнмесĕр хăвармастчĕ. Кĕскен каласан, Геннадий Савельев хăйĕн ĕҫне чунтан юрататчĕ, передачăсене ятарласа хатĕрленĕ план-программа тăрăх туса пыратчĕ.

Каярахпа пирĕн ĕҫ вырăнĕсем улшăнкаларĕҫ. Эпĕ Урасркилт шкулне куҫрăм, Геннадий Александрович вара, районсенчи энергопредприятисенче ĕҫленисĕр пуҫне, Ҫĕнĕ Атикассинчи вăтам шкулта – аслă пионервожатăй тата Хĕрлĕ Чутайри «Пирĕн пурнăҫ» районхаҫат редакцийĕнче корреспондент пулса тăрăшрĕ. Шăпах ҫав ҫулсенче унăн творчестви анлăн аталанса пычĕ. Тĕпчев ĕҫĕсем тăрăх ăна «Ямаш – тĕне кĕ-мен чăваш» (1995), «»Утатпăр пурнăҫ ҫулĕпе» (1998), «Село мое родное» (2003) тата «Люблю тебя, край родной!» (2007) кĕнеке-справочниксем кăларма май килчĕ. Вĕсемсĕр пуҫне тата республика шайĕнче тухса пынă «Память» (1-11 томсем), «Долгожители Чувашии» (2009), «Аликовская энциклопедия» (2009) справочниксенче те унăн материалĕсем чылай.

Професси енĕпе илес пулсассăн, вăл – электрик, шофер, киномеханик тата фотограф. Халăх хушшинче йĕркеллĕ пурăнакана (эрех ĕҫмест, чĕлĕм туртмасть) депутата та суйланă. Вăл юрă-ташă кĕввисене купăспа ăста вылять, хăй ҫырнă сăвăсем тăрăх илемлĕ юрăсем кĕвĕлет. Пур енлĕ пултаруллă юлташăмăр журналистсемпе писательсен тата краеведсен Союзĕсене кĕ-ме те, «Хисеплĕ краевед», «Чăваш наци культурин тава тивĕҫлĕ деятелĕ», «Халăх академикĕ» тата ытти сумлă ятсемпе нумай Хисеп грамотисене, медальсене тивĕҫнĕ. Хĕрĕх пилĕк ҫул пичет ĕҫĕнче вăй хуракан



*Элĕк райхаçат 70 çул тултарнă ятпа ирттернĕ мероприятие хутшăннă юлташсем. 2002-мĕш çулхи августăн 9-мĕшĕ.*

юлташăмăр районти литературăпа краеведени музейĕн членĕ те. Ку, паллах, ахальтен мар. Эпир пур ĕçе те пĕрле сӳтсе яватпăр, çамрăксене патриотла воспитани пама тăрăшатпăр.

Мухтавлă ентешĕмĕр – пичет ĕçĕн ветеранĕ, январĕн 8-мĕшĕнче 60 çул тултарчĕ. Манăн ăна малтанхи пекех çирĕп сывлăх, вăрăм те телейлĕ кун-çул сунас килет.

**Гурий Терентьев,**
районти халăх музейĕн директорĕ,
хисеплĕ краевед, академик.

*Элĕкри «Пурнăç çулĕпе» хаçат,*
*2010-мĕш çулхи январĕн 13-мĕшĕ*

## КӲРШӖ ЯЛ КАЧЧИ

### (Геннадий Савельев 60 çул тултарнă май)

Çапла, çапла. Эпир унпа пĕр-пĕринчен инçех мар, кӳршĕ ялсенче пурăнатпăр. Вăтăр çултан кая мар туслă çыхăну тытатпăр, час-часах курса калаçатпăр. Халĕ ĕнтĕ эпир, паллах, каччăсем мар, пирĕн çемьесенче те тăватшар ача çуралса пурнăç çулĕ çине тухнă. Шăпах çак тапхăрта (1978 çултанпа) хамран виç-тăват çул кĕçĕнрех юлташăн творчествăлла пултарулăхĕ районти «Коммунизм çулĕпе» (халĕ – «Пирĕн пурнăç») хаçат страницисенче палăрма тытăнчĕç. Информацисем, тарăн шухăшлă статьясем тата сăвăсемпе юрăсем тăтăшах пичетленсе пычĕç. Пĕрремĕш сăвви «Канăçа çухатрăм», тепри «Аса илетĕп…» ятлă. Çамрăклăхпа юрату туйăмĕсене тĕпе хурса çырнă икĕ сăввине те вăл хăех юрра хывнă. Çавнашкалах унăн «Çĕмĕртсем çеçке çурсан…», «Сирень чечекĕ», «Ытамрах-ха эсĕ» сăввисем тăрăх Михаил Николаев (Канаш хули), Владимир Александров (Муркаш районĕ) тата Юрий Кудаков (Шупашкар хули) илемлĕ юрăсем кĕвĕлесе чăваш радио передачисенче усă курнă. Калас пулать, сăвă-юрă Геннадий Александровича кулленхи пурнăçра хавхалантарса пырать. Вăл çырать çеç мар, ăна кĕвĕлет тата çав юрăсене хăех купăспа выляса сцена çинче юрлать те. Ахальтен мар пулĕ вăл, 1980-1995-мĕш çулсенче, хăй çуралса ӳснĕ Мăн Ямашри (Элĕк районĕ) художество пултарулăх коллективĕсене те ăнăçлă ертсе пычĕ, смотр-конкурссенче хаклă парнесене тивĕçрĕ. Çав шута Çĕн Атикассинчи вăтам шкулта Совет Союзĕн Геройĕ А.Р. Логинов лейтенант ячĕпе хисепленсе тăнă тапхăрти пионерсен дружининчи çулсем те кĕреççĕ. Мĕншĕн тесен, шăпах 1988-мĕш çулта

Г. Савельев унта аслă пионервожатăй ĕçĕсене çӳллĕ шайра туса пынă: учительсемпе пĕрлех вĕренӳре ĕлкĕрсе пыракан пионерсемпе комсомолецсене концертсене хутшăнтарнă, тĕрлĕ конкурссем ирттернĕ, шкулăн историне тĕпчесе ятарлă фотоальбомпа журнал туса хатĕрленĕ. Каярахпа ăна районхаçат редакцийĕнче (2000) те ĕçлесе пăхма май килчĕ.

Пултарулăх çулĕпе малалла утнă май, Геннадий Александрович республика шайĕнче те палăрма ĕлкĕрчĕ. Кунта, паллах, тĕпчев ĕçĕсем тăрăх тĕрлĕ çулсенче пичетленсе тухнă «Ямаш – тĕне кĕмен чăваш» (1995), «Утатпăр пурнăç çулĕпе» (1998), «Село мое родное» (2003), «Люблю тебя, край родной!» (2007) кĕнеке-справочниксем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çавăнпа пĕрлех 1995-2007-мĕш Чăваш кĕнеке издательствинче кун çути курнă «Память» (11 том), «Долгожители Чувашии» (2009), «Краткая энциклопедия Красночетайского района» (2004), «Ядринская энциклопедия» (2006), «Аликовская энциклопедия» (2009) справочниксенче те вăл çырнă истори материалĕсем чылай.

Пичет ĕçĕн ветеранĕ хăйне яланах лăпкă та сăпайлă тытать: эрехпе пачах ашкăнмасть, чĕлĕм туртмасть, çĕр çинче йĕркеллĕ пурăнма тăрăшать. Ахальтен мар пулĕ ăна 1990-1995-мĕш çулсенче Мăн Ямаш ял Совет депутачĕ пулма шаннă. Пултарулăхне Хисеп грамотисемпе тата «Хисеплĕ краевед» (1995), «Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ деятелĕ» (2000), «Халăх академикĕ» (2007) ятсемпе чысланă, юбилей медалĕсемпе наградăланă. Журналистсен, краеведсен тата писательсен Союзĕсен членĕ январĕн 8-мĕшĕнче 60 çул тултарчĕ. Юлташăмăра çирĕп сывлăхпа вăрăм кун-çул сунар.

**Лев Медведев,**
Тури Çĕрпӳкассинчи учитель-ветеран.

*Хĕрлĕ Чутайри «Пирĕн пурнăç» хаçат, 2010-мĕш çулхи январĕн 16-мĕшĕ*

## НАШ ОБЩЕСТВЕННЫЙ КОРРЕСПОНДЕНТ



Хочу рассказать о своем хорошем друге, общественном корреспонденте «Чебоксарской правды» Геннадии Александровиче Савельеве, который на днях отметил юбилей.

Познакомились мы с ним в 2001 году в редакции Аликовской районной газеты. Разговорились и меня сразу заинтересовали его патриотические взгляды, критическое отношение к современным реалиям капиталистического общества, убежденность в победе идеи социализма.

Немного о нем. В семье учителя Александра Петровича и колхозницы Матрены Елисеевны Савельевых Геннадий был самым старшим из семерых детей. Еще, будучи учеником Большеямашевской восьмилетки, Геннадий впервые решился отправить свою статью в газету «Знамя труда» Ядринского района. Осенью 1964 года она была опубликована. С этого начался его путь публициста. Статьи и заметки Г. Савельева стали появляться и в газетах «По Ленинскому пути» Аликовского района, «Коммунизм çулĕпе» Красночетайского района, «Пионер сасси», «Молодой коммунист».

С детства Геннадия Савельева увлекает физика, особенно электромеханика. Поэтому с выбором профессии по окончании школы Геннадий определился сразу – решил поступить в ПТУ № 8 г. Чебоксары. Через два года у молодого специалиста на руках был диплом электромонтера.

По окончании училища Аликовский райвоенкомат определяет его в Шумерлинскую автошколу ДОСААФ. Далее следовала воинская служба в Забайкальском военном округе в качестве помощника начальника центральной телефонной связи полка. Тут же экстерном в средней школе при воинской части старший сержант Савельев сдает экзамен и получает аттестат о среднем образовании.

После демобилизации Геннадий возвращается в родное село и работает техником-электриком. Позднее комсомольцы выбирают его секретарем местной организации ВЛКСМ. Без отрыва от производства он учится в Цивильском сельскохозяйственном техникуме и получает четвертый по счету документ об образовании. Далее – работа на предприятиях Аликовского, Красночетайского и Шумерлинского районов.

Но главное умение Геннадия Савельева – содержательно и красиво писать. На сегодняшний день в его архиве насчитывается более полутора тысяч статей, напечатанных почти во всех республиканских и районных газетах и журналах. Пишет он и стихи. По чувашскому радио часто звучат песни на его слова «Когда расцвела черемуха» (композитор Михаил Николаев), «Цветок сирени» (композитор Владимир Александров).

В библиотеках Чувашии можно ознакомиться с книгами Г.А. Савельева «Ямаш – некрещенный чуваш», «Шагаем по жизненному пути», «Село мое родное», «Люблю тебя, край родной!». Готовится к печати следующая книга стихов «Юрлатăп юрату çинчен» («Пою о любви»).

Односельчане его знают как журналиста, писателя, краеведа и коммуниста. С 1995 года Геннадий Александрович является членом КПРФ. Также он состоит в Союзе журналистов РФ и Союзе писателей Чувашской Республики. Является лауреатом литературной премии им. А. Талвира, академиком Чувашской народной Академии. В числе его званий: «Почетный краевед» (1995 г.), «Заслуженный

деятель чувашской национальной культуры» (2000 г.), «Ударник коммунистического труда» (1990 г.). Он награжден Почетными грамотами Госкомпечати ЧР (1998 г.), Союза журналистов ЧР (2005, 2008 гг.), четырьмя памятными медалями ЦК КПРФ за большой вклад в деятельность районной парторганизации, имеет Благодарность от Председателя ЦК партии Г.А. Зюганова (2008 г.).

Геннадий Савельев – активный пропагандист, член Аликовского райкома КПРФ, участник всех выборных кампаний нашей партии. Его публикации хорошо известны читателям «Чебоксарской правды».

Мы, коммунисты Аликовского района, от всей души поздравляем нашего товарища, публициста Геннадия Александровича Савельева с юбилейной датой и желаем ему богатырского здоровья, неиссякаемой энергии и особенно – новых творческих успехов на поприще общественного корреспондента нашей партийной газеты.

**Владимир Егоров,**
учитель-пенсионер из д. Шерашево Аликовского района.

*Газета «Чебоксарская правда», 14 января 2010 г.*

# АКТИВИСТ ПЕЧАТИ – БЛИЗКИЙ ДРУГ РАЙОННЫХ ГАЗЕТ



В селе Большое Ямашево Аликовского района, расположенном на границах Красночетайского, бывшего Советского и Ядринского районов, в семье учителя-фронтовика, 8 января 1950 года родился и вырос активист печати и близкий друг районных газет Геннадий Александрович Савельев.

Обучался будущий журналист-писатель и краевед-исследователь в Чебоксарском ГПТУ №8, в Цивильском сельхозтехникуме, в Шумерлинской школе ДОСААФ и на разных курсах повышения квалификации. Овладел профессиями электрика, шофера, киномеханика. Солдатская служба связиста-телефониста проходила с мая 1969 года по май 1971 года в роте связи МСП г. Улан-Удэ Забайкальского военного округа, где он окончил Сосновоборскую среднюю школу Бурятской АССР.

Писать Геннадий Савельев начал рано: в сельской восьмилетней (теперь средней) школе был редактором стенной газеты «За учебу». Первые заметки были опубликованы на страницах Ядринской районной газеты «Знамя труда» в 1964 году. Кстати, 2010 год юбилейный как для самого автора – ему исполнилось 60 лет, так и для газеты – в апреле будет 80 лет со дня выхо-

да первого номера. С момента сотрудничества с районными и республиканскими газетами и журналами через его руки прошли свыше 1500 газетно-журнальных материалов. Кроме этого 50 текстов прозвучали в эфире чувашского радио, так как он с 1977 года является внештатным сотрудником.

Геннадий Савельев много времени уделяет изучению истории родного края, посещает архивы и библиотеки, встречается со старожилами, готовит документальные фотоальбомы и журналы, пишет дневники, очерки, стихи. Первое стихотворение «Канăçа çухатрăм» («Потерял покой») было опубликовано в Красночетайской райгазете «Коммунизм çулĕпе» в 1979 году и стало его песней. Затем композиторы Михаил Николаев, Владимир Александров и Юрий Кудаков на его стихи сложили лирические песни о любви и молодости. Следующая песня «Аса илетĕп…» («Вспоминаю»), сочиненная автором, также оказалась в их числе.

За последние годы, на основе исследовательских работ ему удалось издать книги «Ямаш – некрещенный чуваш» (1995), «Шагаем по тропе жизни» (1998), «Село мое родное» (2003), «Люблю тебя, край родной!» (2007) и буклет к 100-летию Новоатайской школы, где в 1988 году он работал старшим пионервожатым. Очередная книга стихов на чувашском языке «Юрлатăп юрату çинчен» уже подготовлена к печати. Помимо этого им подготовлено и представлено ряд документально-исторических материалов для книг-справочников «Память» (11 томов), которая издавалась в 1995-2007 гг., «Краткая энциклопедия Красночетайского района» (2004), «Ядринская энциклопедия» (2006), «Аликовская энциклопедия» (2009) и «Долгожители Чувашии» (2009).

За многолетнее и плодотворное сотрудничество с республиканскими и районными изданиями Геннадий Савельев в 1995 году был принят в ряды Союзов краеведов и журналистов, а через год стал членом Союза писателей

Чувашии. Он имеет звания «Почетный краевед» (1995), «Заслуженный деятель Чувашской национальной культуры» (2000), «Народный академик Чувашии» (2007), награжден Почетными грамотами Госкомитета по печати ЧР (1998) и Союза журналистов ЧР (2005, 2008).

Журналист, писатель, краевед продолжает заниматься любимым делом. В свободное время играет на гармони свои любимые мелодии индийских, татаро-башкирских, чувашских и русских композиторов. Продолжительное время руководил коллективом сельской художественной самодеятельности и на смотрах удостаивался поощрительных наград, а также не раз избирался депутатом сельского Совета. Является активным членом общества охраны природы и памятников культуры. Сорок пять лет творческой жизни активиста печати позади, и он продолжает сотрудничать с районными изданиями, в том числе с газетой «Знамя труда». В юбилейные для него и газеты год хочется пожелать ему крепкого здоровья, долгих лет жизни и дальнейших творческих успехов.

*Ядринская районная газета*
*«Знамя труда»,*
*16 января 2010 г.*

# ПУРНĂÇПА ÇЫХĂНТАРНĂ СĂВĂСЕМ

## Икĕ юлташ

*Мăн Ямаш шкулĕнче ĕçленĕ Василий Леонтьевич Бармин (1939-1997) учитель ыйтнипе, концертсенче юрлама, 1980-мĕш çулхи февральте çыртăм. Шăпах çав çул хамран вунă çул аслăрах юлташăм та Мăн Явăшри Галина Германовна Расторгуева (1948) педагогпа мăшăрланчĕ.*

Пĕрле: Юлташсем эпир ялан
Пурăнатпăр пит аван.
Пулăшатпăр авалтан
Пĕр-пĕрне чунтан-вартан.

Пĕри: Пурăнатăп эп пĕччен,
Тунсăхлатăп кунсерен.
Хĕрсене аса илсен
Вĕçет ыйхă каçсерен.

Тепри: Эп вара çемьеллĕ çын,
Вăл енчен ман лăпкă чун.
Эс те, тусăм, ан кулян,
Шырасан савни тупан.

Пĕри: Çамрăк ĕмĕр иртиччен
Çӳрес килчĕ савăнса.
Шур сухал çитĕниччен
Курăп-ши хăть авланса?

Тепри: Авланма халь çăмăл мар,
Çамрăк хĕрсем шырар мар.
Марука, тен, тиркер мар,
Унран ыр хĕр кирлĕ мар.

Пĕри: Тавах ăслă сăмахна,
Шута илĕп-ха ăна.
Ун патнех, эппин, утар,
Ĕмĕрех пĕрле пулар.

*2.02.1980*

## Çурхи ăпкă каçсенче

Май уйăхĕн варринче
Çеçке çурчĕç çĕмĕртсем.
Çурхи лăпкă каçсенче
Вăйя тухрĕç çамрăксем.

Шурă çĕмĕрт çеçкисем
Илемлетрĕç таврана.
Унăн паха шăршисем
Килентереççĕ мана.

Çурхи ăшă кунсенче
Пĕтĕм чĕрчун савăнать.
Çурхи лăпкă каçсенче
Савăк туйăм явăнать.

Çурхи тӳлек каçсенче
Кĕрес килмест урамран.
Çамрăк хитре хĕрсене
Ярас килмест хам çумран.

Садсем симĕсленнĕ чух
Çутçанталăк чĕрĕлет.
Пĕрне пĕри савнă чух
Чун-чĕре çепĕçленет.

Савнин сарă çӳçĕсем
Илем кӳреççĕ питне.
Мăшăр кăвак куçĕсем
Тинкереççĕ ман çине.

Чечеклентĕр çут тĕнче
Ялан çапла çуркунне.
Çурхи лăпкă каçсенче
Чунтан савар пĕр-пĕрне.

*1980-мĕш çулхи май уйăхĕ.*

## Туслăха упрасчĕ

Шап-шурах лараççĕ
Çĕмĕрт çеçкисем.
Шăршине сараççĕ
Таврара вĕсем.

Урама тухаççĕ
Ял çамрăкĕсем.
Вăйăра юрлаççĕ
Хитре хĕрĕсем.

Ăмăртса ташлаççĕ
Хастар йĕкĕтсем.
Асăмра юлаççĕ
Купăс кĕввисем.

Яшсем савăнаççĕ
Çырма пусĕнче.
Чунсем савăшаççĕ
Çĕмĕрт айĕнче.

Тӳпере çунаççĕ
Çутă çăлтăрсем.
Чĕререн тухмаççĕ
Çепĕç сăмахсем.

Шурăмпуç хĕрелчĕ
Шăпчăк юррипе.
Хĕвел те çĕкленчĕ
Вăрман хĕррипе.

Туслăха упрасчĕ
Ĕмĕр-ĕмĕрех.
Пĕр-пĕрне савасчĕ
Пĕр вĕçĕмсĕрех.

*2000-мĕш çул, февраль.*

## Хĕрсем – хитре чечексем

Хĕрсем – хитре чечексем,
Пире астаракансем.
Ялти сăпай пикесем –
Чуна çунтаракансем.

Хĕрсем – пулас арăмсем,
Ача-пăча хуçисем,
Пурнăçа тăсакансем,
Чун-чĕресен уççисем.

Маттур хĕрсем сахал мар,
Пур ĕçре вĕсем вăр-вар:
Юрă-ташăра хастар,
Сывлăх тĕлĕшпе патвар.

Хитре хĕрсене курсан
Чĕрем çĕкленсе тапать.
Ăшшăн пăхса йăл кулсан
Юратас килсе каять.

Савăк кăмăллă хĕре
Ачаранах яш сăнать.
Çитĕнсе çитнĕ çĕре
Савнă мăшăрĕ тăвать.

Хĕр чысне упракана
Арçын ялан хисеплет.
Пĕр-пĕрне савакана
Шăпа телей парнелет.

*2002-мĕш çул, январь.*

## Шухăшсем

Пĕрре кăна курнипех
Килĕштертĕм эп сана.
Асра юлтăн çаплипех,
Савăнтартăн ман чуна.

Çăлтăрсем те тӳпере
Çĕр каçипех çунаççĕ.
Шухăшсем те чĕрере
Мана канăç памаççĕ.

Çĕмĕртсем те çеçкере
Тутлă шăршă сараççĕ.
Çамрăксем те чечекре
Савнă мăшăр шыраççĕ.

Тĕлĕксем те çĕрĕпех
Пире пĕрлĕх кӳреççĕ.
Туйăмсем те вĕçĕмех
Алла-аллăн çӳреççĕ.

Пĕр-пĕрне юратнипех
Мăшăрлă ман пуласчĕ.
Çĕр çула çитичченех
Ыр курса çеç пурнасчĕ.

*1994-мĕш çулхи çуркунне*



*Элĕк районĕнчи Яккушкăнь ялĕнче 1950-мĕш çулта çуралнă хĕрсем (сулахайран): Полина Воробьева, Галина Николаева, Нина Егорова Мăн Ямашри 8 çул вĕренмелли шкул хыççăн.*

# Ялсенчи художество пултарулăх коллективĕсен членĕсем



*Етĕрне районне кĕрекен Йĕрĕхкассинчи юрă-ташă ăстисем. 1973 ç.*



*Етĕрне районĕнчи «Выльский» совхозăн ĕçпе юрă тата спорт уявĕнче. 2008-мĕш çулхи июнĕн 12-мĕшĕ.*





*Йĕрĕхкассинче клуб заведующийĕнче 30 çул ĕçленĕ Раисăпа (1933) унăн Харьков типографийĕнче ĕçлекен Геннадий (1941) шăллĕ.*



*Мăн Явăш вăтам шкулĕнче 25 çул биологи вĕрентекен Альбина Михайловна Крылова (1955).*



*Йĕрĕхкассинчи клуб заведующийĕ Галина Ивановна Федорова (1974). 2008 ç.*



*Хĕрлĕçыр ялĕнчи клуб заведующийĕ Зинаида Быковăпа Галина Обабкова тата Михаил Михайлов (1964) купăссă. 2010-мĕш çул.*



*Хупахушкăнь ялĕнчи Михайловсен çемйинчи 10-мĕш ача - Зоя (1967). Вунă çул ытла кӳршĕри «Свобода» колхоз кантурĕнче бухгалтер ĕçĕпе тимлет. Ял-йышра - пысăк хисепре, ăна кăçал ял Совет депутатне суйланă. Ывăлĕпе хĕрĕ те амăшĕпе кăмăллă. 1988 ç.*



*Яманкассинче пурăннă, Çĕнĕ Атикассипе Мăн Ямаш вăтам шкулĕсенче баянистка пулнă Зоя Алексеевна Романова (1941-1997).*



*Г.В.Краснов (1937) - чăваш халăх писателĕ*



*Г.В.Федоров (1947) - совхоз директорĕ (1976-1995)*



*В.С.Бобров (1966) - СХПК председателĕ 1995 çултан*



*Л.П.Ефимова (1949)- Мăн Ямашри ветеринар*



*Л.П.Ефимова (1959) - Урапакасси ял хĕрĕ*



*З.И.Григорьева (1952-1980) - Мăн Ямаш ял хĕрĕ*



*Н.А.Ильина (1958) - Мăн Ямаш шкул технички*



*Е.Л.Савельева (1959) - Мăн Ямаш магазин сутуçи*



*Л.И.Павлова (1962) - Мăн Ямаш шкул завхозĕ*



*Мăн Ямашри Мария Борисова (1942) почтальонкăпа çĕнĕ урамри Мария Васильева (1933-1981) колхозница 1961-мĕш çулта.*




*Мăн Вылă ял администрацийĕн специалисчĕ М.Л.Иванова, библиотекăра ĕçлекен А.Г.Андачковăпа Г.В.Иванова тата Г.А.Савельев писатель-краеведпа Е.А.Васильева культработница 2009-мĕш çулхи июль уйăхĕнче.*

## Хăçан пулĕ-ши йĕрке?

Ял варринче клуб пурри
Никама савăнтармасть.
Темшĕн шăтăк ун тăрри,
Юрпа çумăра тытмасть.

Сайра-хутра клубĕнче
Тукалаççĕ докладсем.
Тепĕр чух сцена çинче
Пулкалаççĕ концертсем.

Унта кино курнипе
Пăтранать ял çамрăкĕ.
Ют çĕршыв картинипе
Пăсăлать ун савăкĕ.

Плакат, лозунг, стенд тени
Курăнмасть сцена çинче.
Клуб уçса хупаканни
Ларать экран умĕнче.

Хăçан пулĕ-ши йĕрке
Кермен евĕр çуртсенче?
Мĕн шутлаççĕ-ши лере,
Районти кантурсенче.

*1994-мĕш çулхи кĕркунне*

## Культурăпа искусствăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем



*К.В.Воронов (1914-2001) - учитель-фронтовик, краевед (Тури Хурасан)*



*Г.К.Терентьев (1939) - учитель, раймузей ĕçченĕ (Ураскилт)*



*З.З.Андреева (1947-1992) - чăваш халăх артистки (Тавăт)*



*Г.И.Смирнова (1955) - чăваш халăх артистки (Мăн Вила)*



*Л.М.Константинова (1949) - культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (Элĕк)*



*Е.К.Османова (1962) - солистка (Мăн Хăмаркка)*



*А.Н.Самсонов (1966)- солист, районти культура пай пуçлăхĕ (2-мĕш Хурашаш)*



*А.И. Смелова (1939) - чăваш халăх артистки (Етĕрнери Ирçе ялĕ)*



*С.Р.Савельева (1958) - чăваш халăх артистки (Советски, Хурамалăх)*



*В.Л.Клементьев (1965) - чăваш халăх юрăçи (Пупăлькасси)*



*Н.С.Ижутов (1920-1997)- СССР геройĕ, полковник (Иремкасси Ямаш)*



*А.С.Сергеев (1934-1987) - композитор (Çĕнĕ Ямаш)*



*Е.В. Иовлева (1952) - чăваш халăх артистки (Яматкас Ямаш)*



*В.В.Синичкин (1936-2003) - писатель (Мăн Ямаш)*



*В.С. Михайлов (1939-2005) - писатель (Мăн Ямаш)*



*М.П.Кузнецов (1955) - СССР спорт мастерĕ (Яккушкăнь)*



*В.Н.Улисов (1957) - журналист-краевед (Эскетен)*



*Л.Т.Тимофеев (1926-1996) - фронтовик-гармонист (Мăн Ямаш)*



*В.И.Ильдер (1958) - учитель-баянист (Мăн Ямаш)*

## Çумăр, эсĕ ăçта-ши?

Кăçалхи шăрăх кунсем
Йăлăхтарсах çитерчĕç.
Колорадо нăррисем
Питĕ хăвăрт ĕрчерĕç.

Хĕвел хĕртрĕ тӳперен
Хĕрĕх градуса çити.
Ăшă хумĕ инçетрен
Вĕçрĕ çурçĕре çити.

Вăйлă çумăр çунипе
Тепĕр çĕрте шыв тулать.
Сар хĕвел çунтарнипе
Пирĕн патра тар юхать.

Икĕ уйăх таврара
Пĕр çумăр та çумарĕ.
Килти садпа пахчара
Улма ăнса пулмарĕ.

Ытла шăрăх тăнипе
Çĕр çурăлчĕ – тӳсмерĕ.
Типсе-ĕнтсе янипе
Кĕрхи курăк ӳсмерĕ.

Çăлти, çырмари шывсем
Анса кайрĕç виçерен.
Ялсенче пурнакансем
Кĕтрĕç çумăр кунсерен.

Çутçанталăк пулăмĕ
Пире шухăша ярать.
Унăн вĕри пусăмĕ
Пурне те пăлхантарать.

Лайăх çумăра кĕтсе
Хăшĕ чиркĕве çӳрет.
Йăла-йĕркене пĕлсе
Тутлă пăтă пĕçерет.

Çумăр,  эсĕ ăçта-шинь
Тухăçра е анăçра?
Уçă çилĕ ăçта-ши:
Сулхăнра, тен, улăхра?

Кĕтни çавах çитĕ-ха,
Çумăрĕ те çăвĕ-ха.
Йĕпетсе те ярĕ-ха,
Каю та çĕкленĕ-ха.

*2001-мĕш çул, август.*

## Вӗлле хурчӗ

Улмуççи чечек кăларчӗ
Ăшă çуркунне.
Вӗлле хурчӗ те вăранчӗ,
Туйрӗ шăршине.

Çунатне сарса вăл тухрӗ
Хăйӗн йăвинчен.
Тимлесех сӗткенне пухрӗ
Чечексем çинчен.

Пӗчӗк хурт канма пӗлмерӗ
Çу кунӗсенче.
Пӗр вӗçӗмсӗрех сӗрлерӗ
Ял пахчисенче.

Кирлӗ пулӗ унăн пылӗ
Кӗрекесенче.
Чир-чӗртен те лайăх сиплӗ
Йывăр кунсенче.

*28.05.1998*

## Пчелы

Расцвели весной
Лесные луга.
Пчелы всей толпой
Стремились туда.

Запах ландыша
Приманил их всех.
Крылья малыша
Приподнялись вверх.

Смело летели,
Где цветы – гектар.
Дружно собрали
С них они нектар.

На столе всегда
Нужен будет мед.
Он нас иногда
Вылечит от бед.

*15.12.2002 г.*

## Соседка

Ненаглядная красотка
По соседству живет.
Стройная ее походка
Сразу всех и завлечет.

Милая моя, Людмила,
Ты сияешь, как цветок.
И всегда меня манила,
Грела душу огонек.

Постоянно наблюдаю
Возле дома я тебя.
Вечерочками страдаю,
Пожалей же ты меня.

Как же быть юнцу: не знаю,
Потерял покой и сон.
Но надежду не теряю,
Зазвучит и Мендельсон.

*15.12.2002.*

## Манаймастăп

Шăпчăксем юрлатчĕç колхоз пахчинче,
Çуллахи пĕр ăшă, лăпкă каçхине.
Санпала тĕл пултăм вăйă картинче,
Çийĕнчех систертĕм хам юратнине.

Каçсерен çӳрерĕм сирĕн кил умне,
Яланах пуласшăн санпа юнашар.
Сăн-сăпату туртрĕ мана хăй çумне,
Чăнахах тивертрĕ чунра вут-кăвар.

Таса юратушăн çунчĕ чун-чĕре,
Телейлĕ кунçулшăн вĕçрĕ ĕмĕтре.
Савнă тусăм кайрĕ сивĕ çурçĕре,
Юрату саманчĕ юлчĕ тĕлĕкре.

Нихăçан манаймăп пĕрле пулнине,
Сăпайлăн кăна калаçса кулнине,
Çĕмĕртпе сиренĕн тутлă шăршине,
Юратупа тулнă чунсен ăшшине.

*1989-мĕш çул, май уйăхĕ.*

## Пулаймарăмăр пĕрле

Чаршава яри уçса хурса,
Çамрăксем вылярĕç тăрăшса.
«Шурă хурăн айĕнче» ларса,
Купăса эп тăсрăм савăнса.

Курма пынă халăх хушшинче,
Асăрхарăм хитре ют хĕре.
Куçăмсем каймарĕç ун çинчен,
Паллашма васкарĕ чун-чĕре.

Пьеса хыççăн, чаршав хупăнсан,
Анса лартăм хĕрпе юнашар.
Купăс кĕвви ташша йыхăрсан,
Пулас килчĕ татах та хастар.

Çывхарса килекен çуркунне,
Парнелерĕ мана савнине.
Хĕрпике хускатрĕ чĕрене,
Магнит евĕр туртрĕ хăй енне.

Çав каç хыççăн, шăпах уйăхран,
Тухса кайрăм часах эп ялтан.
Куçусем ачашшăн пăхнăран,
Тунсăхпа эп çунтăм çав ялан.

Икĕ çул çӳрерĕм салтакра,
Байкал леш енчи сĕм вăрманта.
Эсĕ юлтăн манран аякра,
Выл енчи авалхи пĕр ялта.

Çырусем çыраттăмăр аван,
Пĕр-пĕрне телей, сывлăх сунса.
Анчах эсĕ урăхне савсан,
Шухăш-туйăм кайрĕ ман çунса.

Пĕрре çеç кăна курнипелех,
Килĕштертĕм сана чăннипех.
Шел, пулмарĕ пĕрле пуласси,
Чун-чĕререн савса пурнасси.

*1999-мĕш çулхи апрелĕн 5-мĕшĕ.*

*Геннадий Пласкин çырнă «Шурă хурăн айĕнче» пьеса тăрăх хатĕрленĕ спектакле ялти драмкружок членĕсем шăматкун каç, 1969-мĕш çулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче, выляса кăтартрĕç. Ун умĕн ял клубĕнче ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ пулчĕ. Вырсарникун – геологсен кунĕ.*

## Ултавлă юрату

Çуллахи пĕр ăшă каç
Эп паллашрăм санпала.
Эсĕ те çав лăпкă каç
Хавас пултăн манпала.

Çамрăк эп – вунçиччĕре,
Эс вара – вунпиллĕкре.
Хыпса илчĕ чун-чĕре,
Вĕçрĕм эпĕ пĕлĕтре.

Çӳрерĕмĕр каçсерен
Шуçăм çути киличчен.
Колхоз ĕçне кунсерен
Тухрăмăр çу иртиччен.

Вĕренӳ çулĕ çитсен
Утрăн эс ялти шкула.
Электрик ĕçне пĕлме
Илĕртрĕ мана хула.

Кунсем, çулсем шунă май
Хĕрсе пычĕ юрату.
Савни улталаннă май
Чуна илчĕ ырату.

Ялтан инçетре чухне
Шухăшсемпе пурăнтăм.
Çартан таврăннă чухне
Сан паталлах туртăнтăм.

Кĕтмен-туман çĕртенех
Пирĕн туслăх арканчĕ.
Ултавлине пĕлсенех
Сукмак çумпа хупланчĕ.

Кирлĕ марччĕ çӳреме
Иккĕленнĕ пулсассăн.
Манăн çамрăк чĕреме
ĕненмерĕн пулсассăн.

Çуллахи тӳлек каçсем
Пире телей кӳмерĕç.
Кулса пăхакан куçсем
Урăххипе вылярĕç.

Иртсе кайрĕ юрату.
Унпа пĕрлех ырату.
Асра юлчĕ сан яту,
Илемлĕ сăн-сăпату.

*2001-мĕш çул, май.*

## Юратушӑнах ҫунаҫҫӗ

Юрату ҫинчен ҫыраҫҫӗ
Поэтсем, писательсем.
Уншӑнах хыпса ҫунаҫҫӗ
Тӗрлӗ халӑх ҫыннисем.

Юратӑва кӑтартаҫҫӗ
Артистсем, художниксем.
Ҫавӑнталлах туртӑнаҫҫӗ
Ҫӗр ҫинче ҫӳрекенсем.

Юратупа савӑнаҫҫӗ
Пурӑнма пӗлекенсем.
Пур ҫӗрте те палӑраҫҫӗ
Вӑй хурса ӗҫлекенсем.

Юрату ҫинчен юрлаҫҫӗ
Вӑйя тухнӑ ҫамрӑксем.
Ҫӗмӗрт айӗнче лараҫҫӗ
Ялти пулас мӑшӑрсем.

Алла-аллӑнах ҫӳреҫҫӗ
Пӗр-пӗрне савакансем.
Пурнӑҫ илемне кӳреҫҫӗ
Ӑрӑва тӑсакансем.

Юратушӑнах ҫунаҫҫӗ
Ваттисемпе яшшисем.
Телейлӗ кун-ҫул сунаҫҫӗ
Пире атте-аннесем.

*2001-мӗш ҫул.*

## Çĕнĕ çул умĕн

Çил-тăманĕ çавăрать,
Çулсем çине тултарать
Юмăç канлĕн çывăрать,
Юптарма вăл пултарать.

Сивĕ çилĕ кастарать,
Ал-урана хытарать.
Хĕр йĕкĕте астарать,
Вăрттăнлăха пытарать.

Çĕн ĕмĕрти çулталăк
Майĕпенех вĕçленет.
Ял варринче пур палăк.
Унта чăрăш çĕкленет.

Çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн
Çапăçнă çав аттесем.
Пурнăç çирпĕлĕхĕшĕн
Пуçне хунă пиччесем.

Çĕнĕ çулĕ çывхарать,
Ял çынни хыпкаланать.
Колхоз лаши тулхăрать,
Малаллах тапкаланать.

Çĕнĕ çул елки çиçет,
Ачасене илĕртет.
Шурă юр инçе вĕçет,
Таврана илем кӳртет.

*2001-мĕш çул.*



*Мăн Ямашри Иван Александрович Савельев (1918-1942) сержант «За отвагу» медале тивĕçнĕ, вăрçăра вилнĕ.*



*Элĕк районĕнчи Мăн Ямашпа Яккушкăнь ялĕсенчи 100 арçын Гитлер СССР-а хирĕç пуçарса янă 1941-1945-мĕш çулсенчи вăрçăран таврăнайман. Фронтовиксене асăнса Мăн Ямаш ял варринче 1970-мĕш çулта лартнă палăк.*

## Паян пирĕн юбилей

**(Элĕк район хаçачĕ 70 çул тултарнă май)**

Хаçатсем чарăнмасăр тухаççĕ
Хулара та кашни районта.
Хыпарсем тĕрлĕ майлă пулаççĕ,
Халăха мĕн кирли пур унта.

Райхаçат историне тĕпчерĕм,
Анлăлатрăм тавракурăма.
Çырнисен пуххине те çĕлерĕм,
Кирлĕ пулĕ кайран вулама.

Пирĕн тăрăхри «Колхоз хаçачĕ»
Çитмĕл çул, ак, тухать Элĕкре.
Виçĕ хут та улшăнчĕ ун ячĕ,
Малтанхи халь юлать ĕлĕкре.

Пирвайхи редактор săн-сăпачĕ
Çăлтăр пек çуталса тăмалла.
Вăл пире анлă çул уçса пачĕ,
Ун тăрăх талантсен утмалла.

Прессăра ĕçленисен хисепĕ
Икçĕр çитмĕл çынпа танлашать.
Ялсене саланан хут тиражĕ
Икĕ пине çити кармашать.

Вăхăт иртнĕçемĕн улшăнаççĕ
Шур хута тĕрлекен авторсем.
Асăмра чылайччен пурăнаççĕ
Аслăрах юлташсем, ялкорсем.

«Пурнăç çулĕпе» паян утаççĕ
Пултаруллă хĕр-журналистсем.
Вулакан чĕрине хускатаççĕ,
Вĕсем мар-и чунсен уççисем?

Юбилей ячĕпе пухăнаççĕ
Хаçатпа çывăхланнă туссем.
Иртнине асилме тытăнаççĕ
Ватăлса кăвакарнă пуççем.

Вăрăм сĕтел хушшинче ларaççĕ
Райхаçат редакци çыннисем.
Хаклă парнесем кăлараççĕ
Инçетрен уява килнисем.

Халăх умне юрласа тухаççĕ
Агиткультбригада хĕрĕсем.
Çыравçăсене сывлăх сунаççĕ,
Савăнса тапаççĕ чĕресем.

*8.01.2002.*



*Элĕк район типографийĕнче ĕçлекенсем. 1998-мĕш çулхи октябрь уйăхĕ.*



**Хаҫатăн штатра тăман сотрудникĕсем** *(сулахайран): Г.А. Савельев (Мăн Ямаш), Н.А. Андреев (Шĕмшеш), А.Е. Ефимов (Мăн Выла), Г.П. Ананьев (Татмăш), П.А. Ефимов (Какаҫ), А.М. Орлов (Ехремкасси), В.С. Мальцев (Чăрăшкасси), И.П. Петров (Шураҫ).* **1987-мĕш ҫулхи майăн 5-мĕшĕ.**



**Малта лараҫҫĕ** *(сулахайран) – И. Иванова (Мăн Выла) – корреспондент, И. Павлова (Азамат) – секретарь-машинистка, Н. Корнилова (Уйкас) – бухгалтер, А. Кузьмина (Куракăш) – корреспондент;* **Хыҫалта тăраҫҫĕ** *(сулахайран) – Г. Терентьев (Ураскилт) – районти халăх музейĕн директорĕ, Г. Савельев (Мăн Ямаш) – писатель-журналист, Ю. Корнилов (Вутлан) – редактор, М. Кустиков (Хирлеппуҫ) – вăрҫăпа пичет ветеранĕ, В. Павлов (Тури Хурасан) – корреспондент.* **1998-мĕш ҫулхи сентябрь.**

## Эрех – тăшман, çавна ан ман

Вăрăм çырма пуçĕнче
Хурама типсе хăрать.
Час-часах ун çумĕнче
Ĕçкĕç ушкăн ахăрать.

Потребсоюз лавккинче
Тĕрлĕ эрех сутăнать.
Анчах пушă кĕленче
Пĕр йышши çеç пухăнать.

Çавăнпа урамсенче
Савăт-сапа саланать.
Ачасен урисенче
Суранланнă йĕр юлать.

Эрех çынна астарать,
Вăй хушса алхастарать,
Хыççăн ăсран кăларать,
Вилме çул уçса парать.

Сăра-эрех вăл – тăшман,
Хăшĕ унран ютшăнман:
Ĕçет, чупать, çапăçать,
Пуринпе те ятлаçать.

Çапкаланчăк килĕнче
Çурт янраса çеç ларать.
Ӳсĕр çын куç умĕнчен
Çемье те тухса тарать.

Çитет пулĕ алхасса,
Хаяр шĕвеке çăтса.
Халĕ урă пурăнар,
Таса, сывă курăнар.

Эрех сиен кӳнине
Яланах асра тытар.
Урă пурнăç йĕркипе
Ăрăва тăсса пырар.

*2002-мĕш çул, июнь.*

## Эрехшӗнех ан ҫунсам

Кирук матки Варвари
Куллен шырать чун варли.
Хӑй вӑл хӗрӗх пиллӗкре,
Чунӗ – ҫирӗм пиллӗкре.

Пурччӗ унӑн упӑшки –
Эрехшӗн ҫунаканни.
Тӳнсе кайрӗ кӗр енне,
Кӗрсе выртрӗ ҫӗр айне.

Халӗ арӑм иртӗхет:
Ялан эрех юхтарать,
Арҫынсене куҫ хӗсет,
Пӗрле пулма астарать.

Хаяр шӗвеке сыпсан
Чун каниччен алхасать.
Йӗркене кӗме ыйтсан
Тем каласа ылханать.

Бригадир пырса чӗнсен
Ятшӑн хире тухкалать.
Ӗҫ укҫи алла илсен
Унта-кунта чупкалать.

Эх, Варук, Варук, Варук,
Мӗншӗн санӑн намӑс ҫук?
Эрехшӗнех ан ҫунсам,
Ачусенчен вӑтансам.

*16.06.2005*

## Эрех чури – Урине

Капăр тумлă Урине
Ыраттарнă урине.
Ӳсĕр пулнă – мĕн тăвас,
Сурана епле чăтас?..

Лавккара эрех нумай,
Ялта хусахсем чылай.
Пĕри кĕрет çула май,
Ĕçтерет ăна самай.

Ыр кăмăллă Урине
Тав тăвасшăн кумине:
Енчен-енне сулăнать,
Вырăн çине туртăнать.

Савăк чунлă Урине
Савать хăй пек хурине:
Унпа вăл йăпăлтатать,
Вĕçĕмсĕр якăлтатать.

Ĕçекенĕн намăс çук,
Килĕнче те йĕрке çук.
Ĕçлемешкĕн вăл кахал,
Иртет вăхăт ытахаль.

Сăнĕ-пичĕпе, паллах,
Çуталса тăрать анчах:
Арçынсене илĕртет,
Май килсессĕн иртĕхет.

Урмăш units Урине
Çавăрттарать юррине:
Сăввине пăтраштарать,
Кĕввине майлаштарать.

Чун каниччен савăшсан,
Çынсем çывăрма выртсан,
Инке урама тухать,
Анаталла çул тытать.

Шăпах çав каç Урине
Çитнĕ сысна фермине:
Миххе чикнĕ çурине,
Шăппăн шунă кил енне.

Анчах мĕскĕн Урине
Курайман çав уссине:
Тӳннĕ ферма çырмине,
Лекнĕ хурал аллине.

Ют пурлăха хапсăнни
Халь ăна хакла ларать.
Алхасуллă пурăнни
Чунтанах кулянтарать.

– Эх, шеремет, Урине,
Курман сана урриne.
Ятлап эрех чурине:
«Ан ĕçсемех шуррине!

Унпа чысна çухатан,
Хитре ятна варалан,
Сывлăхна та хавшатан,
Пурнăçран та уйрăлан.

Килĕштерсе пурăнар,
Çутă куншăн савăнар.
Хаяр шĕвек ĕçес мар,
Эрех чури пулас мар».

*4.04.2008.*

## Сăмах – тăван ял çинчен

Вăрман варрине вырнаçнă
Авал чăваш ялĕсем.
Халăхĕ хăвăрт хунанă,
Вăрăмланнă урамсем.

Анатран хăпарса пынă
Хресченсен кил-çурчĕсем.
Виç кĕтеслĕ пулса тухнă
Мăн Ямаш урамĕсем.

Çырми сарлака та тарăн,
Турат евĕр юпписем.
Вĕсенче шывĕ те тăрă,
Йĕркипех, ав, пĕвисем.

Йывăç-курăка юратнă
Ĕлĕкех ял çыннисем.
Çыран хĕррине хупланă
Хурăн, йăмра вуллисем.

Майĕпен ял аталаннă,
Килсем çитнĕ икçĕре.
Шкул, чиркӳ те уçса панă,
Пурте утнă пĕр çĕре.

Колхоз, почта, ял Совечĕ,
Юнашар – ялпо, лавкка.
Клуб, медпункт та вулав çурчĕ
Усă кӳнĕ халăха.

Çĕр ентеш кун-çулĕ сӳннĕ
Гитлер чĕртнĕ вăрçăра.
Ячĕсем палăка кĕнĕ,
Салтаксем ĕмĕр асра.

Килĕренех телерадио,
Пуянлатнă ăс-пуçа.
Телефон, газ, электрица
Çăмăллатнă пурнăçа.

Вăрман пуçĕнче çĕкленнĕ
Аэропорт хуралтисем.
Чĕрĕк ĕмĕр унта вĕçнĕ
Хуларан самолетсем.

Халь автобуссем çӳреççĕ
Элĕкпе Шупашкартан.
Халăха телей кӳреççĕ,
Тав сăмахĕ – кăмăлтан.

Генерал Захар Трофимов
Тухнă шăп Мăн Ямашран.
Академире вăй хунă,
Ыр ят юлнă ялйышра.

Синичкинпала Михайлов
Çырнă сăвă-калавсем.
Кĕнекисем – асăнмалăх,
Унта – ял сăнарĕсем.

Мăн Ямашрах тымар янă
Асатте, атте, анне.
Эпĕ те кунтах çуралнă,
Манас çук хам йăхсене.

Аваллăх тымарĕ вăрăм,
Тăсăлать инçе, инçе.
Тĕпчеме эп кăмăлларăм,
Ман сăмахăм – ял çинчен.

*11.01.2007*



*Яккушкăнь ялĕнче пурăннă Зинаида Васильеван (1916-1973) 1918-мĕш çулта тунă пӳрчĕ. Ăна 1993-мĕш çулта пăснă.*



*Яккушкăнь ялĕнче пурăннă Василий Скворцовăн (1918-1964) 1963-мĕш çулта тунă пӳрчĕ. Ăна 1993-мĕш çулта пăснă.*



*Мăн Ямашри «Заря» колхозăн пĕрремĕш председателĕ тата ялти тулли мар вăтам шкулăн пĕрремĕш директорĕ пулнă В.Т.Тимофеевăн (1886-1948) 1929-мĕш çулта лартнă пӳрчĕ. Ӳкерчĕке 2010-мĕш çулта тунă.*



*Мăн Ямашри почта уйрăмĕн çурчĕ. Ăна 1937-мĕш çулта лартнă, 1988-мĕш çулхи декабрьте пăснă.*



*Мăн Ямаш ял варринче 1898-мӗш çулта Христос ячӗпе туса лартнă йывăç чиркӳ. Ăна тума Петербургри Ф.К.Крымзенков купса 6 пин тенкӗ укçа панă. Чиркӳ прихутне Акташпа Чурпай тата Яккушкăнь ялӗсем те кӗнӗ.*

*Совет влаçӗн çулӗсенче (1933) чиркӳ хупăннă та тӗпӗр çулхинех (1934) унтан çичӗ çул вӗренмелли икӗ хутлă шкул туса лартнă. Унччен вара ялта, 1885-мӗш çулхи январьте, Хучаш чиркӗвӗн прихут шкулӗ уçăлнă.*



*Ялта шкул уçăлни таврари ялсенче пурăнакансен культура шайне ӳстерме пулăшнă. Ку таранччен унтан 3 пине яхăн ача вӗренсе тухнă, чылайăшӗ паллă çынсем пулса тăнă. Шкулăн виçӗ çурчӗ те паянхи кунччен упранса юлнă. Ӳкерчӗке 1961-мӗш çулта тунă.*



*Мăн Ямаш шкулĕн 7-мĕш класĕнчен тунă пĕрремĕш кăларăм. Вĕсене 1935-мĕш çулхи майăн 9-мĕшĕнче ÿкерсе илнĕ. Ун чухне, 1927-1939-мĕш çулсенче, асăннă ялти шкул Хĕрлĕ Чутай районне кĕнĕ.*

  

*Етӗрнери педтехникумра вӗреннӗ, шкулсенче ӗҫленӗ, иртнӗ вӑрҫӑран таврӑнайман Мӑн Ямашри педагогсем (сулахайран): З.А.Смеловпа (1915-1941), Г.П.Синичкин (1917-1942) тата Яккушкӑньри С.Н.Николаев сержант (1914-1943)*



**Советски районне кӗнӗ Мӑн Ямашри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул педагогӗсем 1949-1950-мӗш вӗренӳ ҫулӗнче.**

**Пӗрремӗш ретре** *(сулахайран): Х.Н.Иванова тата унӑн мӑшӑрӗ Г.И.Иванов (шкул директорӗ), И.Ф.Франк, А.Н.Николаев.*
**Иккӗмӗш ретре** *(сулахайран): М.И.Степанова, М.Е.Степанова, В.Е.Ефимова тата унӑн мӑшӑрӗ В.А.Андроников, Р.И. Малова, Е.Т.Краснова*





*Мăн Ямашри Тимофеев педагог-мăшăрсем: Василий Тимофеевич (1886-1948), Анна Максимовна (1899-1989) тата вĕсен ывăлĕсем*





*Диоген Васильевичпа (1926-2003)*
*Николай Васильевич (1940-1993) полковниксем*



**Мăн Ямашри 8 çул вĕренмелли шкул педколлективĕ 1977 çулта.**
**Пĕрремĕш ретре (сулахайран):** *В.П.Баранова, Л.Е.Майорова, Л.М.Пименова, М.И.Григорьева, О.А.Данилова.* **Иккĕмеш ретре (сулахайран):** *А.П.Савельев, В.И.Николаев (завуч), И.С.Майоров (директор), И.А.Андроников, П.В.Миронов (воспитатель), В.Л.Бармин.*




**Сулахайран тăракансем:** *А.С.Алексеева, В.П.Чертова, А.В.Дерстуганова, З.И.Давыдова, М.М.Волкова, Р.Ф.Григорьева*
**Сулахайран çаксем лараççĕ:** *А.В.Власов, Г.А.Савельев, А.Ф.Михеев, В.А.Евсеев, В.В.Григорьев, И.И.Волков.*



**Элĕк районĕнчи Мăн Ямашри 8 çул вĕренмелли (халĕ вăтам) шкултан вĕрĕнсе тухакансем.** *Хыçалти ретре (сылтăмран 2-мĕшĕ) Геннадий Савельев купăсçă тăрать. 1965-мĕш çул.*



*Элĕк çывăхĕнчи Торпкассинче çуралнă, Хĕрлĕçырта пурăннă, шкулсенче 35 çул ĕçленĕ М.И.Григорьева (1901-1986) ĕçлĕх Хĕрлĕ ялавпа Ленин орденĕсене тивĕçнĕ. Унăн хĕрĕ (сулахайри) Маргарита Игнатьевна (1926) Мăн Ямаш шкулĕнче 42 çул чăваш чĕлхи урокĕсене иртнернĕ. Альбина Ивановна Андроникова (1954) та кукамашĕ тата амăшĕ çулĕпе утать: вăл та педагог. 1976-мĕш çул.*



*Мăн Ямаш вăтам шкулĕн çĕнĕ çурчĕ 1994-мĕш çулхи кĕркунне хута кайнă*




*Шкулăн хальхи учителĕсем. 2004-мĕш çул*

*Районсем 75 çул тултарнă май*

## Ямашсем

Пирĕн чăваш çĕрĕнче
Хула, сала пит нумай.
Пиншер ялсем хушшинче
Ямашĕсем те чылай.

Республика шайĕнче –
Пин те çичçĕр çитмĕл ял.
Ултă район пайĕнче –
«Ямаш» ятлă вунă ял.

Элĕк, Чутай, Етĕрне
Пĕр уездра пурăннă.
Вăрнар, Канаш та Çĕрпӳ
Çавăнталлах туртăннă.

Кайран çав ял-хуласем
Район шайне çĕкленнĕ.
Унти Ямаш ялĕсем
Майĕпенех çĕнелнĕ.

Виçĕ район чиккинче
Аталаннă Мăн Ямаш.
Выла шывĕ хĕрринче
Тĕпленнĕ Кĕçĕн Ямаш.

Сăр шывĕнчен инçе мар
Вырнаçнă тепĕр Ямаш.
«Турă, пире сывлăх пар», –
Кĕлтăвать кашни чăваш.

Пилĕк ĕмĕр хушшинче
Пурнăç тĕпрен улшăннă.
Хăшпĕр хресчен çемйинче
Маттуррисем тупăннă.

Тĕслĕхрен, ак, Мăн Ямаш,
Пулнă вăл питĕ йăваш:
Шкулне уçнă пуп-юлташ,
Чиркӳ лартнă хурăнташ.

Кунта ӳснĕ генерал,
Тата çитмĕл офицер.
Виç писатель ял таврa –
Пĕтĕмпех çырса пĕлтер.

Кĕçĕн Ямаш ялĕнче
Орлов летчик çуралнă.
Усал Гитлер вăрçинчен
Герой пулса таврăннă.

Хамăр тăван тăрăха
Нихăçан та манас çук.
Пултаруллă халăха
Мухтамасăр юлас çук.

Хальхи йывăр пурнăçра
Юнашар пĕрле утар.
Çитес вунă çуллăхра
Çĕнтерсе мала тухар.

*15.10.2002 ç.*

# Мухтавлă çар çыннисем



*З.Т.Трофимов (1897-1961) - генерал-майор (Мăн Ямаш)*



*И.К.Пидуганов (1903-1977) - юстицин аслă лейтенанчĕ (Мăн Ямаш)*



*Ф.Н.Орлов (1913-1988) - СССР геройĕ, полковник (Кĕçĕн Ямаш)*



*И.А.Журавлев (1914-1997) - юстицин 3 класлă патшалăх советникĕ, ЧАССР прокурорĕ*



*А.А.Золотов (1940) - ЧР ДОСААФ шкулĕн председатель çумĕ, полковник (Синер)*



*Г.П.Баранов (1949) - ЧР ОМОН полковникĕ (Яккушкăнь)*



*Н.Л.Бармин (1943) - подполковник (Яккушкăнь)*



*Р.В.Андроников (1945) - полковник (Яккушкăнь)*



*Ю.Н.Григорьевский (1947) - полковник (Çĕнĕ Атикасси)*



*А.Р.Логинов (1903-1943) - СССР геройĕ, лейтенант (Упакасси)*



*И.В. Индряков (1915-1993) - СССР геройĕ, полковник (Акчикасси)*



*М.Е.Ефимов (1915) - СССР геройĕ, полковник (Самушка)*



*П.П.Ермолаев (1938) - генерал-майор (Сивĕ çăл)*



*В.А.Тихонов (1940) - генерал-майор (Тури Выла)*



*С.К.Воронов (1957) - генерал-лейтенант (Тури Хурасан)*



*А.П.Прокопьев (1915 - 2006) - партизан (Мăн Этмен)*



*А.Е.Ефимов (1915) - учитель-партизан, писатель (Мăн Выла)*



*Н.А.Троценко (1922-1964) - партизан (Яккушкăнь)*

## Мухтав орденне тивĕçнисем





*А.З.Шашкий, М.Г.Баранов, И.Н.Николаев (Яккушкăнь),*





*Афанасийпе Александр Савельевсем, Иван Григорьев (1925-1961) (Мăн Ямаш),*





*А.И.Свешников (1925-1982) сержантпа С.В.Васильев (1925-1998) рядовой (Мăн Ямаш) тата Н.М.Марков(1923) старшина (Шуркасси).*

## Халăх сывлăхĕшĕн тăрăшнă тухтăрсем



*К.Е.Бобылçв (1853-1936) - фельдшер (Вырăс Улхаш)*



*Ф.Е.Тайков (1882-1948) - врач-окулист (Обыково ялĕ)*



*С.Н. Ижеев (1885-1976) - фельдшер, шăл тухтăрĕ (Яракасси)*



*А.К.Карпов (1889-1964) - врач-фронтовик (Мăн Шемертен)*



*П.П. Охливанкин (1904-1974) - врач-фронтовик (Питĕркасси)*



*А.Д.Ильдер (1913-1991) - фронтовик-стоматолог (Мăн Ямаш)*



*М.Г.Куртовский (1920-1993) - фельдшер-фронтовик (Яккушкăнь)*



*Н.В. Тимофеева (1922-2008) - врач-терапевт (Мăн Ямаш)*



*В.В.Тимофеев (1934) - врач-невропатолог (Мăн Ямаш)*

   

**Элĕк район больницин тухтăрĕсем (сулахайран):** *И.В.Борисова (1924-1989) - тĕп врач; А.И. Платонов (1952) - тĕп врач; В.В.Архипова (1960) - врач-педиатр; С.П.Васильев (1966) - врач-хирург;*

   

*Т.Е.Лебедева (1941) - врач-стоматолог; А.А.Иванов (1947) - врач-хирург; С.М.Иванова (1951) - врач-терапевт; Г.В.Леонтьева (1951) - хирурги уйрăмĕн аслă медсестри.*



*М.И.Ефимова (1921-2001) - Урапакасси медсестри*



*В.П.Березина (1927-1998) - Упакасси медсестри*



*З.А.Андреева (1926) - Мăн Ямаш санитарки*



*Е.А.Петрова (1950) - фельдшерица 1969 çултан (Выла Пасар)*

   

**Хĕрлĕ Чутай район больницин тухтăрĕсем (сулахайран):** *Н.Т.Чернигов (1937) – васкавлă пулăшу фельдшерĕ (1967-1997); Р.И.Манина (1947) – ача-пăча врачĕ (1978-2002); В.П.Ульянов (1952) – район больницăн тĕп врачĕ (1985-2005); М.И.Ярандайкина (1973) - 2-мĕш Хурашаш медсестри.*

# Ваттисем асран тухмаççĕ

*Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ялсенче 100 çул ытла пурăннă ватăсем сахал мар. Вĕсем шутне çаксем кĕреççĕ: О.И.Пахинова (1895-1997) - Упакасси, В.И.Аркадьева (1900-2001) - Кушлавăш, Е.А.Степанова (1900-2001) - Сосново, А.Ф.Егорова (1900-2002) - Питĕркасси, П.И.Иванова (1898-2008) - Хĕрлĕ Чутай, А.И.Белова (1906-2009) - Тури Çĕрпӳкасси тата ыттисем.*



*У.С. Иванова (1896-1998) - Акташра 102 çул пурăннă кинеми*



*П.Е.Борисов (1908) - Хĕрлĕ Чутайра пурăнакан фронтовик*



*Шупашкар хулинче тымар янă СКРЯБИНСЕНçемйи. Сулахайран: Мăн Ямашра пурăннă Анна Максимовна Тимофеева (1899-1989) учительница Нина Васильевна(1922-2008) аслă хĕрĕпе тата милици капитанĕ пулнă Николай Гаврилович (1922-2004) якут кĕрӳшĕ Валера (1945) майор ывăлĕпе.*

*Шупашкар. 1989-мĕш çулхи кĕркунне.*



*Çĕмĕрле хулинче пурăнакан Тамара Михайловнăпа (1937) Николай Маркович Марков (1923) фронтовик-мăшăр сцена çинче. Сăмах май, шофĕр-фронтовик Элĕк районĕнчи Шуркасси (Выла) ялĕнче çуралса ӳснĕ, 6 çултан Çĕмĕрлере пурăнма тытăннă. Ку унăн 2-мĕш арăмĕ (çĕвĕç). Пĕрремĕш арăмĕнчен хĕрпе ывăл пур, вĕсем çав хуларах пурăнаççĕ. 2008 çул, февраль.*

## Тăвансем

Аттепе анне пĕрлешнĕ
Вăрçă хыççăн виç çултан.
Çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешнĕ
Вăй хурса пĕрле чунтан.

Фронтовик шкулта ĕçленĕ
Çирĕм икĕ çул ытла.
Çамрăк ăрăва вĕрентнĕ
Тĕрĕс çулпала утма.

Çич ача анне çуратнă:
Тăват ывăлпа хĕрсем.
Кашнине пĕр пек юратнă,
Чĕвĕлтетнĕ чĕресем.

Ирсерен хире васканă
Çемçе кăмăллă анне.
Çурлапала тырă вырнă –
Шеллемен вăйне-халне.

Эпир пурте киле юлнă,
Пире пăхнă мăнакка.
Ăста çĕвĕç вăл хăй пулнă –
Ят-сум кайнă аякка.

Вун çичче çитсессĕн вилчĕ
Нина йăмăк хулара.
Чун-чĕре хурланса килчĕ,
Анне ӳкрĕ урамра…

Кун-çулсем те шуса иртрĕç,
Çунат сарчĕç ачасем.
Аттепе мăнак та пĕтрĕç,
Хунав ячĕç мăнуксем.

Сакăр вуннă урлă каçрĕ
Çĕнтерсе хĕне анне.
Шалкăм мурĕ аврĕ, хуçрĕ
Унăн çепĕç чĕлхине.

Анне пирĕн ватă, чирлĕ,
Пурнать хĕрĕ патĕнче.
Ăна халĕ канлĕх кирлĕ –
Сывлăх кӳтĕр çут тĕнче.

Нихăçан асран тухмаççĕ
Чуна çывăх тăвансем.
Тарăн шухăша яраççĕ
Пулнă-иртнĕ самантсем.

*15.05.2004*



*Урапакассинчи тăвансем патĕнче. 2002-мĕш çулхи май уйăхĕ.*



*Марфа Павловна Савельева (1882-1979) - асанне*



*Александр Петрович Савельев (1920-1983)- атте*



*Матрена Елисеевна Савельева (1922) - анне*



*Сулахайран: анне - Матрена Елисеевна, куками - Перасковья Васильевна (1880-1956), мӑнак - Анна Елисеевна (1907-1986).*

## Çиччĕн пĕртаван Савельевсем



*Гена (1950)*



*Нина (1951-1968)*



*Коля (1953)*



*Вася (1954)*



*Леонид (1957)*



*Рая (1959)*



*Лидия (1963)*

*Професси енĕпе Гена - электрик, шофер, киномеханик тата писатель-журналист;*

*Нина - Шупашкарти медучилище студентки пулнă;*

*Коля - инженер-строитель;*

*Вася - инженер-электрик;*

*Леонид - инженер-геолог;*

*Рая - медсестра;*

*Лидия - педагог.*

## Манăн ачасем тата мăнуксем



*Витя (1972)*



*Люся (1974)*



*Петя (1978)*



*Галя (1986)*




*Сашăпа (1991) Дима (1994) мăнуксем*







*Женя (1997), Надя (1999) тата Александра (2005) мăнуксем*

# Тăван кил

Тулта сивĕ – шартлама,
Аптрамастăп – эп пӳртре.
Кирлех мар хыт кулянма,
Сывлăх пур чун-чĕрере.

Йывăç пӳрт: вăл çĕнĕ мар,
Ытлашши çĕрĕк те мар.
Лар, тăванăм, юнашар
Аса илсе калаçар…

Шăпах хĕрĕх виçĕ çул
Ларать çак çурт çĕр çинче.
Ăна купаланă çул
Улăхнă эп ун çине.

Йышлăн пурăннă, чăнах,
Çемьере, ав, вунă çын:
Аттепе-анне, мăнак,
Ачисем те çиччĕн тан.

Йăмăк ир çĕре кĕрсен,
Аттепе мăнак вилсен,
Лартăм хытă хурланса,
Вĕри куççуль юхтарса.

Шăллăмсемпе йăмăксем
Саланчĕç тăван килтен.
Анне – йăмăк патĕнче,
Эпĕ юлтăм тăр пĕччен.

Хулана курма кайсан,
Района ĕçпе тухсан,
Ырă çын мана кĕтет,
Пĕрле пурăнма чĕнет.

Анчах кил асран тухмасть,
Хăйĕн патнеллех туртать.
Вăл пурне те ăшăтать,
Йывăрлăхра пулăшать.

*11.01.2008*



*Манăн тата атте-аннен çурчĕсем 1988-мĕш çулхи кĕркунне.*

## Юратса пурӑнмалла

Ҫӗр ҫинче хӗрсем нумай
Арӑмсем те сахал мар.
Пӗри йӑваш та сӑпай,
Тепри усал та хӑр-хар.

Сӑн-сӑпат енчен, паллах,
Илӗртеҫҫӗ хитрисем.
Пурӑнса курсан анчах
Сирӗлеҫҫӗ тӗтрисем.

Юратсассӑн пӗр-пӗрне
Ӳплере те рай пекех.
Харкашсассӑн кунсерен
Керменре типет чечек…

Эх, юрату, юрату –
Манӑн чунри ырату.
Эпӗ халӗ ҫамрӑк мар,
Ҫапах – чӗремре кӑвар.

Пурӑнатӑп тӑр пӗччен,
Шухӑшлатӑп сан ҫинчен.
Ӑнлансам: мана кичем,
Хӑв пӗччен – шута илсем.

Хамӑр шухӑш-туйӑма
Иккӗн сӳтсе явмаллах.
Ырӑ, ӑшӑ кӑмӑлпа
Юратса пурӑнмаллах.

*19.11.2007*

## Çур ĕмĕр ытла пĕрле пурăнакан мăшăрсем



*Хĕрлĕ Чутай районне кĕрекен Чурпайри Анна Степановнăпа (1922-мĕш çулта кўршĕри Яккушкăнь ялĕнче çуралнă) Павел Иванович (1925) Петровсем 1947-мĕш çултанпа 63 çул пĕрле пурăнаççĕ: упăшки 85-ре, арăмĕ 88-та. Вĕсем 7 ача çуратса ўстернĕ. Шел, тĕрлĕ çулсенче тăваттăшĕ вилнĕ. Халĕ Гена, Вова, Роза çеç хуласенче пурăнаççĕ. Мускавра шофер ĕçĕпе тимлекен Гена (1953) ашшĕ кил вырăнĕнче кирпĕч çурт та лартнă.*

*Фронтовик вăрçă хыççăн «Красный воин» колхозра бригадир та, ферма заведующийĕ те, рядовой колхозник та пулнă. Арăмĕ уй-хирте вăй хунă.*



*Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Яманкасси ялĕнче Евдокипе (1937) Трофим (1929) Ельцовсем 1960-мĕш çултанпа – 50 çул пĕрле. Упăшки – 81-ре, арăмĕ – 73-ре. Вĕсем виçĕ хĕр çуратса ўстернĕ. Хĕрарăм 45 çул медпунктра ĕçленĕ, çав хушăрах ялти клубра художество пултарулăх кружокне те çўренĕ, «Ветеран труда» медале тивĕçнĕ.*



*Етĕрне районĕнчи Мăн Явăшра Евгения Егоровнăпа Егор Николаевич Николаевсем 1948-мĕш çултанпа – 62 çул пĕрле. Вĕсен 3 ача. Фронтовик-столяр, мăшăрĕ 25 çул шкулта ĕçленĕ, çĕршыв наградисене тивĕçнĕ.*

*Вăрçăпа ĕç ветеранĕсем илемлĕ çурт çавăрнă.*



*Етӗрне районӗнчи Еккӗмушкӑнь ялӗнче Меланипе (1932) Николай (1929-2010) Леонтьевсем 1954-мӗш ҫултанпа 56 ҫул пӗрле пурӑнчӗҫ, 4 ача пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларчӗҫ.*



*Элӗк районӗнчи Яккушкӑнь ялӗнче Феклӑпа (1934) Леонид (1937-2008) Белецкийсем 1957-мӗш ҫултанпа 50 ҫул пӗрле пурӑнчӗҫ, 3 хӗрпе пӗр ывӑл ҫуратса ӳстерчӗҫ, кирпӗчрен ҫурт лартрӗҫ. Шел, упӑшки, 1965-мӗш ҫулта, кусӗсене циркулярпан вӗҫсе ӳкнӗ туратсем тӑрӑннипе, суккӑрланса юлчӗ.*



*Элĕк районĕнчи Мăн Ямашра çуралса ӳснĕ Аннапа (1914-2003) Афанасий (1912-1985) Савельевсем 1934-мĕш çултанпа 50 çул пĕрле пурăнчĕç. Мăшăрсем хĕрпе икĕ ывăл çуратса ӳстерчĕç, çĕнĕ çурт-йĕр çавăрчĕç. Упăшки, вăрçăран таврăнсан, колхозра - счетовод, ял Советĕнче - секретарь, шкулта - завхоз, магазинта заведующи пулса ĕçлерĕ. Арăмĕ «Заря» колхоз уй-хир бригадинче вăй хучĕ. Халĕ вĕсен кил вырăнĕнче Радислав (1971) мăнукĕ икĕ хутлă кирпĕч çурт лартрĕ. Мăшăрсен Галина (1935) хĕрĕ ялтах тымар янă, унăн 10 ача. Вăл «Мать-героиня» ята тивĕçнĕ.*

*Элĕк районĕнчи Мăн Ямашра пурăнакан Зоя Михайловнăпа (1938) Илья Иванович (1934) Беловсем 1958-мĕш çултанпа 52 çул пĕрле пурăнаççĕ. Савнă чунсем ывăлпа виçĕ хĕр çуратса ӳстерчĕç, çĕнĕ кил-çурт çавăрчĕç. Упăшки Совет Çарĕнчен таврăнсан «Заря» колхозра кладовщикпа уй-хир бригадирĕ пулчĕ, комсомолпа парти тата профсоюзăн вырăнти организацийĕсене ертсе пычĕ. Арăмĕ уй-хир бригадинче тимлерĕ. Иккĕшĕ те «Ветеран труда» ята тивĕçрĕç.*





*Элĕк районĕнчи Мăн Ямашра çуралса ӳснĕ Марияпа (1942) Станислав Даниловсем 1961-мĕш çулхи октябрь вĕçĕнче мăшăрланчĕç, çĕнĕ кил-çурт çавăрчĕç, виçĕ ывăлпа икĕ хĕр çуратса ӳстерчĕç. Упăшки - Тинĕс-Çар матросĕ, клуб заведующийĕ, ял Совет счетовочĕ, совхозри кадрсен пайĕн инспекторĕ, районти газ службин кассирĕ пулса ĕçлерĕ. Арăмĕ ялти почта уйрăмĕнче-почтальонка, «Заря» колхоз бригадинче тата фермăра тăрăшса вăй хучĕ. Мăшăрсем «Ветеран труда» медальсене тивĕçрĕç.*



*Элĕк районĕнчи Яккушкăнь ялĕн фронтовикĕ Архип Андроникович Воробьев (1914-1999), вăрçăран аманса таврăнсан «Пробуждение» колхоз председателĕ пулнă, кайран платник ĕçĕпе вăй хунă. Ульяна Терентьевна (1923-2000) мăшăрне вăл Тавăт ялĕнче тупнă. Тылпа ĕç ветеранĕ (колхозница-весовщица) 4 ывăлпа 4 хĕр çуратса ӳстернĕ. Мăшăрсем çĕнĕ кил-çурт çавăрнă, выльăх-чĕрлĕх йышлă усранă, партипе правительствăн наградисене тата халăх хисепне тивĕçнĕ. Юратнă чунсем 1944-мĕш çултанпа 55 çул пĕрле пурăннă.*



*Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Анат Çĕрпӳкассинче çуралнă Петр Николаевич Кокарев (1937) Тури Çĕрпӳкассинчи 7 класлă шкулта ăс пухнă та пĕтĕм кунçулне «Свобода» колхозпа çыхăнтарнă: уй-хирте, фермăра ĕçленĕ, бригадир та пулнă. Юнашарти Акташ хĕрĕпе, Клавдия Георгиевна Никитинăпа (1935), 1960-мĕш çулта пĕрлешнĕ те 5 ывăл ӳстернĕ. Мăшăрĕ «Большевик», «Свобода» колхоз уй-хирĕсенче тата фермăра вăй хунă, «Ветеран труда» медале илме тивĕçнĕ.*



*Элĕк районĕнчи Яккушкăнь ялĕнче пурăннă Иван Константинович Баранов (1926-2004) ачаранах хăлхасем илтменнипе аптранă, çавăнпа та Хĕрлĕ Çарпа вăрçă вут-çулăмне лекмен. И.В. Сталин (1879-1953) вилнĕ çул 27-ри Иван Шĕмшешри Мария Ивановна Денисовăпа (1929) мăшăрланнă. Хĕр ун чухне хăйсен ялĕнчи вăтам шкулта техничкăра тăрăшнă, кайран «Заря» колхоз уй-хирĕнче тата выльăх-чĕрлĕх ферминче вăй хунă. Упăшки ăста столяр-платник пулнă. Вĕсем 3 ывăлпа 2 хĕр ӳстернĕ.*



*Элĕк районĕнчи Выла юханшывĕнчен инçех мар вырнаçнă Шуркассинче Николай Петровичпа (1924) Екатерина Михайловна (1922) Петров-мăшăрсем пурăнаççĕ. Вĕсем 1952-мĕш çулта çемье чăмăртанă. Шĕмшешри хресчен çамрăкĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă каччă, глаукомăпа катаракта чирĕсене пула, медучилищĕре те пĕлӳ илеймен, Хĕрлĕ Çарпа фронтра та пулайман, ялти «Красный Октябрь» колхозăн тимĕрçĕ лаççинче тăрăшнă.*

*Йĕрĕхкасси хĕрĕ вара колхоз ферминче сыснасем пăхнă: «За трудовую доблесть» медальпе «Почетная колхозница» ята тата «Красное знамя» ордена тивĕçнĕ. Ĕç ветеранĕсем 2 хĕрпе ывăл ӳстернĕ.*

## Пурнăç майлашса пырать

Ик ывăлпа икĕ хĕр
Ӳсрĕç пирĕн çемьере.
Иртрĕ кунĕ, иртрĕ çĕр –
Вĕсем халĕ инçетре.

Шупашкарта, ак пĕри,
Иккĕшĕ, ав, Мускавра.
Килте пур-ха кĕçĕнни,
Вăл та – пединститутра.

Хамăрпа паян пĕрле
Пурăнаççĕ мăнуксем:
Икĕ çамрăк чун-чĕре –
Шкулта ăс пухакансем.

Ывăлсен тĕп тивĕçĕ –
Ӳссен салтак пуласси.
Вĕсен çутă ĕмĕчĕ –
Машинăпа çӳресси.

Пĕр чарăнма пĕлмесĕр
Кун-çул шăвать малалла.
Эпĕ те ним сисмесĕр
Çывхаратăп утмăла.

Картиш тулли выльăхĕ
Ӳсĕм тума май парать.
Çемьен ырлăх-пурлăхĕ
Пурнăçа майлаштарать.

*17.07.2005*

## Пурнăç ĕçпе тăсăлать

Çуралнă ялта пурăнатăп,
Тавралăх мана илĕртет.
Таса сывлăшпа çеç сывлатăп,
Уншăнах чĕрем хĕпĕртет.

Çавăнпа ялта тымар ятăм,
Вырнаçрăм тăван колхоза.
Электрик ĕçне туса пытăм,
Юратнă ĕçре хам хуçа.

Майĕпен çулсем шуса пычĕç,
Çитетĕп кĕçех утмăла.
Иртни пĕтĕмпех асра юлчĕ,
Ялан малалла утмалла.

Çутă куншăнах савăнатăп,
Пурнăç кулленех тăсăлать.
Кĕрхи çанталăка сăнатăп,
Вăл темшĕн часах пăсăлать.

Кунсерен килте тăрмашатăп:
Садра та пӳртре вĕçĕмех.
Кирлине тума тăрăшатăп,
Чуна вăй кӳрет ĕçĕмех.

Пушă вăхăтра тек çыратăп
Статьясем, хыпарсем хаçата.
Тĕпчев ĕçĕпе те çӳретĕп
Унта та кунта кун-каçа.

Фактсем сахал мар-ха пуçтартăм,
Кăлартăм тăват кĕнеке.
Ик чĕлхепе ăна шуçтартăм,
Ăнланчăр пурте пĕр пекех.

Халĕ сăвăсем кăларасшăн:
Черетлĕ тепĕр кĕнеке.
Сире ăна вулаттарасшăн,
Кăмăл тусассăн кĕреке.

*20.10.2008.*

# Пĕр-пĕрне телей сунар

Иртеççĕ кунсем, çулсем,
Ватăлаççĕ юлташсем.
Асăмрах паллă кунсем,
Ырă сĕнӳ-канашсем…

Çывăх тусăм Николай,
Çĕкленсе пыр эс пĕрмай.
Пысăк ĕçре пулнă май,
Пире та манса ан кай.

Туссемпе эпир пуян,
Эс ăна хăвах туян.
Юрă пуçласан баян,
Пул хаваслăрах паян.

Чуну санăн аллăра,
Шăпу хăвăн алăра.
Тек ларатăн пуçлăхра,
Ыр куран çак пурнăçра.

Çитрĕн эсĕ утмăла,
Çитет тесе ан кала.
Малалла та утмалла,
Сăвă-калав çырмалла.

Çитмĕл çула çитмелле,
Çитмен çĕре çитмелле.
Мĕн кирлине илмелле,
Кайран киле килмелле.

Сакăрвуннă сахал мар,
Ытлашши нумай та мар.
Çавăнпа та пурăнар,
Мăнуксемпе савăнар.

Инçех мар Тури Ачак,
Пур унта Мари мăнак.
Тăхăрвуннăра вăл ак,
Хушамачĕ ун – Куймак.

Ал-урасем хытиччен
Çĕр çинче çӳремеллех.
Çут тĕнчерен кайиччен
Çĕр çула сан çитмеллех.

Ырă кăмăллă пулар,
Пĕр-пĕрне телей сунар.
Халăх хушшине тухар,
Юнашар пĕрле утар.

*2001-мĕш çул, май.*



*Етĕрне районĕнчи Тури Ачак ялĕнче пурăннă Мария Константиновна Куймакова (1911-2007) пĕртен-пĕр Юлия Николаевна Воробьева (1949) хĕрне (сылтăмри) пĕренеллĕ пĕчĕк пӳртре пĕчченех ӳстернĕ. Хăйĕнчен чылай кĕçĕн упăшки çамрăклах Шупашкар хулине кайса вырнаçнă. Тăлăх арăм ялти колхозра пилĕк-çурăм авнă, пĕтĕм йывăрлăха чăтнă. Хучаш вăтам шкулĕ хыççăн Юлия хĕрĕ сутуçăна вĕренсе тухнă та Палтайпа Тури Ачак магазинĕсенче тивĕçлĕ канăва тухиччен ĕçленĕ. Палтайри Петр Воробьев (1949) шоферпа 1971-мĕш çулта мăшăрланса Сергей (1972), Светлана (1974), Оксана (1978) ачисене пурнăç çулĕ çине кăларнă.*

*Ӳкерчĕке 1981-мĕш çулхи июльте тунă.*

*Мăн Ямашри Феврония Егоровна Николаевăна (1911-2004) халаллатăп.*

## Салтак арăмĕ

Вун тăххăрти хитре хĕр
Качча тухнă Ямаша.
Унăн ялĕ – Хĕрлĕçыр
Савăнтарнă юлташа.

Виçĕ ывăлпа пĕр хĕр
Çуралнă çĕн çемьере.
Шел, выçлăхпа сивĕ хĕл
Татнă çамрăк ĕмĕре.

Хаяр вăрçă кĕрлевĕ
Асап кӳнĕ халăха.
Совет Çарĕн пĕрлĕхĕ
Çĕклентернĕ кăмăла.

Тарса килнĕ эстонсем
Хӳтлĕх тупнă Чăвашра.
Туслă çĕршыв ачисем
Пĕлӳ пухнă Ямашра.

Киле юлнă ватăсем,
Ачасемпе арăмсем.
Пĕр ĕçрен юлман вĕсем,
Чăтнă хурлăха хăйсем.

Савнă арçын кун-çулне
Усал тăшман сӳнтернĕ.
Сывă юлнă ывăлне
Инке пĕччен ӳстернĕ.

Ӳссе çитсе яш пулсан
Ăна çара ăсатнă.
Салтак киле таврăнсан
Донбасс шахтине кайнă.

Инке юлнă пĕр-пĕччен,
Колхозра пулнă ĕçчен.
Пăхнă лаша-сыснасем,
Фермăрах иртнĕ çулсем.

Тăлăх арăм вăл – Хеврук,
Çитрĕ тăхăр вун çула.
Ун упăшки, ав, Кирук
Пурнайман вăрçа пула.

Гитлер вăрçи чарăнни
Аллă çичĕ çул çитет.
Çирĕп чунлĕ кинеми
Мăшăрпа улне кĕтет.

*2002-мĕш çул, февраль.*

## Мирлĕ тăтăр çут тĕнче

*Çĕнтерӳ парчĕн салтакĕ, Элĕк районĕнчи Яккушкăньре пурăнакан Григорий Кузьмин сержант 80 çул тултарнă май.*



*Сулахайран сылтăмалла: Григорий Кузьминпа Валерий Ксенофонтов (Шупашкар район каччи) салтак-фронтовиксем. Литва ССР-ĕ, Вильнюс хули, 1.8.1947.*

Вун çиччĕри патвар каччă
Вĕреннĕ ялти шкулта.
Тухнă унăн салтак ячĕ
Хĕрĕх т(ă)ваттăмĕш çулта.

Икĕ шăллĕпе ик йăмăк
Юлнă тăван килĕнче.
Балтика вара арканчăк,
Бандитсем – куç хыçĕнче…

Çĕршывра кĕрленĕ вăрçă,
Тăшман тапăннă пире.
Советсем пулман хăравçă,
Тарпа юн юхнă çире.

Хĕрĕхри ашшĕн кун-çулĕ
Сӳннĕ Можайск хулинче.
Амăшĕн вĕри куççулĕ
Юхнă тĕттĕм каçсенче.

Ял-хула чылай арканнă,
Хурлантарнă халăха.
Тарăху чунра капланнă,
Вăл тустарнă йăх-яха.

Тăват çула яхăн çуннă
Гитлер чĕртнĕ вут-кăвар.
Хăй те унтах вилĕм тупнă,
Татăлнă усал тымар.

Çĕнтерӳ парачĕ пулнă
Мускаври тĕп площадьре.
Ентеш унта çитсе курнă,
Утнă чи малти ретре.

Çичĕ çул иртсен вĕçленнĕ
Çар службি çав хулара.

Ĕнерхи салтак тĕпленнĕ
Хăй çуралнă ял-йышра.

Колхозра пичче ĕçленĕ
Шоферта тата хирте.
Маттур ывăл çитĕнтернĕ,
Килĕ-çурчĕ те хитре.

Вăхăтсăрах çĕре кĕнĕ
Кĕçĕн шăллĕ Микулай.
Тăхăрвун виççĕре вилнĕ
Амăшĕ асра пĕрмай.

Фронтовиксем шутлă юлнă
Мăн Ямаш таврашĕнче.
Сакăр вуннă урлă каçнă
Ватăсем куç умĕнче.

Виличчен вĕсем манмаççĕ
Вут-çулăмлă çулсене.
Çутă куншăн савăнаççĕ
Мирлĕ тăтăр çеç тĕнче.

*5.05.2007*

## Салтака каяççĕ каччăсем

Салтака каяççĕ ямашсем,
Ăсатма утаççĕ юлташсем.
Юратса юрлаççĕ юрăсем,
Ăмăртса ташлаççĕ тусĕсем.

Салтака каяççĕ йĕкĕтсем
Сывă та тĕреклĕ çын пулма.
Шантарççĕ хитре хĕрĕсем
Таврăниччен кĕтсе пурăнма.

Салтака каяççĕ каччăсем
Мирлĕ пурнăç йĕркине тăсма.
Çирĕппĕн хушаççĕ карчăксем
Куç пекех çĕршыва сыхлама.

Салтака каяççĕ тантăшсем,
Тӳпере шăваççĕ пĕлĕтсем.
Çыр хĕрринчи симĕс чăрăшсем
Чĕрере çĕклеççĕ ĕмĕтсем.

Сахал мар çарта ял каччисем,
Пултаруллă чăваш ачисем.
Пире кирлĕ мир салтакĕсем,
Мухтавлă çар отличникĕсем.

*2002-мĕш çул, январь.*



*Элĕк районĕнчи Мăн Ямаш каччи Геннадий Александрович Савельев (1950) рядовой 1969-1971-мĕш çулсенче Улан-Удэри çар службинче связист-телефонист пулнă. Ӳкерчĕке, яла таврăнсан, 1971-мĕш çулхи июньте, пахчари садра тунă.*




*Улан-Удэри мотострелковăй полкăн хĕрлĕ кĕтесĕнче Геннадий Савельевпа (Мăн Ямаш) Юрий Васянка (Ураскилт) рядовойсем лараççĕ. 1971-мĕш çулхи март уйăхĕ.*




*Мăн Ямашри Александр Савельев (1991)*
*рядовой çар службине 2009-мĕш çулхи кĕркунне лекнĕ*

## Çар салтакĕ

Çуркунне çара ăсатрĕç
Мăн Ямаш ял каччине.
Сывлăхпа телей пиллерĕç,
Сывпуллашрĕç ирхине.

Унтанпа çур çул çеç иртрĕ,
Йĕкĕт çитрĕ Кавказа.
Килтисемшĕн тунсăхларĕ,
Çыру çырчĕ час-часах.

Шалти çар чаçĕн салтакĕ
Служба кирлине пĕлет.
Çавăнта халь унăн хакĕ,
Хушнине ялан итлет.

Майĕпен кунсем шăваççĕ,
Тăкăнаççĕ çулçăсем.
Хурала куллен тухаççĕ
Çирĕп чунлă çамрăксем.

*10.10.2005*

## Ударница

Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ
Ямашри вăтам шкулта.
Пурин чунĕ çунатланчĕ:
Çичĕ ял ачи кунта.

Ирхине ирех вăранчĕ
Ира кинĕн хĕрачи.
Пахчара чечек пуçтарчĕ
Учительница валли.

Кăмăллăн Алена кĕчĕ
Иккĕмĕш хутри класа.
Ялкăшса çуталчĕ куçĕ,
Пӳлĕм çутă та таса.

Ударница кӳршĕ хĕрĕ,
Шкул чысне çӳле çĕклет.
Пурнăçа ĕмĕчĕ кĕрĕ,
Йывăрлăха çĕнтерет.

*9.09.2005*



*Элĕк районĕнчи Мăн Ямашра çуралса ӳснĕ Алёна Митрофанова (1992) ялти вăтам шкулта пĕлӳ илнĕ хыççăн Канаш педучилищине çул тытнă. Вĕренӳре 3-мĕш çул лайăх паллăсемпе ĕлкĕрсе пыракан хĕр учительница пулма ĕмĕтленет.*



*Шупашкарти Альгешево посёлокĕнче пурăнакан Лидия Александровнăпа (1963) Юрий Николаевич (1962) Портновсен Галинăпа (1988) Надежда (1989) хĕрĕсем вырăнти вăтам шкул хыççăн Шупашкарти чăваш патшалăх университетне вĕренме кĕнĕ. Кăçал Галя (сылтăмри) экологи енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ те хулари ача садне вырнаçнă. Халĕ вăл - воспитательница. Надя йăмăкĕ вара çав вĕренӳ заведенийĕн экономика факультетĕнче 5-мĕш çул ăс пухать-ха.*

*Ĕçпе вĕренӳ хыççăнхи пушă вăхăтра маттур хĕрсем ашшĕпе амăшне пахчари тата кил-çуртри ытти ĕçсене хаваспах тума пулăшаççĕ.*

## Кӑмашасем



*Поляков Иван Кузьмич (1922-1993) – Совет Союзӗн Геройӗ, гварди ефрейтор. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн ҫар служби Киев хулинче тӑсӑлнӑ. Офицер-подполковник ҫав хуларах вилнӗ.*

Сӑр шывӗн пӗр юппинче,
Анлӑ вӑрман варринче,
Кӑмашасем вырнаҫнӑ,
Кӳршӗсемпе туслашнӑ.

Турипе Анат ялсем
Килӗштерсе пурӑннӑ.
Ырӑ ӗмӗтлӗ ҫынсем
Тӑрӑшни те курӑннӑ.

Лесничество, шкул, чиркӳ
Пӗр вӑхӑтрах уҫӑлнӑ.
Ӗҫпеле суту-илӳ
Халӑх пурнӑҫне ҫӑлнӑ.

«ОБОД» артель картинче
Урапа-ҫуна тунӑ.
«Май» колхозӑн хирӗнче
Ачасем те вӑй хунӑ.

Гитлер вӑрҫи тапрансан
Арҫынсем фронта кайнӑ.
Ҫапӑҫура аманса
Ҫӗр ҫитмӗл ҫын ҫухалнӑ.

Ҫарта сывӑ юлнисем
Ҫӗнтерӳшӗн талпӑннӑ.
Поляков Иван Кузьмич
Герой пулса таврӑннӑ.

Виҫӗ ӗмӗр хушшинче
Ялсем чылай сарӑлнӑ.
Хӑшпӗр хресчен ҫемйинче
Маттуррисем палӑрнӑ.

Тувалкинпа Лосевсем
Ял шӑпине тӗпченӗ.

Алҫырусен пуххисем
Кӗнекере тӗпленнӗ.

Ҫӗмӗрле ҫывӑхӗнче,
Кӑмаша таврашӗнче,
Пурнӑҫ шӑвать малалла,
Халӑх юрлать чӑвашла.

Паян «Дружба» ҫыннисем
Тыр-пул ҫитӗнтереҫҫӗ.
Вӗсен савӑк сассисем
Чуна ҫӗклентереҫҫӗ.

*4.01.2003*

*Посвящается 100-летию партии большевиков (1903),*
*85-летию комсомола (1918), 75-летию колхозов (1929),*
*60-летию победы в Великой Отечественной войне (1945)*

## Союз нужен народам
## Пĕрлĕх кирлĕ халăха

Чĕмпĕрте çуралнă Ленин
Курса ўснĕ пурнăçа.
Çамрăклах шутланă темĕн,
Çавăрттарнă ăс-пуçа.

Тарçăра тертленнĕ халăх,
Авнă пилĕк-çурăма,
Чунсене çеç усрамалăх
Çăкăр лекнĕ чухăна.

Революципе çĕнтернĕ
Çĕршыври пусмăрлăха.
Улпут-кулака хĕстернĕ,
Сирнĕ тĕрĕсмарлăха.

Çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешнĕ
Хресченсем, рабочисем.
Хут пĕлменлĕхе пĕтернĕ
Вĕренсе ăс пухнисем.

Аслă Ленин ирĕк панă
Чăваш облаçне тума.
Пĕр Союза чăмăртанă
Халăхсене ыр курма.

Фабрик-заводсем çĕкленнĕ,
Колхозсем те йĕркеленнĕ,
Парти ертсе пынипе,
Комсомол пулăшнипе.

Дисциплина çирĕп пулнă
Советсен çĕршывĕнче.
Кашниех чунтан вăй хунă
Мирлĕ ĕç вырăнĕнче.

Çăткăн Гитлер хыпаланнă
Союза туртса çурма.
Сталина вăл улталанă,
Хăй васканă çунтарма.

Парăнман совет салтакĕ,
Кĕнĕ вутлăункăна.
Çухалман ниçта ун хакĕ,
Хăваланă тăшмана.

Вăрçă хыççăн ĕçе тухнă
Çĕнтерў салтакĕсем.
Ўсĕмпе малалла шунă
Тĕрлĕ наци çыннисем.

Ял-хула каллех юсаннă,
Капăрланнă тумпала.
Союз та часах вăйланнă,
Утнă анлă çулпала.

…Акă ăссăр усал Ельцин
Килсе ларчĕ Мускава.
Президент ятне те илчĕ,
Йăлт аркатрĕ çĕршыва.

Горбачев та тăрăшмарĕ
СССР-а упрама.
Референдума пăхмарĕ,
Ирĕк пачĕ арканма.

Перестройка, демократи
Пăсса ячĕç пурнăçа.
Чун иллисен «тăм хуранĕ»
Хăçан кайĕ çурăлса.

Пире халĕ пĕрлĕх кирлĕ,
Унсăр йывăр пурăнма.
Анчах йышлă халăх «чирлĕ»,
Вăл шанмасть тек никама.

Хамăр çине тăмасассăн
Çĕнĕ Союз пулас çук.
Пĕрлешсе вăй хумасассăн
Тулăх пурнăç курас çук.

*10.02.2004 ç.*

## Пирĕн çĕршыв тата район пуçлăхĕсем



*В.И.Ленин*
*(1870-1924)*



*И.В.Сталин*
*(1879-1953)*



*Л.И.Брежнев*
*(1906-1982)*



*Г.А.Зюганов*
*(1944)*



*В.С.Шурчанов*
*(1947)*



*И.А.Чирков(1916-1971) - КПСС Хĕрлĕ Чутай РК сектретарĕ*







*КПСС Элĕк райкомĕн секретарĕсем (сулахайран): В.П.Куралев (1903-1979), П.С.Меценатова (1903-1973), В.И.Анисимов (1949)*



Л.Н.Кононов (1951) - Элĕк район пуçлахĕ (1988-2000), Йăлкăш



С.Ф.Саперкин (1916-1999) - Элĕк райхаçат редакторĕ (1940-1944), Урикасси



А.Н.Мешков (1920-1993) - Элĕк райхаçат редакторĕ (1950-1955, 1957-58), Вутлан



А.Г.Кустиков (1926-2009) - Элĕк райхаçат редакторĕ (1958-1961, 1965-1986) Хирлеппуç



Л.М.Владимиров (1932-2006)- Элĕк райхаçат редакторĕ (1986-1994), Кĕçĕн Тăван



В.Ф.Степанов (1935-2006) - Элĕк райхаçат редакторĕ (1994-1996), Мăн Тукташ



Н.Е.Пахомов (1925-1991)- учитель, корреспондент (Мăн Явăш)



Д.Ф.Семенов (1938) - «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакторĕ (Мăн Явăш)



Е.М.Яранский (1958) - Етĕрне район пуçлăхĕ (1996-2010) - Асламас

## Обществăпа политика çыннисем





*Тури Çĕрпӳкассисем (сулахайран) Г.Г.Устинов (1899-1949) - учитель-фронтовик; И.Н.Никифоров (1934) - ялхуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, колхоз председателĕ; Л.В.Медведев (1946) - учитель, райхаçатăн штатра тăман корреспонденчĕ*



*В.Г.Орлов (1956) - Хĕрлĕ Чутай район пуçлăхĕ (1996-2005), Ишеккасси ялĕнчен*



*П.П.Петров (1900-?) - КПСС Хĕрлĕ Чутай РК секретарĕ (1934-1937), Вылапасар ялĕнчен*



*Н.А.Элле (1909-1982) - Хĕрлĕ Чутай райхаçат редакторĕ (1930), Штанаш ялĕнчен*



*И.Н. Коннов (1916-2002)- офицер-ракетчик (Штанаш)*



*В.Т.Токарев (1919-2009)- сержант-фронтовик (Чурпай)*



*А.Н.Иванов (1948)- летчик-капитан (Акташ)*




**Первый ряд (слева):**
*Филимонов Аркадий Филимонович (1928-1991) - Шумшевашский с/с, с.Шумшеваши;*
*Андреев Феофан Андреевич (1906-1987) - Элекейкинский с/с, д. СП - Шумшеваши;*
*Платонова Анисия Васильевна (1920-2001) - Таутовский с/с, д. Хирлеппоси;*
*Савельев Алесандр Петрович (1920-1983) - Атменьский с/с. с. Большое Ямашево;*
..........................................................................................................................
**Второй ряд (слева):**
*Афаньсев Михаил Афанасьевич (1929-2003) - Малотуванский с/с, д. М.Туваны;*
..........................................................................................................................
*Калмыков Гавриил Владимирович (1914-2006) - Раскильдинский с/с, с. Раскильдино;*
*Малинов Флориан Филиппович (1926-2003) - Большевыльский с/с. с. Большая Выла;*
*Казаков Иван Илларионович (1923-1964) - Пизиповский с/с, с. Устье.*
**Третий ряд(слева):**
*Никандров Геннадий Никандрович (1922-1977) - Крымзарайкинский с/с, д. Хорнзор;*
*Макаров Петр Макарович (1909-1964) - Аликовский с/с, д. Синерь;*
. ..........................................................................................................................



*Д.А.Андреев (1904-1963) - Мăн Ямаш ял Совет председателĕ (1948-1952)*



*Н.А.Лаврентьева (1961) - Мăн Выла ял поселени пуçлăхĕ (2000 - 2010)*



*Н.В.Яковлева (1974) - Мăн Явăш ял поселени пуçлăхĕн заместителĕ 2001 çултан*






**Ленин орденне тивĕçнисем:** *К.И.Тетерина (1887-1982) - учительница (Выла Пасар), С.А.Афанасьев (1925) - колхоз председателĕ (Кăраклав), М.П.Прокопьева (1929) - бригадир (Туçи), Д.И.Илларионов (1933-1995) - слесарь, газоэлектросварщик (Ишпарайка).*



*Ю.А.Николаев (1942) - Хĕрлĕ Чутай РИК председателĕ (1976-1984)*



*В.Ф.Бромбин (1950) - «Свобода» колхоз председателĕ 1995 çултан*



*В.Г.Иванов (1979) - «Чебоксарская правда» хаçат редакторĕ*



*В.А.Смелов (1948) - капитан (Мăн Ямаш)*



*Н.Д.Давыдов (1946-1993) - селькор, завклуб, педагог, подполковник*



*Ю.А.Молотов (1947) - инженер-механик (Яккушкăнь)*




*А.С.Семенова тата П.В.Железнова - Мăн Ямашри парторганизацин активисткисем*



*А.С.Петухов (1897-1942) - Мăн Ямаш фронтовикĕ*



*Е.С.Смирнов (1905-1933) - учитель (Мăн Ямаш)*



*И.Д.Ильдер (1908-1992) - учитель, (Мăн Ямаш)*



*А.Е.Свешников (1905-1952) - комсомол секретарĕ ( Хучаш)*



**Ветераны комсомола с. Б. Ямашево в июне 1969 года.**

*Стоят слева направо: И.К. Пидуганов (1903-1977), Я.М. Волков (1909-1979), И.Ф. Соловьев (1910-1980), А.Ф. Соловьева (1905-1976), И.Т. Трофимов (1904-1979), И.Д. Ильдер (1908-1992), А.М. Тимофеева (1899-1989), Д.А. Афанасьев (1906-1988) - первый секретарь сельской комсомольской ячейки.*



**Ветераны войны и труда с. Б.Ямашево, д. Якейкино Аликовского района Чувашской АССР 9 мая 1993 года.**

*Слева-направо: Владимиров Ф.В., Баранов М.Г., Николаев П.Н., Лаврентьев Г.Л., Николаев И.Н., Скворцов А.Г., Тимофеев Л.Т. и Ильдер А.И. (с. Б. Ямашево), Баранов П.К.*



**Встреча ветеранов печати 23 января 2009 года в г.Чебоксары.**

*Слева направо: Г.А. Савельев 8.01.1950 г.р. из с. Б.Ямашево, Н.П. Пантелеймонов 1932 г.р. из с.Юрмекейкино Моргаушского р-на, А.И. Михайлов 1930 г.р. из. д.Хачики Чебоксарского р-на.*



**Участники очередного пленума Аликовского райкома партии в 2009 г.**

*Сидят слева направо: Г.А. Савельев - секретарь п/о с. Б. Ямашево, Н.Д. Афанасьева- активистка д. В. Хоразаны, В.И. Анисимов - 1-ый секретарь райкома партии, В.А.Григорьева - секретарь п/о д. Кагаси, А.М. Ястребова (1952 г.р.) - учительница из д. Мартынкино, Н.М. Михайлова - секретарь п/о д. В. Карачура. Задний ряд: П.М. Матвеев - д. Кивой, В.В.Владимиров - д. Прошкино, В.М. Максимов - секретарь п/о с. Б. Выла, Л.П. Антонов - секретарь п/о села Раскильдино, Л.П. Рыков (1948 г.р.) - тракторист совхоза «Шумшевашский», В.С.Егоров - д. Шерашево, В.Сорокин - д. Ефремкасы, А.И. Мартынов - секретарь п/о с. Шумшеваши.*

## Ватăлма эс ан васка

*Элĕк район хаçат сотрудницы Елена Савельевна Тимофеева 55 çулта*

Хĕрĕх икĕ çул ĕçлерĕн
Эс редакци çуртĕнче.
Ывăнма, канма пĕлмерĕн,
Тĕлĕнет пуль çут тĕнче.

Хĕр чухне уçса эс кĕтĕн
Типографи алăкне.
Çийĕнчех ĕçе вĕрентĕн,
Шутламарăн талăкне.

Саспалли алăпа пухрăн
Текст валли сăмах тума.
Мăшăрна та часах тупрăн
Пурнăçра телей курма.

Ят-сума çӳле çĕклерĕр
Кунсерен вăй хунипе.
Хĕрпе ывăл çитĕнтертĕр
Пĕр-пĕрне юратнипе.

Çырас туртăмах çĕнтерчĕ,
Илсе кайрĕ хаçата.
Служба картлашки çитерчĕ
Чи ответлă хуçана.

Тĕрлĕ ĕç çырăнса пычĕ
Хаçатри номерсенче.
Çамрăклăх та хыçа юлчĕ,
Асилӳ – чĕресенче.

*2.02.2004 ç.* *2.12.2010 ç.*

*Вунтăххăрти Асамат ял хĕрĕ Элĕк район типографине вăтам шкул хыççăн 1968-мĕш çулхи кĕркунне пырса кĕнĕ. Ун хыççăнах комсомолкăна район хаçат редакцине ĕçлеме куçарнă. Унтанпа 42 çул та иртсе кайрĕ, пичет ветеранĕ халĕ те юратнă ĕçре тимлет. Опытлă журналистка çамрăксене пулăшса пырать.*



## Кил хуралçи

Ямаш пĕви пусĕнче
Йыт çури апат шырать.
Инçех мар ун çумĕнчен
Ман аппа иртсе пырать.

Имшеркке пĕчĕк чуна
Илчĕ чĕркуççи çине.
Шелленипе вăл ăна
Килсе ячĕ витене.

Хĕл иртсессĕн, çур енне
Анчăк ӳссе çитĕнет.
Килен-каян çынсене
Вĕркелеме пикенет.

«Мухтар» чăнах та маттур,
Ĕненмесен кĕрсе кур.
Каланине вăл чухлать,
Кил-çурта çирĕп сыхлать.

*15.04.2004 ç.*



## Пирĕн çунатлă туссем

Пĕчĕк вĕçен кайăксем –
Пирĕн яланхи туссем.
Мĕншĕн тесессĕн вĕсем,
Чуна çывăх чĕрчунсем.

Шăнкăрч, шăпчăк, чĕкеçсем –
Илĕртӳллĕ кайăксем.
Çитрĕç вĕçсе çуркунне,
Килсе ларчĕç çурт умне.

Кăнтăрти çĕршывсенче
Пурăннă сив кунсенче
Пирĕн кил таврашĕнче
Вĕсемшĕн – ырă тĕнче.

Шурă хурăн тăррине
Çакса патăмăр вĕлле.
Хура шăнкăрч юррине
Илтес çук эпир хĕлле.

Кĕçех садпа пахчара
Çурăлчĕ çĕмĕрт-сирень.
Çӳлти хăтлă йăвара
Курăнчĕ тем, чĕп иккен.

Шăпчăк-чĕкеç юррипе
Концертри пек туйăнать.
Вĕсен çепĕç кĕввипе
Манăн чунăм савăнать.

Хăйсем тăрăшуллăран
Çӳп-çап çӳле çĕкленет.
Тăмпа утă-улăмран
Çемье йăви тĕпленет.

Алсемсĕрех çурт пулать,
Унта чĕпĕ те тухать.
Çурхи хĕвел йăл кулать,
Пурне те телей сунать.

*2001-мĕш çул, май.*



## Чĕрчунсемшĕн тăрăшатăп

Ирхине ирех тăратăп,
Физзарядка та тăватăп,
Унта-кунта чупкалатăп,
Хыççăн колхоза утатăп.

Çутă куншăн савăнатăп,
Чĕрчунсемшĕн тăрăшатăп,
Кăмăл ӳснине туятăп,
Çынлăх илемне тупатăп.

Сăнчăрти йытта пăхатăп,
Йăвине улăм саратăп,
Апатне тухса паратăп,
Каяшне те пуçтаратăп.

Эп ăна ялан сăнатăп,
Тус-юлташ пекех хаклатăп,
Çавăнпа килте усратăп,
Хуралта тăма шанатăп.

Кушака та юрататăп,
Сĕтпеле тăрантаратăп,
Шăши тытнăшăн ырлатăп,
Усăлма тек кăларатăп.

Ачаш чĕрчуна усратăп,
Çурăмран хуллен лăпкатăп,
Тупĕр чух унпа вылятăп,
Çывăрма пĕрле выртатăп.

*2.02.2006*

## Йĕкехӳресем

Йĕкехӳре çулĕ терĕç
Кăçалхи çулталăка.
Ăна пурте паллă турĕç,
Саламларĕç халăха.

Усал чĕрчун вара чирлĕ,
Тарăхтарать вăл ялан.
Çавăнпа та капкăн кирлĕ,
Тытăпăр ăна аван…

Ирхине пасара çитрĕм,
Илтĕм çав япалана.
Хаваспах хутаçа чикрĕм,
Усă кӳтĕр çеç мана.

Усси вара часах пулчĕ:
Унта лекрĕç шăшисем.
Вуннăран та иртрĕ шучĕ,
Черет – йĕкехӳресен.

Вĕсем хытă алхасаççĕ
Кил-çуртсен таврашĕнче.
Çынсене пăлхантараççĕ,
Тавăру – чĕресенче.

Кĕрешӳ вăйланса пытăр
Малаллахи çулсенче.
Йĕкехӳре тек çухалтăр
Эпир пурнан çĕр çинче.

*1.05.2008*

## Талант

*Чăваш халăх çыравçи Юхма Мишши*
*70 çул тултарнă май*



Юхма шывĕ хĕрринче,
Чăваш Сăкăт ялĕнче,
Çуралнă Микул Мишши,
Çемьере – чи ачашши.

Ăс пухнă ялти шкулта,
Яланах пынă малта.
Çитнĕ кĕç института,
Ĕçленĕ редакторта.

Çырнă информацисем,
Очерксемпе статьясем.
Калăпланă калавсем,
Сăвă, пьеса, романсем.

Хăй мĕн курни-пĕлнипе
Шăрçаланнă йĕркесем
Тĕрлĕ халăх чĕлхипе
Тухнă ун кĕнекисем.

Юлашки вун пилĕк çул
Союза ерсе пырать.
Умра, акă – çитмĕл çул,
Вăл вара çаплах çырать.

Грамота, хисеплĕ ят
Ахальтен ăна паман.
Çыравçă-лауреат –
Чăннипех пысăк талант.

*12.02.2006*

## Маттурсем

Çăвĕпех хирте ĕçлерĕç
Ял ачисем тар юхтарса.
Кĕр енне ĕçсем вĕçлерĕç,
Хаваслăн утрĕç юптарса.

Ĕç пĕтсен канма та лайăх,
Çăмăллăнах чĕре тапать.
«Маттурсем!» – каларĕ халăх,
Ĕçченсене вăл тав тăвать.

Вăйлă та сăпайлă çамрăк
Ура тапсах купăс туртать.
Сарпикен кăмăлĕ савăк,
Хĕпĕртесех ташша тухать.

Кĕркунне: уй-хир пушанчĕ,
Саралчĕ çулçă вăрманта…
Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ
Ял варринчи вăтам шкулта.

*1.09.2008.*



*Çирĕккасси çынни - Андрей Филиппович Филиппов (1921-1979) фронтовик председатель пулса 1966-1973-мĕш çулсенче ĕçлерĕ. Кантур çуртне те шăпах вăл тутарчĕ.*



*Мăн Ямашри «Заря» колхозăн канцелярийĕ. Ăна ял варринче 1966-мĕш çулта туса лартнă, 2000-мĕш çулта пăсса сутнă.*

## Колхозра ӗҫсем нумай

**Тракторпа** суха тăваççӗ
Ҫарта пулнă йӗкӗтсем.
Нӳрӗ ҫӗр ҫине акаççӗ
Сарă тулă пӗрчисем.

Тикӗсех шăтса тухаççӗ
Ҫăра симӗс калчасем.
Пит илемлӗн курăнаççӗ
Таврари сад-пахчасем.

Улăхра курăк ҫулаççӗ
Ялти ҫамрăк инкесем.
Юрату ҫинчен юрлаççӗ
Канма ларнă пикесем.

Утă-улăм купалаççӗ
Выльăх-чӗрлӗх хуҫисем.
Таса аш, сӗт-ҫу сутаççӗ
Туслă ферма ҫыннисем.

Кӗр енне пиҫсе ҫитеççӗ
Ана ҫинчи ҫимӗҫсем.
Вӗсене пухса илеççӗ,..
Пур-ха колхозра ӗҫсем.

Ҫулсерен шкула чупаççӗ
Ял ӗҫченӗн ачисем.
Тăрăшса пӗлӳ пухаççӗ
Ҫӗнӗ пурнăҫ ҫеҫкисем.

*15.05.2005*



*Элӗк районӗнчи «Заря» колхоза кӗрекен Яккушкăнь ялӗнче 1942-мӗш ҫулта ҫуралса ӳснӗ Василий Сидоров тракторист асăннă хуҫалăхра 35 ҫул ДТ-54, ДТ-75 тракторсемпе ӗҫленӗ, «Знак почёта» (1971) орденпа «В.И.Ленину - 100 лет» (1970) тата ытти медальсемпе хаклă парнесене тивӗҫнӗ. Пӗр ял хӗрӗпе мăшăрланса виҫӗ ывăлпа икӗ хӗр ҫуратса ӳстернӗ. Чирленӗ май, 2005-мӗш ҫулхи декабрӗн 29-мӗшӗнче, унăн кун-ҫулӗ татăлнă.*

# Колхоз вара арканать

*Иртнӗ ӗмӗрӗн 1991-мӗш тата ун хыççăнхи çулсенче правительство шайӗнче çӗкленӗ перестройкăпа рынок экономикин тискер реформисем колхозсемпе совхозсене йывăрлăха кӗртсе ӳкерчӗç. Патшалăх енчен пулăшу пама пăрахнă май, пурте хăйсен статусне улăштарса, çӗнӗлле ӗçлеме пикенчӗç. Анчах та ку çулпа утма, паллах, çăмăл мар. Çавăнпа та хăшӗ-пӗри, налукпа ӗç укçисен пысăк парăмӗсене пула, çӗнӗ ӗмӗре кӗрсен, 2001-мӗш çултан саланма пуçларӗç. Сăмах май, Элӗк районӗнчи «Нива», «Ямаш» тата хăшпӗр ялхуçалăх производство кооперативӗсем çук та ӗнтӗ. Кун пек чуна ыраттаракан киревсӗр тӗслӗхсем республикăри ытти районсенче те пур.*

*Малашне та çак тумхахлă çулпа сиксе пырсан, пӗрлешӳллӗ хуçалăхсем пӗрин хыççăн тепри арканса пӗтсен, ялпа хула халăхне апат-çимӗç продукчӗсемпе кам тивӗçтерӗ-ши? Ку лару-тăруран епле хăтăлмалла-ши?*

Çитмӗл çич çул каялла,
Çирӗм тăххăрмӗш çулта,
«Заря» колхоз çуралать,
Майӗпен ураланать.

Районтисем хушнипе
Пӗрлешсе пысăкланать.
Колхозниксем ыйтнипе
Статус каллех улшăнать.

Перестройка тапрансан
Совет Союз саланать.
Реформăсем пуçлансан
Хуçалăх начарланать.

Çапах кооперативра
Çӗр çын ытла вăй хурать.
Ялсенчи коллективра
ӗçчен халăх ыр курать.

Тулта сивӗ, юр çăвать,
Таврана шап-шур тăвать.
Пуçра шухăш явăнать,
Шел, хуçалăх юхăнать.

Çӗршыв тӗлсӗр пăтранать,
Халăха хумхантарать.
Колхоз шелсӗр арканать,
Ку пире хурлантарать.

Çӗр чăмăрӗ çаврăнать,
Кун-çула улăштарать.
Ырри çавах таврăнать,
Пурнăçа майлаштарать.

Хӗвел хӗрелсе тухать,
Тӗнчене вăл çутатать.
Хресчен хӗлле вăй пухать,
Çуркунне хире чупать.

*27.01.2006*




**Торжественное мероприятие Большеямашевского колхоза «Заря» в июне 1969 года.**

*На опушке колхозного леса слева направо в президиуме стоят:*
*Ильдер Иван Дмитриевич (1908-1992) – педагог, с. Б.Ямашево*
*Филиппова Анастасия Филипповна (1905-1976), с. Б.Ямашево*
*Афанасьев Даниил Афанасьевич (1906-1988)– майор, с. Б.Ямашево*
*Андроников Василий Андроник. (1912-1990) – педагог, д. Якейкино*
*Тимофеева Анна Максимовна (1899-1989) – педагог, с. Б.Ямашево*
*Трофимов Леонид Трофимович (1930-1980) – секр. сельсовета, с. Б.Ямашево*
*Филиппов Андрей Филиппович (1921-1979) – пред. колхоза, д. Сириккасы*
*Скворцов Алексей Григорьевич (1925-2005) – завхоз колхоза, д. Якейкино*
*Михайлова Ольга Прокопьевна (1946)- секретарь РКВЛКСМ, д. Шерашево*
*Долгова Зоя Павловна (1937) – ветврач, с. Б.Ямашево*
*Николаев Илья Николаевич (1923-2006) – агроном, д. Якейкино*
*Тимофеев Василий Васильевич (1934) – врач-невропатолог, с. Б.Ямашево*
*Гусаров Михаил Тимофеевич (1930) – завуч школы,*
*уроженец д. Хорамалы Ядринского района.*

# Киноискусство

*Кинематографи 1895-мĕш çулта никĕсленнĕ. Киноискусствăна пропагандăлас тата ăна халăх хушшинче анлăрах сарса пырас тĕллевпе, СССР Совнарком президиумĕн председателĕ Л.И. Брежнев тата унăн секретарĕ М. Георгадзе кино кунне çулсеренех августăн 27-мĕшĕнче паллă тума йышăнса Указ кăларнă.*

Çĕр вунă çул каялла
Кино ĕçĕ пуçланнă…
Пурнăç кайнă малалла,
Иртни лентăра юлнă.

Хусканакан мĕлкесем
Шур экран çинче шунă.
Ăнланма пултăр тесе
Аяла çырса пынă.

Вăтăрмĕш çулсем таран
Сассăр киносем тухнă.
Е ялта, е хулара
Ăна хаваспах пăхнă.

«Пур искусствăран кирли –
Кино» – тесе каланă.
Ленин сăмахĕ пирки
Халăх ăшшăн калаçнă.

Пĕтĕм кино техники
Тĕрлĕ ялсене çитнĕ.
Килсерен ватти-яшши
Çĕнĕ фильмсем кĕтнĕ.

Ик-виç эрнере пĕрре
Яла кино килетчĕ.
Колхозри халăх çĕрле
Клуба йышлăн çӳретчĕ.

Эпĕ хам та пĕчĕклех
Кино енне туртăннă.
Унти юрă-кĕвĕпех
Ача чунĕ савăннă…

Перестройка пуçлансан
Ялта кино путланчĕ.



*Хĕрлĕ Чутай (халĕ Элĕк) районĕнчи Мăн Ямаш ялĕнче çуралса ӳснĕ хыççăн, Саратов хулинчи киномеханиксен шкулĕнчен вĕренсе тухнă 2-мĕш категориллĕ киномеханик Василий Максимович Трофимов (1938-1999), таврари ялсенче, 1960-1980-мĕш çулсенче, кинофильмсем кăтартассипе тăрăшса ĕçлерĕ.*

Телеэкрана уçсан
Кăмăл-туйăм пăтранчĕ.

Куракансен шухăшне
Рекламăсем татаççĕ.
Çамрăксен ăс-хакăлне
Секс-фильмсем пăсаççĕ.

Хамăр çĕршыв хуçисен
Çавна шута илесчĕ.
Çĕн кун-çул калчисене
Йĕркеллех ӳстересчĕ.

*18.08.2005*




*Владимир Ильич ЛЕНИН (Ульянов) (1870-1924) - Октябрьти социализмла Аслă революци (1917) çулпуçĕ, çĕршывра Совет влаçне тата СССР-а (1922) туса хураканĕ. Вăлах, 1920-мĕш çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче - Чăваш автономи облаçне йĕркелесе яма ирĕк парса тата çав çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче хамăр çĕршыва электрификацилемелли ГОЭЛРО планне ырласа йышăннă декретсене алă пусса çирĕплетнĕ.*

*Революци 50 çул тултарнă тĕле (1967) çĕршыври пур участоксене те, çав шутра Чăваш АССР-ĕнчи ялсене те, электрификацилесе çитерчĕç. Çапла майпа патшалăх планĕ пурнăçланчĕ.*

*Манмасть Ленина Совет халăхĕ. Ун ячĕпе чылай çĕрте палăксем упранаççĕ тата çĕнĕрен çĕкленеççĕ. Ку палăка, акă, 1999-мĕш çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче, Хĕрлĕ Чутай çумĕнчи Енкĕлт ялĕнче вырнаçтарнă.*

## ГОЭЛРО

Ку ĕç çирĕммĕш çулта
Раштав вĕçнелле пулнă.
Хĕл сивви тăнă тулта,
Кабинетра шавланă.

Çĕршыва çутă пама
ГОЭЛРО планне тунă.
Çав хута ĕçе яма
Аслă Ленин ал пуснă.

Инженер-электриксем
Проекта алла илнĕ.
Электромонтажниксем
Хĕрӳ ĕçе пикеннĕ.

Майĕпен ял-хуласем
Пралуксемпе çыхăннă.
Хресченсем, рабочисем
Уншăн хытă савăннă.

Мĕншĕн тесен килсенче
Хăйă, краççын çухалнă.
Кĕрхи тĕттĕм каçсенче
Электрица çуталнă.

Пурнăçа çăмăллатма
Пурте пĕрле тăрăшнă.
Çĕршыва аталанма
Электроток пулăшнă.

*22.12.2005.*

## Уйрӑлу

Ҫӑлтӑрсем ялан ҫунаҫҫӗ
Каҫ пулсассӑн тӳпере.
Шухӑшсем канӑҫ памаҫҫӗ,
Асилӳ – чун-чӗрере…

Ҫамрӑксем вӑйя, ав, тухнӑ
Ял пуҫӗнчи тӳреме.
Ҫавӑнта сана эп тупнӑ,
Ыйтнӑ пӗрле ҫӳреме.

Анчах эсӗ хирӗҫлерӗн,
Утрӑн урӑх каччӑпа.
Хӑв мана та тиркемерӗн,
Сана ҫавӑрчӗ шӑпа.

Нумай мар, пӗр-икӗ уйӑх
Эп ҫӳрерӗм санпала.
Кӗр ҫитсессӗн, юр ҫусассӑн
Илсе кӗтӗм хам пата.

Ҫемье вучахне чӗртсессӗн
Ҫуралчӗ ача-пӑча.
Килӗм-ҫуртӑм ҫӗнелсессӗн
Пурнӑҫ улшӑнчӗ пачах.

Пӗр чӗлхе тупма пит йывӑр
Савнӑ мӑшӑр пӑтрансан.
Ҫавӑнпа чуна та тӑвӑр,
Ӑш вӑркать ман – ӑнлансам.

Килӗшӳ вара пулмарӗ,
Сас янрарӗ ҫемьере.
Куҫусем ӑшшӑн кулмарӗҫ,
Тем шырарӗҫ ҫимӗкре.

Чӗрӗк ӗмӗр иртсе кайрӗ,
Курӑнмарӗ улшӑну.
Ҫулсене икке пайларӗ
Кӗркуннехи уйрӑлу.

*6.03.2006*

## Тĕлпулу

Вăрансан ыйхă килмерĕ,
Выртрăм шухăша путса.
Чĕремре кăвайт сӳнмерĕ,
Тăчĕ çуткăç пек çунса.

Сар хĕвел çӳле çĕкленчĕ,
Çĕн кун килчĕ çуталса.
Ĕмĕт-туйăм çирĕпленчĕ,
Кăмăл уçă та таса.

Çав кунах пикене куртăм
Хăйĕн ĕç вырăнĕнче.
Çийĕнчех çĕкленчĕ туртăм,
Куç каймарĕ хĕр çинчен.

Унпалах пуласшăн çунчĕ
Канăçа пĕлмен чĕре.
Вĕçĕмсĕрех çунатланчĕ
Калаçса пăхма пĕрре.

Тĕлпулун усси те пулчĕ,
Уçăлтарчĕ чунăма.
Савнă тусăм ăшшăн кулчĕ,
Хĕмлентерчĕ туйăма.

Юрату вăл чун апачĕ,
Унсăр йывăр пурăнма.
Хӳхĕм хĕрĕн сăн-сăпачĕ
Тыткăнларĕ халь мана.

Ун çинченех шухăшлатăп
Ир те, каç та, яланах.
Ыррине кăна шанатăп,
Мăшăр пулĕ манăнах.

Сивĕ кунсем шуса иртрĕç,
Çитрĕ ăшă çуркунне.
Тĕлпулу телей пиллерĕ,
Çухатас çук савнине.

*14.11.2006*

## Телее пĕрле шырар

Чун илемлĕхне хаклатăп,
Маншăн эсĕ – çут сăнар.
Ыр сунса çыру çыратăп,
Вуласассăн ответ пар.

Пĕр вĕçĕмсĕр шухăшлатăп,
Чĕрере – сӳнми кăвар.
Кунĕн-çĕрĕн тунсăхлатăп,
Мана пĕччен ан хăвар.

Ĕмĕтре сана тупатăп,
Тĕлĕкре – эс юнашар.
Вăрансан кичем туятăп,
Атя иккĕн майлашар.

Çулĕсем таçта шăваççĕ,
Чарма çук çав, мĕн тăвар?
Туйăмсем канăç памаççĕ,
Пĕр-пĕрне сума сăвар.

Шанчăка эп çухатмастăп,
Чунăм çамрăк та хастар.
Шухăша улăштармастăп,
Урăхне эс ан астар.

Кăмăлна чунтан ырлатăп,
Шухăшна çеç ан пытар.
Кĕт, савни, кĕçех пыратăп,
Телее пĕрле шырар.

*8.01.2006*

## Ан мансам

Нумай мар, пĕр иккĕ-виççĕ
Куркаларăм эп сана.
Туйăмсем пĕрмай хĕреççĕ,
Пăлхатаççĕ халь мана.

Эсĕ ăслă, тавçăруллă,
Килĕшӳллĕ те хитре.
Пур ĕçре те пултаруллă,
Ăшă кулă – сăн-питре.

Вată мар-ха эсĕ – çамрăк,
Килӳнте – пĕчĕк çемье.
Çавăнпах пуль питĕ савăк,
Кăмăлу вара çемçе.

Калаçма çынпа пĕлетĕн,
Сан пекки текех курман.
Халăх хушшинче ĕçлетĕн,
Никама усал туман.

Ятупа шанăç кӳретĕн
Манăн çамрăк чунăма.
Асăмра пĕрлех çӳретĕн,
Вăйлататăн туйăма.

Яланах аса илетĕп
Калаçса ларнисене.
Ыррине ĕмĕтленетĕп,
Ан мансам çав кунсене.

*14.02.2009*

## Çуркунне…

Тӳперен сар хĕвел çунтарать,
Ăшăпа çут тĕнче вăранать.
Ял çынни пахчара туртăшать,
Тĕрлĕ çимĕç тума тăрăшать.

Уй-хирте тракторист сухлать,
Иртенпех каллĕ-маллĕ хутлать.
Кун çути майĕпен çухалать,
Таврана каç чаршавĕ хуплать.

Бригада ĕçре тăрмашать,
Каçхине çеç киле саланать.
Кĕмĕл уйăх çӳле кармашать,
Çутине инçете сапалать.

Çуркунне юрату çуралать,
Çамрăксене вăйя йыхравлать.
Çĕмĕртпе сирень те çурăлать,
Ырă шăршă ялта сарăлать.

Чун-чĕре юратушăн çунать,
Каçсерен урама туртăнать.
Тус-юлташăм сывлăх сунать,
Купăспа вылямашкăн ыйтать.

Кĕвĕпе хĕрупраç савăнать,
Çемĕпе ташласа çаврăнать.
Пĕр пике мана вăрттăн сăнать,
Туятăп: унпа пурнăç ăнать.

*13.03.2008*

## Çурхи илем

Улăхра чечексем çурăлаççĕ,
Çĕнетеççĕ çерем çĕрсене.
Аякран кавир пек курăнаççĕ,
Астараççĕ ялти хĕрсене.

Çуркунне çитсенех вăранаççĕ
Вĕллери ĕçчен пыл хурчĕсем.
Нектарпа хăйсем те тăранаççĕ,
Пылпала тулаççĕ çурчĕсем.

Ирпе-каç шăпчăксем савăнаççĕ,
Шăрататçĕ хитре юрăсем.
Инçене-инçене саланаççĕ
Вăйăра янракан сасăсем.

Кайăксен кĕввипе киленетĕп
Каçсерен тăван кил умĕнче.
Шухăшпа эп таçта та çитетĕп,
Эх, илемлĕ-çке çутă тĕнче!

*25.05.2009*

## Палан

Шап-шурах шуралчĕ
Пахчари палан.
Çеçкипе турачĕ -
Куç тулли паян.

Никамах астармĕ
Шăршипе палан.
Çапах чăрмантармĕ,
Вăл кирлĕ ялан.

Çу каçипе пиçрĕ,
Хĕрелчĕ палан.
Татма вăхăт çитрĕ,
Эх, çырли аван!

Çиме, паллах, йӳçĕ –
Тутана хĕртет.
Сиропĕ пит уçă,
Чирсенчен сиплет.

*6.06.2009*

## Вăрман

Ял çумĕнчех колхоз арманĕ
Чылайранпа хупă ларать.
Юнашарах лесхоз вăрманĕ,
Унта чакак чĕп кăларать.

Чакак çеç мар, куккук та шăпчăк
Çулсеренех çемье тăвать.
Ахальтен мар вăрманти шăплăх
Вĕсен сассисемпе тулать.

Уçланкăри улăх-çаранĕ
Ӳстернĕ сар чечексене.
Юратури чĕре суранĕ
Асилтерет иртнисене.

Вăрман пуян: пур ырлăх-пурлăх
Кӳрет вăл ял çыннисене.
Çырли, кăмпи те сарă мăйăр
Тăрантарать çемьесене.

Кирлех пулсассăн килте йывăç,
Ирĕк илсем эс кантурта.
Вара, чăнах та, таса йвăс
Çĕнетĕ санăн кил-çурта…

Хăрăк турат та темĕн чухлĕ
Пуçтарăнать вăрмансенче.
Çурт ăшши те часах тухĕ,
Çунсассăн кăмакасенче.

*14.06.2009*

## Куккук

Куккука эп палламанччĕ
Çак тарана çитиччен.
Курасса та пит шанманччĕ
Вăрманта сас янриччен.

Çу кунĕсем çывхарсассăн
Таврара вĕçет куккук.
Мăшăрне пĕр тĕл пулсассăн
Вăл ăна вĕçертес çук.

Анчах эпĕ ăнланмастăп:
Мĕншĕн эсĕ авăтан?
Ыйтусем парсан  чĕнместĕн,
Чакака, ав, çавăтан.

Ахаль мар-ха эсир туслă,
Пур пĕрпеклĕхсем сирте:
Хӳре вăрăм, сассăр уçă,
Кĕç вĕçетĕр ял-хирте…

Яланхи пекех янратăр
Таврара куккук сасси.
Çемьере те ан çухалтăр
Савăк ачасен сасси.

*15.06.2009*

## Çумăра кĕтсе

Çанталăк кăçал питĕ шăрăх,
Пĕçертет çĕр питне кунсерен.
Ӳсмерĕ садра симĕс курăк,
Ёнтсе ячĕ хĕвел тӳперен.

Таçта аякра ăшă çумăр
Шăварать пахчари çимĕçе.
Анчах та пире вара йывăр,
Хĕрĕх градус — сывлăшри виçе.

Тепĕр чух сывлама та тăвăр,
Кăвак тĕтĕм тăрать таврара.
Çунать вăрман, шутласа пăхăр:
Такамсем вут чĕртнĕ канура.

Мĕнле чăтать-ши выльăх-чĕрлĕх?
Кĕтӳре вăл çӳрет тертленсе.
Тупать мĕскĕн чун сулхăн хӳтлĕх,
Яланхи пек выртать тĕпленсе.

Пулать-ши кăçал тырă-пулă?
Çĕр çинче нӳрĕк çук, шыв сахал.
Çапах та ан пултăрччĕ выçлăх,
Ёлĕкхи те иртмен çав ахаль.

Çăлсем, пĕвесем те типеççĕ,
Чунтанах тарăхать ял çынни.
Çумăра тем пекех кĕтеççĕ,
Виçĕ уйăх ытла çуманни.

*17.07.2010*

**Кăçал, чăнах та, апрель-июль уйăхĕсенче çумăр пĕрре те пулмарĕ. Августăн 19-мĕшĕнче (кĕçнерникун) çеç аякри çумăрсем килсе çитрĕç.*

## Юрă-ташă – чун уççи



“Юрламасăр чун чăтмасть”, – теççĕ çак ӳкерчĕкре ларакансем. Ку, чăнах та, каламасăрах паллă ĕнтĕ. Ара эпир пурте ачаранах Совет композиторĕсен лирикăллă юррисене хаваспах шăрантарнă. Учительсем пире, диктантсем, изложенисем тата сочиненисем çыртарнисĕр пуçне, кĕске сăвăсем те калăплама хăнăхтаркаланă, шкулти художество пултарулăх кружокне те явăçтарма тăрăшнă.

Юрра-ташша ачаранах хăнăхнă май, çак маттур хĕрарăмсем те концертсене сахал мар хутшăнкаланă, хăйсен пултăрулăхне кӳршĕ ялсенче те кăтартнă. Паллашар-ха,эппин, вĕсемпе.

Сулахайри – Людмила Николаевна Миронова Çĕмĕрле районĕнчи Юманай ял Советне кĕрекен Луговая ялĕнче çуралнă. Чăваш ялхуçалăх институтĕнче зоотехник профессине ала илнĕ хыççăн Элĕк районĕнчи «Выла» совхоза ĕçлеме килнĕ, Вылапасар ялĕнчи Николай Миронов механизаторпа çемьеленнĕ. Икĕ ача амăшĕ кайран 10 çула яхăн районти «ГОССТРАХ» обществин агенчĕ пулса çӳрерĕ, халĕ çуралса ӳснĕ ялта ĕçлесе пурăнать.

Варринчи – Эвелина Александровна Щĕвкина Выла юханшыв юппинчи Шуркассинче çуралнă. Улатăрти ял хуçалăх техникумĕнче бухгалтер дипломне алла илнĕ те «Выла» совхоз кантурĕнче тимленĕ. Юлашки 10 çулĕ районти «ГОССТРАХ» обществинче иртсе пырать. Вылпасарĕнчи Саша упăшкипе икĕ хĕр ӳстернĕ.

Сылтăмри – Алевтина Степановна Алексеева 1954-мĕш çулта Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Яманкасси ялĕнче çуралнă, унтах пурăнать. Вăтам шкул хыççăн педагогикăпа ялхуçалăх институчĕсенче пĕлӳ илнĕ те паянхи кунччченех Çĕнĕ Атикассинчи вăтам шкулта вăй хурать. Вăл организатор та, директор та пулнă, халĕ – учительница.

# ЮРАТУ ЮРРИСЕМ

## Канăҫа ҫухатрăм

*Сăввипе кĕввине те Геннадий Савельев ҫырнă*

Ҫуркуннехи ăшă, лăпкă каҫхине
Ансăртран паллашрăм эпĕ санпала.
Хĕмлентерчĕ туйăм ҫамрăк чĕрене,
Канăҫа ҫухатрăм ҫав каҫранпала.

Эс ун чух калаҫрăн хытă вăтанса,
Ҫав хушăрах ассăн, ассăн сывласа.
Хăмăр куҫусем ҫуталчĕҫ ялкăшса,
Ҫĕрĕпех сăнарĕҫ мана хакласа.

Шуҫăм киличчен ҫӳрерĕмĕр пĕрле,
Ҫăлтăрсем вылярĕҫ ҫӳллĕ тӳпере.
Шăппăн утнăҫемĕн иксĕмĕр ҫĕрле,
Юрласа ăсатрĕҫ шăпчăксем пире.

Манас ҫук нихҫан та пĕрле пулнине,
Тыткăнларăн, тусăм, ĕмĕрлĕх чуна.
Кунĕн-ҫĕрĕн саншăн, саншăн ҫуннине
Пĕлсе тăр, савниҫĕм, ман эсĕ кăна.

*1979-мĕш ҫул, май.*

*Юрă районти радиовещани студийĕ урлă – ҫав ҫулхи августра, Чăваш радиостанцийĕ урлă 1997-мĕш ҫулта янăрарĕ.*

## Канăçа çухатрăм

*Сăввипе кĕввине те Геннадий Савельев çырнă*



## Ытамрах-ха эсĕ...

*Геннадий Савельев сăвви*
*Юрий Кудаков кĕвви*

Каçхине, хĕвел ансассăн,
Тухрăм эпĕ урама.
Савнипе пĕрле пуласшăн
Чунăм туртрĕ улаха.

Хушса юрлама:

Тӳпене хăпарнă уйăх,
Çутатать тавралăха.
Чĕрене хускатнă туйăм
Çул уçать малашлăха.

Çăлтăрсем выля пуçларĕç
Çын çитейми уçлăхра.
Шухăшсем канăç памарĕç:
– Юратах, савни – çумра.

Хушса юрлама:

Тӳпене хăпарнă уйăх
Çутатать тавралăха.
Чĕрене хускатнă туйăм
Çул уçать малашлăха.

Çуллахи каç иртрĕ хăвăрт,
Кĕç хĕрелĕ шурăмпуç.
Ытамрах-ха эсĕ пулăн,
Ман юратнă хура куç.

Хушса юрлама:

Тӳпене хăпарнă уйăх
Çутатать тавралăха.
Чĕрене хускатнă туйăм
Çул уçать малашлăха.

*1981-мĕш çул, март.*

*(Нота тĕпĕр енче)*

**Кĕвĕ авторĕ Юрий Дмитриевич Кудаков (1942) Çĕмĕрле районĕнчи Хутарта çуралса ӳснĕ, пединститутра пĕлӳ илнĕ, нумай лирикăлла юрă кĕвĕленĕ.*


Хумхануллӑн, хӑвӑрт мар
Каç-хи-не, хӗ-вел ан-сас-сӑн, тух-рӑм э-пӗ у-ра-ма.
Сав-ни-пе пӗр-ле пу-лас-шӑн, чу-нӑм турт-рӗ у-лӑ-ха.
Хушса юрламалли:
Хутлама
не хус-кат-нӑ ту-йӑм, çул у-çать ма-лаш-лӑ-ха.
Вӗçлеме
çать ма-лаш-лӑ-ха.

## Çĕмĕртсем çеçке çурсан…

*Геннадий Савельев сăвви*
*Михаил Николаев кĕвви*

Çуркунне, садсем симĕсленсессĕн,
Çĕмĕртсем ларсассăн çеçкене,
Каçхине, ĕçрен киле çитсессĕн,
Çамрăксем тухаççĕ çыр хĕрне.

Вăйăра хитре хĕрсем юрлаççĕ,
Савăнаççĕ ял çамрăкĕсем.
Чĕреме пĕр шелсĕр çунтараççĕ
Чун савнийĕн хăмăр куçĕсем.

Каçсерен санпа эп тĕлпулатăп
Яланах çак çĕмĕрт айĕнче.
Пĕр сана кăна чунтан саватăп,
Чи пахи эс маншăн çĕр çинче.

Савни пек илемлĕ çут тĕнчемĕр,
Уйрăмах хитре вăл çуркунне.
Кăмăла çĕклерĕ çепĕç çемĕ,
Çĕрĕпех вăл юхрĕ инçене.

*Сăввине - 1981-мĕш çулхи май уйăхĕнче,*
*кĕввине 1993-мĕш çулхи çуркунне çырнă.*

*(Нота тĕпĕр енче)*

**Кĕвĕ авторĕ – Михаил Николаев – Канаш хулинчи РДК хормейстерĕ. Чăваш радиопа телевидени хорĕ ку юрра хăйĕн репертуарне кĕртнĕ.*



*Канаш районĕнче сăвă-юрă ăстисем сахал мар. Вĕсенчен пĕри - Надежда Ивановна Заводскова. Вăл Яманкасси ялĕнче 1958-мĕш çулта çуралса ӳснĕ, хăйĕн çемйипе Шупашкарта пурăнать. Професси енĕпе - штукатур-маляр. Ку ăна сцена çине тухма пĕрре те чăрмантармасть. Пачах та урăхла: хитре сăн-сăпатлă, илемлĕ те уçă саслă, ырă кăмăллă та маттур хĕрарăма пурте хисеплеççĕ, ăна яланах курасшăн тата унăн килĕшӳллĕ юррисене итлесшĕн çунаççĕ.*

*Калас пулать: вăл сăвăсем те калăплать, вĕсем тăрăх кĕввисене те çырать, пултăрулăхне сцена çинче те кăтартать. Унăн çамрăклăхпа юрату çинчен хывнă лирикăлла юррисем сахал мар. Вĕсем, паллах, пирĕн чун-чĕресене хускатаççĕ те, хумхантараççĕ те, пурăнма та хавхалантараççĕ тата иртнĕ çулсне аса илтереççĕ.*

## Çĕмĕртсем çеçке çурсан…



# Сирень чечекĕ

*Геннадий Савельев сăвви*
*Владимир Александров кĕвви*

Куç илмесĕр сирене сăнаççĕ
Çеçкене ларсассăн çуркунне.
Кур, пире те ăмсанса пăхаççĕ,
Каçхине тухсассăн ун çумне.

Сиреньпе эпир пайтах киленнĕ
Чун ăшши пек лăпкă каçсенче.
Унăн ырă шăршипе илемĕ
Сан пекех паха çак çĕр çинче.

Хушса юрлама:

Ах, сирень, кăн-кăвак сирень,
Каçсерен пире эс илĕртен.
Сар пикем, пĕр сана савса,
Çак юрра юрлатăп савăнса.

Кăн-кăвак сирень чечекĕ евĕр
Илĕртсе тăратăн эс мана.
Савнă тус, пĕрле пулар-и ĕмĕр,
Тĕлĕкре куратăп пĕр сана.

Çак сирень çеçки пекех илемлĕ
Çеçке çуртăр таса юрату.
Чечеклентĕр, пултăр вăл телейлĕ,
Пирĕн пурнăç савăк та тату.

Хушса юрлама:

Ах, сирень, кăн-кăвак сирень,
Каçсерен пире эс илĕртен.
Сар пикем, пĕр сана савса,
Çак юрра юрлатăп савăнса.

*1994-мĕш çул, май.* *(Нота тĕпĕр енче)*

**Владимир Михайлович Александров (1949) - Муркаш районĕнчи Оринино халăх хорĕн хормейстерĕ, нумай юрă-кĕвĕ авторĕ. Юрă радиоэфира 1995-мĕш çулта тухрĕ, ăна радиора ĕçлекен Людмила Кудряшова юрларĕ.*

# Сирень чечекӗ

*Геннадий Савельев сӑвви*
*Владимир Александров кӗвви*



## Аса илетĕп

*Сăввипе кĕввине те*
*Геннадий Савельев çырнă*

Çăлтăрсем çĕрĕпех ялкăшатчĕç
Ирхи шуçăм хĕрелсе тухиччен.
Саншăн çеç çамрăк чунăм çунатчĕ,
Лăпланмастчĕ çывăрса кайиччен.

Юрату хăватне эп ăнланнă,
Чăнласах-çке килĕштернĕ сана.
Çут сăну, йăл-куллу тыткăнланă,
Тĕппипех çав парăнтарнă мана.

Каçсерен юнашар эпир ларнă
Симĕс чăрăш çумĕнчи сак çинче.
Чунсене чуп туса савăнтарнă,
Мĕнле ырă пурăнма çĕр çинче!

Çĕмĕртпе сирень те шăршă сарнă,
Чечекре, ав, пахчари улмуççи.
Пирĕн юрату та çунатланнă,
Çĕклентернĕ кăмăла чун уççи.

Пĕр-пĕрне юратса сăмах панă:
Малашлăхра – çемье çавăрасси.
Ăна эпĕ çавтериех шаннă:
Çирĕп шухăш – савса пурнасси.

Ăраскал вара пĕрлĕх кӳмерĕ,
Ик еннелле пайларĕ çулсене.
Палăртни те пурнăça кĕмерĕ,
Аса илетĕп иртнĕ çулсене.

*12.02.2008*

*(Нота тĕпĕр енче)*

**Çак юрăпа эпĕ, 2008-мĕш çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче, Етĕрне районĕнчи Мăн Явăшра иртнерне юрăпа спорт уявĕнче сцена çине тухрăм.*

## Аса илетĕп

*Сăввипе кĕввине те*
*Геннадий Савельев çырнă*



## Шанчăк

*Геннадий Савельев сăвви*
*Георгий Петров (Пайăр) кĕвви*

Çуркунне хулара куртăм
Килĕшӳллĕ сар хĕре.
Чунăмра халь вĕри туйăм,
Çĕкленсе тапать чĕре.

Хушса юрлама:

Эх, пике – кĕрен чечек,
Маншăн эс сирень пекех.
Ĕмĕрех пĕрле пулар,
Пурнăç çулĕпе утар.

Эсĕ ăслă, тавçăруллă,
Илĕртӳллĕ те хитре.
Пур ĕçре те пултаруллă,
Ăшă кулă – сăн-питре.

Хушса юрлама:

Эх, пике – кĕрен чечек,
Маншăн эс сирень пекех.
Ĕмĕрех пĕрле пулар,
Пурнăç çулĕпе утар.

Кунсерен кӳретĕн шанчăк,
Манас çук эпĕ сана.
Чунтанах юрлать пек шăпчăк
Ыр сунса пире кăна.

Хушса юрлама:

Эх, пике – кĕрен чечек,
Маншăн эс сирень пекех.
Ĕмĕрех пĕрле пулар,
Пурнăç çулĕпе утар.

*31.01.2009* *(Нота тĕпĕр енче)*

**Кĕвĕ авторĕ Петров Георгий Петрович вăрçă хыççăн, 1945-мĕш çулхи июльте, Вăрнар районĕнчи Пайăк ялĕнче çуралса ӳснĕ, музыка училищинче вĕреннĕ. Ялта пурăнакан баянист çак юрра 2010-мĕш çулхи октябрь вĕçĕнче кĕвĕленĕ.*

# Шанчăк

*Геннадий Савельев сăвви*
*Георгий Петров (Пайăр) кĕвви*



# ИКĔ КАЛАВ



*Ӳпке чирне пула, Горький хулинчи педиатри институтĕнче, иккĕмĕш операцире, вунçиччĕрех, çут тĕнчепе сывпуллашнă, Шупашкарти медучилище студенткине, юратнă Нина Александровна Савельева (1951-1968) йăмăкăма халаллатăп.*

*Автор*

## Çулçӳрев

Çĕнĕ çулпа пĕрлех шкул ачисен каникулĕсем те çывхарса çитрĕç. Эх, савăнăç! Кашни кунах ял варринчи çырмара çунашкапа е йĕлтĕрпе ярăн та ярăн. Миша та йĕлтĕрпе çӳреме юратать. Пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ чухнех ăна ашшĕ çăматăпа сырмалли йĕлтĕр илсе панăччĕ. Мĕн чухлĕ ярăннă-ши вăл унпа виçĕ çул хушшинче: вăрманта та, çырмара та, физкультура урокĕсенчи ăмăртусенче те хашка-хашка чупнă. Çӳллĕ тăвайккисенчен ярăнса аннă чухне асăрхануллă пулма тăрăшнă. Мĕншĕн тесен, ӳксен е ăçта та пулин тăрăнсан, ал-ура та хуçăлать, йĕлтĕр те юрăхсăра тухать. Çапла майĕпенех хăнăхса çитрĕ вăл йĕлтĕрпе çӳреме.

Кăçал Миша ялти шкулăн саккăрмĕш класĕнче юлашки çул ăс пухать. Унтан ăçта каймалла-ха? Кун çинчен вăл тахçанах шутласа хунă ĕнтĕ. Пĕр иккĕленмесĕрех, комсомолец, киномеханик пулма çирĕп тĕллев лартнă. Темшĕн-çке ăна çав професси нимрен те ытла килĕшнĕ, те хăй мĕн пĕчĕкренех кинофильмсем курма юратнăран-ши? Ку ыйтупа вăл ялти Вася киномеханикпа та час-часах интересленсе калаçнă.

Çуллахи каникул кунĕсене те усăсăр ирттерсе ямарĕ шкул ачи: тантăшĕсемпе пĕр танах "Заря" колхозăн уй-хирĕсенче тар кăларса ĕçлерĕ, çамрăк хул-çурăма хĕвелпе пиçĕхтерсе пĕве шывĕпе чӳхенчĕ, каçсерен ялти клубра илемлĕ кинокартинăсем курса савăнчĕ.

Сисĕнмесĕрех иртсе пычĕç çуллахи кунсем. Чылай тĕрекленчĕ вăл çак хушăра, сасси те хулăнланчĕ. Ачаран яшлăха куçас тапхăрăн малтанхи паллисене хăй те лайăхах сисрĕ. Иртнĕ çулсенче ăна, хăюсăр та йăваш пулнăран, хăшпĕр куштан ачасем сăлтавсăрах кӳрентерме те хăраман. Кăçал вара Миша пуçтахсене алхасма ирĕк памарĕ, çавăнпа та вĕсем ун умĕнче шикленерех çӳреме пуçларĕç...

...Умра – икĕ эрнене тăсăлакан хĕллехи каникул кунĕсем. Кама кăна илĕртмеççĕ-ши вĕсем: хуларисене те, ялтисене те. Шкул-интернатсенче вĕренекенсем те тăван тăрăхах канма килесшĕн, çавăнпа та хăйсене илме пыма чĕнсе, ашшĕ-амăшĕсем патне, çырусем те янă. Мишăн та, хăйĕнчен пĕр çул кĕçĕнрех, Маша йăмăкĕ пур. Пĕчĕклех, хĕрлĕхен шатрине пула, ӳпки аманса юлнă май, ăна, пĕрремĕш класранах, Саланчăкри санатори шкул-интернатне вырнаçтарнăччĕ. Унта – виççĕ, Çĕмĕрлери интернатра тата тепĕр виçĕ çул вĕренсе сипленнĕ хĕрачана Каршлăхри санатори шкул-интернатне куçараççĕ. Шăпах çакăнтан илсе килмелле те ĕнтĕ ăна кăçал. Анчах, кам каfive-ши инçе çула? Каламасăрах паллă – ашшĕ. Унччен те вăлах Саланчăкпа Çĕмĕрле шкул-интерначĕсене кайса çӳренĕ вĕт-ха. Миша та ашшĕнчен юлман, пĕрре мар пулнă асăннă вырăнсенче. Хальхинче те унăн йăмăкĕ патне кайса курас шухăш пуçран тухмарĕ.

– Атте, эпĕ кăçал хамăр ялти шкултан вĕренсе тухатăп. Малалла вĕренме каяс пулсассăн, манăн хама тĕллĕнех инçе çулсенче çӳреме хăнăхмалла. Çавăнпа та Маша патне те пĕчченех кайса килес пулĕ. Мана эсĕ çул çине мĕнле çӳремеллине каласа ăнлантар тата пĕчĕк чертеж туса пар кăна, – терĕ вăл ашшĕне.

– Хăвна хăв шанатăн тата хăрамастăн пулсан, юрĕ эппин, кайса кил. Анчах асăрхануллă пул, çухалса ан кай. Советскинчен Шупашкара каякан кăнтăрлахи автобус çине ĕлкĕрме тăрăш. Тепĕр сехетренех вăл сана Москакасси çул тăваткалне илсе çитерет. Çавăнта анса юлатăн та, çурçĕрелле тăсăлакан асфальтлă çулпа Ильинка еннелле утатăн. Виç-тăват çухрăм кайсан, çулăн сылтăм хĕрринче ларакан ял витĕр тухмалла. Унтан – умра пысăк вăрман, ун варринче шăпах санатори шкул-интерначĕн çурчĕсем курăнаççĕ. Эп калана пек çӳресен, эсĕ палăртнă вырăна тĕттĕмлениччен çитетĕнех, – терĕ те ашшĕ, ывăлне чертежпа паллашма сĕнчĕ.

Тепӗр кунне Миша ирех тӑчӗ. Ҫӑвӑнса тумланчӗ те апат ҫирӗ, ҫула кайма хатӗрленчӗ.

– Ну, ывӑлӑм, телейлӗ ҫул пултӑрах, лайӑх кайса килӗр. Ҫул ҫинче яланах спичка та кирлӗ пулать, акӑ, чик ӑна кӗсйӳне, укҫуна перекетлӗ тыткала, – пиллесе те ыр сунса ӑсатрӗҫ Мишӑна, ашшӗпе амӑшӗ тата мӑнаккӑшӗ, инҫе ҫула.

Хӗллехи кунсем часах ҫутӑлмаҫҫӗ тата питӗ кӗске. Ҫавӑнпа та вунпиллӗкри шкул ачи сакӑр сехет тӗлне кӑна йӗлтӗр ҫине тӑчӗ, ял витӗр майӗпен шуса тухса, уйсем урлӑ, тӳреммӗн, Советски еннелле ыткӑнчӗ. Чӑнах та, кӑнтӑрлаччен вӑл, сакӑр ҫул каярах, район центрӗ пулнӑ вунпилӗк ҫухрӑмри яла йӗркеллех ҫитрӗ. Паллах, кӑштах ывӑнчӗ те, ҫурӑмӗ те тарласа йӗпенчӗ. Ку ялта иртнӗ ҫуркунне пулса курнӑ-ха Миша, пӗччен мар – класӗпех килнӗччӗ ун чухне вӗсем кунта. Коммунистсен партийӗпе Совет правительствин, халӑх интересӗсене тӗпе хурса, мирпе туслӑхшӑн тытса пыракан шалти тата тулашри политикине тӗрӗс ӑнланса ырлакан ҫиччӗмӗш класс ачисене, кунти вӑтам шкулӑн пионерсен пӳлӗмӗнче, комсомол ретне илнине лайӑх астуса юлнӑ вӑл. Ҫав шкулта истори урокӗсене ирттерекен Геннадий Артемьев учитель суккӑр пулин те пурнӑҫа, Тӑван ҫӗршыва чунтан юратни, унӑн пуян историне ҫамрӑк ӑрӑва тӗрӗс ӑнлантарса пама пултарни тата комсомола кӗрекенсене Ленин кӑтартнӑ парти ҫулӗпе ҫӗнӗ ӳсӗмсемпе хӑюллӑн малалла утма чӗнсе калани те яланах аса килет-ҫке тата. Асаилӳсемпех ҫитсе кӗчӗ вӑл йывӑҫ пӗренесенчен купаласа тунӑ икӗ хутлӑ вӑтам шкул ҫуртне. Кунта ҫулсеренех таврари ялсенчен ачасем йышлӑн вӗренме ҫӳреҫҫӗ. Инҫе пулин те, вӗсен ялӗнчен вӗренме килнисем те пур, эрнере пӗрре ҫеҫ яла пырса каяҫҫӗ, ытти кунсенче шкулти интернатрах пурӑнаҫҫӗ. Ҫакӑнта хӑварма шутларӗ те вӑл хӑйӗн йӗлтӗрне. Кӗҫех ачасем урокран тухрӗҫ, вӗсем хушшинче Мишӑран икӗ ҫул аслӑрах Санька та курӑнса кайрӗ.

– Халӗ эпӗ кӗҫех автобус ҫине ларатӑп та Каршлӑхри санатори шкул-интернатне тухса каятӑп. Манӑн унта вӗренекен йӑмӑкӑма каникула илсе килмелле. Эсӗ ҫак йӗлтӗрсене илсе юлха, яла кайнӑ чух ярӑнса кайма та юрать, хӑвӑн ирӗк, – тесе Миша юлташӗпе васкавлӑн сывпуллашрӗ.



*Муркаш районне кӗрекен Каршлӑхри ача-пӑча санаторийӗн шкул-интернатӗнче сипленсе вӗренекенсем (аялти тата ҫӳлти ӳкерчӗксем). 1964-мӗш ҫулхи июль уйӑхӗ.*



Ҫав кун, тем сӑлтава пула, кӑнтӑрлахи автобус пулмарӗ. Вара инҫетри ял ачи столовӑйне кӗрсе апат ҫикелерӗ та урамра уҫӑлса ҫӳрерӗ. Юрать-ха ҫанталӑкӗ сивӗ мар, атту таҫта кӗрсе ӑшӑнмаллаха, автовокзал е станци ҫурчӗ ҫук. Билетсене вара почтӑра сутаҫҫӗ, хӑшӗсем, авӑ, ҫавӑнтах вырӑн тупса вырнаҫнӑ. Кӗтекен ҫынна пилӗк минут та тем тӑршшех туйӑнать те, вӗсем вара ҫав кун виҫӗ сехет иртсен тин автобуса кӗтсе илчӗҫ. Миша шофера хӑй ӑҫта ҫити кайни ҫинчен каласа пачӗ тата палӑртнӑ вырӑна антарса хӑварма ыйтрӗ. Каҫ та пулчӗ, тавралӑх тӗттӗмленчӗ. Автобус, асфальтлӑ ҫула фарӑсемпе ҫутатса, малаллах ыткӑнать. Умра – ҫул тӑваткалӗ, халӑх тӑмалли будка. Ҫакӑнта ҫитсе чарӑнчӗ те автобус. Миша шофера тав туса тула тухрӗ, ӑна хирӗҫ тепӗр виҫ-тӑват ҫын автобуса кӗрсе ларчӗҫ.

Ҫӳресе курман вырӑнта каҫпа мар, кӑнтӑрла та хӑвна хӑюллах тытаймастӑн. Ҫитменнине тата ку ял та мар пулас, пӗр ҫурт та курӑнмасть. Юрать-ха ҫул айккинчи юпасем ҫинче темиҫе электричество фонарӗ тавралӑха ҫутатса тӑраҫҫӗ. Ҫул ҫинче утакан ҫынсенчен хӑй тӗрӗс ҫулпа пынине тепӗр хут ыйтса пӗлсе чунне лӑплантарчӗ. Ҫул тӑваткалӗнчи юпа ҫинче вырнаҫтарнӑ громкоговорительтен "На безымянной высоте" юрӑ таҫта ҫитиех саланать. Юрӑ вӗҫленчӗ те, хыҫҫӑнах "Тишина" юрӑ шӑранса тухрӗ. Чӑнах та, юрӑри пекех, каҫхи ҫанталӑк лӑпкӑн тӗлӗрет, тавралӑхра шӑп, хутран-ситрен ҫеҫ аслӑ ҫул тӑрӑх автомашинӑсем кӗрлесе иртсе каяҫҫӗ. Миша вара утать те утать. Акӑ, ҫулӑн сылтӑм енче пӗр пысӑках мар ялӑн ҫутисем курӑнма пуҫларӗҫ те ӗнтӗ. Шӑп ҫак ял витӗр тухмалла та, тепӗр ҫухрӑм пек утсан, ҫырма хӗррипе вӑрман пуҫланать. Ҫав вӑрмана пӗр икҫӗр метр пек кӗрсен, ачасен санатори ҫурчӗсем вырнаҫнӑ та. Анчах, мӗнле ҫитмелле-ши халӗ унта? Кӑнтӑрла пулсан, ялтан тӑсӑлакан юр ҫинчи ҫуна ҫулӗ тӑрӑх, кирек кам та ҫав вырӑна ҫитсе кӗретех. Каҫ тӗттӗмлӗхӗ вара пӗрремӗш хут пӗлмен ҫулпа ҫӳрекен ҫынна, ялтан тухсанах, сукмакран сулахаялла пӑрса ячӗ. Вӑрманӗ курӑнать-ха, ҫулӗ вара ӑҫта-ши? Тата шкул-интернат ҫутисем те темшӗн курӑнмаҫҫӗ. Вӗсем пулсанах Миша уй урлӑ ҫулсӑрах тӳррӗн утӑччӗ те... Халӗ те утать-ха вӑл хытнӑ юр тӑрӑх, анчах ӑҫталла – хӑй те пӗлмест. Ҫаплипех ҫыран хӗррине ҫитсе тӑчӗ вӑл. Вӑрманӗ те инҫех мар ӗнтӗ, ҫырма урлӑ ҫеҫ, вӑл кашлани лайӑхах илтӗнет. Арҫын ача шиклене пуҫларӗ, ҫине-ҫинех тӳпере ҫунакан



*Каршлӑхри ача-пӑча санаторийӗн шкул-интернатӗнче вӗренекенсем (сулахайран): Зоя Прохорова, Нина Савельева тата Григорьева. 1964-мӗш ҫулхи июль уйӑхӗ.*

çăлтăрсем тата хыçа юлнă ял çутисем çине хурлăхлăн пăхса тăчĕ. Мĕншĕн тĕплĕнрех ыйтса пĕлмерĕ-ши вăл ялтан тухиччен? Тен, кам та пулин ăна çулне те кăтартса янă пулĕччĕ? Эх! Хăвна ытлашши шанни тата калаçма ӳркенни акă мĕн патне илсе çитерчĕ те. Мĕн тумалла ĕнтĕ халĕ? Çак шухăшсемпе асапланса тăнă вăхăтра ялтан темĕнле çутă шуса тухни курăнса кайрĕ. Майĕпен, унран чылай çӳлте тата урăх вырăнпа, мĕлтлетсе пырать çав çутă вăрман еннелле. Миша куçса пыракан çутă çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те кусем интерната каякан çынсем пулнине туйса илчĕ, савăннипе кăшкăрса ячĕ.

– Эй, ан кайăр-ха, эпĕ те сирĕнпе пыратăп! Çутă пĕр вырăнта чарăнсан, вăл çине-çинех спичка çутса сигнал пачĕ. Лешсем те ăна асăрхарĕç пулас, хăйсен çутипе сулкаласа кĕтсе тăчĕç. Çухалса кайнă арçын ача чарăнмасăрах тăвалла чупрĕ. Хĕрĕх çулсенчен иртнĕ икĕ чăваш хĕрарăмĕ, хăйсем патне хашкаса чупса çитнĕ çынна паллас тесе, краççын хунарне çывăхарах тытса пăхрĕç. Кусем – интернатра ĕçлекен каçхи дежурнăйсем пулнă иккен. Мишăна вĕсем хăй тĕллĕнех инçе çула тухма хăраманшăн мухтарĕç те, çухалса кайнăшăн шеллерĕç те, пысăк инкекрен çăлăннăшăн унпа пĕрлех савăнчĕç те. Шăкăлтатса калаçса пычĕç вĕсем çул тăршшĕпех. Часах интернат çутисем те курăнса кайрĕç. Тинех кăмăлĕ тулчĕ Мишăн; ывăнни те, хăрани те таçта тарса çухалчĕç. Хĕрарăмсене вăл тепĕр хут ăшшăн тав турĕ, лешсем ăна кунта кăштах канса пурăнма, хыççăн киле лайăх çитме ырă сунчĕç.

...Санаторинче сипленсе вĕренекенсен çывăрма вăхăт çитмен-ха, пурте каçхи апата кайнă, хăшĕсем урамра уçăлса çӳреççĕ. Акă, Миша умнелле икĕ хĕрача çывхарса çитрĕç.

– Хĕрсем, итлĕр-ха, ăçта тупма пулать-ши Маща Соловьевăна? – çепĕççĕн ыйтрĕ вăл вĕсенчен. – Калăр – эпĕ унăн пиччĕшĕ.

– Юрать. Часах тупса килетпĕр, эсĕ çакăнтах пул, – терĕç те, хĕрачасем хăвăрт кайса çухалчĕç.

Чăнах та, нумай кĕттермерĕç ăна. Йăмăкĕ хăй патнелле чупсах килнине курсан, вăл татах та ытларах савăнчĕ, ăна хирĕç малалла утрĕ.

– Ой, Миша, сывлăх сунатăп! Мĕнле çитрĕнех? Хырăму та выçрĕ пулĕ? Айта столовăйне кайса апат çитеретĕп, – çине-çине ыйтуллă сăмахсемпе, чарăнма пĕлмесĕр, калаçрĕ Маша, килтисем çинчен интересленчĕ.

Вĕсем васкамасăр столовăйнелле утрĕç. Миша йăмăкне хĕллехи каникула илсе кайма килни, çул çинче çухалса çӳрени тата унăн пурнăçне шкул-интерната килме тухнă хĕрарăмсем çăлни çинчен кĕскен каласа пачĕ. Маша пиччĕшĕн сăмахĕсене итленĕçемĕн çӳçенсе те илчĕ. Ара, вăрман çывăхĕнче хăрамалли сахал-им, кашкăр çăварне те лекме пулать вĕт-ха.

– Миша, ыран каçхине пирĕн клубра ачасен çĕнĕ çул умĕнхи савăнăçлă юрри-ташшисем пулаççĕ, эпир те кайса курăпăр унта. Каникулсем хыççăн вара манăн кунта мар, Шупашкарти Атăл леш енче вырнаçнă шкул-интернатра вĕренме тивет. Кун пирки директор кирлĕ хутсем хатĕрленĕ те ĕнтĕ, – пĕлтерчĕ вăл пиччĕшне, столовăйне кĕрес умĕн.

Каçхи апат вăхăчĕ вĕçленсе пырать ĕнтĕ, столовăйра ачасем нумай та мар. Тутлă апат шăрши кăмăла çĕклет, çиме илĕртет. Сĕтел çине илсе лартнă апат-çимĕçе Миша килте курсах кайманран-ши, е хырăмĕ хытах выçнăран-ши, вăл ăна хăвăрт çисе ячĕ. Поварсене сĕтеклĕ апатпа хăналанăшăн тав туса, иккĕшĕ те урама тухрĕç, кăштах уçăлса тăчĕç. Унтан Маща пиччĕшне, ашшĕ-амăшĕсем килсен, выртса-тăма хатĕрленĕ çурта илсе кайрĕ. Икĕ пӳлĕмлĕ йывăç çуртра кăмака пур, ăна Миша пек ялтан килнисм хутса ăшăтнă та урайне вырăнсем сарса выртнă. Вăл та хывăнчĕ, çăматтине кăмака умне типме лартрĕ те вĕсем çумне кĕрсе выртрĕ. Ялтан килнисем пĕр-пĕринпе паллашрĕç, калаçкаласа выртрĕç, лăпкăн ыйха путрĕç.

Тепĕр кунне ялтан килнисем пĕр вăхăтрах вăранчĕç, çăвăнчĕç, тумланчĕç. Паян вĕсем пурте ачисемпе яла каяççĕ, Миша кăна кунта юлать. Акă, унăн йăмăкĕ те çитрĕ, пурне те пĕрле столовăйне пыма чĕнчĕ. Ирхи апат хыççăн вĕсем йăмăкĕпе интернат территоринче уçăлса, курса çӳрерĕç. Хыр-чăрăш вăрманĕ варрине вырнаçнă санатори ăна питĕ килĕшрĕ. Ачасене вĕренме, сипленме, пурăнма майсем çителĕклех. Вĕренӳпе сипленӳ тата çывăрмалли корпуссем, клубпа медпункт, столовăйпа мунча тата ытти кирлĕ объектсем – пĕр вырăнтах. Унтан иккĕшĕ те клуба кĕчĕç, вĕсем хыççăнах тĕрлĕ классенче вĕренекен пионерсеме комсомолецсем чупса çитрĕç. Кунта, паллах, пушă вăхăта усăллă ирттерме, лайăх канма пухăнаççĕ. Миша та вĕсемпе, тахçанхи çывăх юлташсем пекех, хăвăрт хутшăнса выляма пуçларĕ. Ушкăнсем, пĕр-пĕринпе ылмашăнса, доминопа

шашка-шахмат тата лото вăййисенче ăмăртрĕç, купăс сассине те итлесе пăхрĕç. Сисĕнмесĕрех çапла кунĕ те иртсе кайрĕ. Каçхине вара зал варринчи елка, тĕрлĕ тĕслĕ çутăсемпе, пурне те хăй патне илĕртрĕ. Чылайччен шавларĕç çав каç çĕнĕ пурнăç калчисем. Чăрăш тавра çаврăнса "Краковьяк", "Полька", "Серпиянка", Яблочка" ташшисене кăтартрĕç, тĕрлĕ халăх юррисене шăрантарчĕç, сăвăсем каларĕç, вăйăсем вылярĕç. Хĕл мучипе Юр пике вĕренӳре тата обществăлла ĕçсенче пултаруллă ачасене парнесемпе кучченеç валеçрĕç. Ачасем выляса-кулнине сăнаса тăма питех те савăк, çав вăхăтрах аслисен те вĕсемпе юнашар пулас килет. Акă, çамрăк воспитательсем, учительсем, поварсем, ачасен кăмăлĕсене çĕклентерес тесе, чăрăш тавра çаврăнса илчĕç. Миша та çав каç аякра пăхса тăмарĕ, йăмăкĕпе ал тытса ыванниччен ташларĕ. Унтан çывăрмалли пӳлĕме таврăнчĕ те, тулли кăмăлпа, кравать çине выртса, тĕлĕрсе кайрĕ.

Тул çутăлсан вырăн çинче йăваланса выртмарĕ; сиксе тăчĕ те çăвăнса тумланчĕ, радиопа паракан чăваш юррисене итлесе ларчĕ, йăмăкĕ килессе кĕтрĕ. Кĕçех алăк сасси илтĕнчĕ те пӳлĕме Маша кĕрсе тăчĕ.

– Паян киле каясси пулмасть. Ыран директор ирех ĕçе тухать, мана кирлĕ документсене парса ярать. Урăх нихăçан та кунта килесси пулас çук, çавăнпа та пурăн пĕрре килнĕ чух. Халĕ апат çиме каятпăр, – терĕ вăл пиччĕшне.

Санаторинчи иккĕмĕш кун та сисĕнмесĕрех иртсе пычĕ. Кăнтăрлахи апат хыççăнах клубра "Каникулы", каçхине вара "Прощайте, голуби" ятлă илемлĕ кинофильмсем кăтартрĕç.

Виççĕмĕш кунне те Миша патне йăмăкĕ ирех çитрĕ, апатланнă хыççăн тӳрех директор пӳлĕмневаскарĕ. Кирлĕ документсене алла илсен, Маша, кунти педагогсемпе, тухтăрсемпе, пĕрле вĕреннĕ юлташсемпе ăшшăн сывпуллашрĕ те, пиччĕшĕпе пĕрле, санатори çурчĕсем çине çаврăна-çаврăна пăхса, вăрман витĕр малалла утрĕ.

Шупашкартан Етĕрне хулине каякан аслă çул çине тухма, кунтан – тăвата çухрăм. Çул тăваткалне утса тухсанах, вĕсем автобус çине ларма ĕмĕтленчĕç, анчах та халăхпа тулнă автобуссем, пĕрин хыççăн тепри, чарăнмасăрах ирте-ирте кайрĕç. Мĕн тумалла-ха? Кĕтсе тăрсан та усси пулас çук тесе, пĕртăвансем асфальт тăрăх Юнга пуçĕ еннелле утрĕç. Утмалăх пур иккен унта çити – çичĕ çухрăм. Çӳллех мар, анчах та сарлака та патвар кĕлеткеллĕ Мишăна çак çул

тăршшĕ ытлашши сисĕнсех каймарĕ, анчах та Машăна ку вăл хытах ывăнтарчĕ. Ӳпке чирĕ ăна ирĕккĕн сывлама кансĕрлерĕ, çавна май, хушăран-хушă ӳсĕркелесе сурса, пиччĕшĕнчен каярах юлса пычĕ. Ку ял пуçĕнче те вĕсем автобус çине лараймарĕç, çавăнпа та Советскине пăрăнакан çул юппине çити тата тепĕр çухрăм утса пăхма шутларĕç. Каç та пулса киле пуçларĕ ĕнтĕ. Кусем вара Юнга юханшывĕ урлă хывнă кĕпертен тăвайккинелле хăпарчĕç çеç, пĕр автобус вăштлатса иртсе те кайрĕ. Çул юппине çитсен вăл чарăнчĕ. Автобусран çынсем аннă тата унта ларма хатĕрленнĕ хушăра Миша аллисене сулса, кăшкăрса чупрĕ. Çакна çынсем асăрхарĕç пулас, автобус часах тапранмарĕ. Хашка-хашка чупса çитсен, арçын ача шофера тепĕр виç-тăват минут тăхтама ыйтрĕ, хыçалта йăмăкĕ пурри çинчен пĕлтерчĕ.

Ку автобус Етĕрнене каять иккен. Юрать, унта çитсен те аван, уйра çӳрени мар. Вăл хуларан Урапакасси ялĕнчи тăванĕсем патне те инçех юлмасть, пĕр уй урлă çеç каçмалла. Çак шухăшпа кĕрсе вырнаçрĕç те вĕсем автобуса. Каçхи рейс çинче халăхĕ те сахал, çавăнпах-ши вĕсем шоферăн радиоприемникĕнче шăранакан лирикăлла юрăсене шăппăн çеç итлесе пыраççĕ. Часах автобус хула автостанцине çитсе чарăнчĕ. Ку хулара та пĕр-икĕ хутчен пулнă-ха Миша, çавăнпа та унти урамсем тăрăх мĕнле çӳремеллине лайăх чухлать, ăçта мĕнле магазинсем пуррине те астăвать. Çапах та, хула çыннисенчен вăл, хăйне тепĕр хут тĕрĕслемелле пек, Урапакасси ялне хăш енчен тухса каймаллине ыйтса пĕлчĕ. Тĕрĕсех калаççĕ, вăл йăнăшман. Утнăçемĕн вĕсем ял еннелле çывхарсах пычĕç, анчах та хырса тасатман каçхи çул ачасене хытах ĕшентерчĕ. Кунсăр пуçне кунĕпех çул çинче, кăнтăрлахи апат çимесĕр, утни те çамрăксен вăйхăватне чылай чакарчĕ.

Кĕтмен çĕртен пиччĕшĕпе йăмăкĕ çитсе кĕни Максимовсене тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Инçе çул çинчен килнĕ арăмĕн тăванĕсене упăшки васкасах хывăнма пулăшрĕ, çăматтисене улăштарса тăхăнтартрĕ, тимĕр кăмака хутса ячĕ. Арăмĕ вĕсене валли каçхи апат хатĕрлерĕ, çав хушăрах йăмăкĕн ачисем мĕн ĕçпе çӳрени çинчен пĕлесшĕн пулчĕ. Ара, кирек кам та пĕр-пĕрин пурнăçĕпе интересленетех ĕнтĕ. Миша та мăнаккăшне хăйсем мĕнле пурăнни, хăй ирĕкĕпе çулçӳреве тухни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Мария

мăнаккăшĕ вĕсене çавтери шеллерĕ, тутлă апат çитерчĕ, сĕтпе пыл вĕретсе ĕçтерчĕ. Апатланнă хыççăн вĕсем нумай та лармарĕç, пурте пĕрле çывăрма выртрĕç.

Килтен инçе çулçӳреве тухнăранпа тăваттăмĕш кун çутăлса килчĕ. Паян вĕсен киле çитмеллех. Ашшĕпе амăшĕ, мăнаккăшĕ тата шăллĕсемпе йăмăкĕсем те кĕтсе ывăнчĕç пулĕ. Çулĕ вара çывăх мар, тата çирĕм çухрăм ытларах. Темле пулсан та, хăраса, такама кĕтсе ларма юрамасть, малаллах каймалла. Çак шухăштĕллевпе, ирхи апат хыççăн, сывпуллашрĕç те вĕсем çывăх тăвансемпе. Малтанлăха çурранах пĕр уй урлă утрĕç, унтан çамрăксене Мăн Явăша каякан гусеницăлла трактор хăваласа çитрĕ те тăратсах çуна çине лартрĕ. Шемертенпе Ачак ялĕсем хушшинчи çырмара вĕсем, хăйсене хирĕç лаша çуни çинче, ашшĕпе амăшĕ ларса пынине асăрхарĕç те, трактора чартарас шутпа, ун умнелле юр муклашкисем туса печĕç. Трактор чарăнсанах ачасем лаша çуни çине куçса ларчĕç те пурте пĕрле килелле вĕçтерчĕç. Хăйсене шырама тухнă ашшĕ-амăшне Миша лăпланма ыйтрĕ, çулçӳрев çинчен киле çитичченех каласа пычĕ...

Тепĕр эрнерен шкул ачисен хĕллехи каникул кунĕсем те вĕçленчĕç. Хальхинче Машăна Шупашкарти интерната вырнаçтарса хăварма Миша мар, ашшĕ тухса кайрĕ.

*1964-1965-мĕш çулсем.*




*Шупашкарти Атӑл юханшывӗн леш енче вырнаҫнӑ шкул-интернатран (8-мӗш класс) 1966-мӗш ҫулта вӗренсе тухакан комсомолецсем.*



*Шупашкарти медучилищӗн 2-мӗш курсӗ хыҫҫӑн ӳкерӗннӗ студентка-акушеркӑсем. 1968-мӗш ҫулхи апрель уйӑхӗ.*

## Юратнă-ши вăл ăна?

Советскине ирхи автобус килсе чарăнчĕ. Хуларан килекенсемпе пĕрле автобусран Георгий те анчĕ. Унăн кунтан вунпилĕк çухрăмра вырнаçнă Выла тăрăхĕнчи çуралнă ялне çитмелле. Вăл столовăйне кĕрсе апат çирĕ те çула тухрĕ. Вĕсен енне машинăсем тавра çулпа çӳреççĕ, çавăнпа та каччă, вăрăм çула кĕскетсе, сукмак тăрăх утрĕ.

Хулари профессипе техника училищинче пĕр çул вĕреннĕ хыççăн, çуллахи каникула таврăнать ял çамрăкĕ. Унăн хăвăртрах киле çитес килчĕ, çавна май утăма хăвăртлатса пычĕ. Тӳпери хĕвел кăнтăрла тĕлне тата хытăрах пĕçертме пуçларĕ. Таврара – пиçсе çитме пуçланă ырашăн тутлă шăрши… Пăчă. Çурăм хыçĕнчи кутамккара ытлашши темĕн çук пулин те, каччăна вăл самаях ĕшĕнтерчĕ.

Кăнтăрла иртсен курсант яла çитрĕ. Анкарти хыçĕнчи сукмакпа, сад витĕр, килхушшине кĕчĕ. Ашшĕ, вутă-шанкăпа аппланакансккер, ывăлне курсан ĕç пăрахсах сывлăх сунчĕ те, пĕрле пӳрте кĕчĕ. Амăшĕ тата шăллĕсемпе йăмăкĕсем килте çук, колхоза ĕçе кайнă. Ашшĕпе калаçкаласа ларнă хыççăн кăштах канма шутларĕ. Çенĕке тухрĕ те чăлана кĕрсе вырăн сарчĕ. Çул çинчен ывăнса килнĕскер, выртнă-выртманах, çемçе тӳшек çинче çывăрса кайрĕ.

Каç та пулчĕ, Георгий çаплах вăранмарĕ-ха. Амăшĕ, ĕçрен таврăнса каçхи апат хатĕрленĕ хыççăн, тутлăн çывăракан ывăлне пырса вăратрĕ. Вăл вара, анаслакаласа, амăшĕ хыççăн пӳрте кĕчĕ. Çемье каçхи апата ларнă ĕнтĕ. Аслă ывăлĕ те, пурне те сывлăх сунса, сĕтел хушшине вырнаçрĕ. Апатланнă хыççăн килтисем çывăрма выртрĕç. Унăн вара ыйхă килмерĕ. Вăл, çине çӳхе пиншак уртса, урама уçăлма тухрĕ.

Каçхи шăплăхра вăйя тухнă çамрăксен илемлĕ те уçă сассисем таçта çитиех саланаççĕ. Çамрăксем, хĕрӳ ĕç хыççăн, каççерен ял варринчи çырма хĕрне пухăнаççĕ: юрлаççĕ, ташлаççĕ, тĕрлĕ вăйăсем выляççĕ. Каччăн чунĕ тӳсеймерĕ, вăйă картине туртăнчĕ. Алă парса

сывлăх суннă хыççăн, Георгий ачаран пĕрле ӳснĕ тантăшĕпе юнашар кайса ларчĕ. Нумайччен калаçрĕç вĕсем, иртнине аса илчĕç. Ялта пурăнакан юлташĕ ăна Катя ятлă çамрăк та хитре хĕрпе паллаштарчĕ. Катя пĕр ял хĕрех иккен, анчах мĕн пĕчĕкрен аякра ӳснĕ май, ăна тӳрех палласа илме те йывăр. Калаçкаласа тăнă хыççăн иккĕшĕ те пĕрне-пĕри килĕштерчĕç. Çамрăксем килĕсене саланма пуçласан, каччă хĕре ăсатса яма пулчĕ, лешĕ хирĕçлемерĕ. Ку таранччен хĕрупраçпа сăмахласа курманскер, вăтана-вăтана, хĕре алăран çавăтса, унпа юнашар утрĕ. Юратупа тулнă чĕресем хаваслăн тапрĕç, пĕр-пĕрне ытлашши сăмахсемсĕрех ăнланчĕç. Уйрăлас умĕн, малашне туслă çыхăну тытма, калаçса татăлчĕç.

Савăнăçлă кăмăл-туйăмпа таврăнчĕ киле Георгий. Унăн вĕри чун-чĕринче пĕрремĕш юрату туйăмĕсем хĕмленчĕç. Çĕр каçипе те сӳнмерĕç вĕсем. Шухăшпа ăçта кăна çитмерĕ-ши вăл? Пурнăçра ĕмĕтленсе ширанă хĕре тупни хавхалантарчĕ те, çунатлантарчĕ ăна. Тул çутăлас умĕн çеç вăл тутлăн çывăрса кайрĕ.

Кунсем иртрĕç, уйăхсемпе ылмашрĕç вĕсем. Сисĕнмесĕрех çуллахи каникул кунĕсем вĕçленчĕç. Георгий Шупашкара тухса кайрĕ, Катя вара ялти шкулăн аслă класĕнче вĕренме тытăнчĕ. Кун хыççăн часах тĕл пулма май килмерĕ вĕсен, çавăнпа та пĕр-пĕрин патне çырусем çӳретнипех çырлахрĕç. Çакă вара юратăва пушшех хĕрӳллентерчĕ.

Экзаменсене ăнăçлă тытса, ял каччи электромонтажник профессине ала илчĕ. Малтанах хулана ĕçе вырнаçрĕ, унтан çар комиссариачĕ урлă Çĕмĕрлери ДОСААФ шкулĕнче шофера вĕренме пуçларĕ. Вĕренӳ срокĕ виçĕ уйăх çурă кăна пулин те, унăн хăвăртрах, шофĕр правине алла илсе, Катьăпа пĕрле пулас килчĕ. Çак шухăшпа вăл хулари хваттерте кашни каçах асапланса выртрĕ.

Пĕррехинче, шăматкун, Георгий яла таврăнчĕ. Юлташĕсем ăна Катя кӳршĕ ял каччипе çӳреме пуçлани çинчен каласа пачĕç. Ку ăна тĕлĕнтерчĕ те, тарăхтарчĕ те. Унăн çак сăмахсен чăнлăхне юратнă хĕрĕнчен ыйтса пĕлес килчĕ. Каçхине вĕсем вăйăра тĕл пулчĕç те, çамрăксенчен уйрăм, ялăн тӳрĕ те вăрăм урамĕпе, Катьăсен килĕ еннелле утрĕç. Хĕр пĕтĕмпех тĕрĕсне каласа пачĕ, куççульпе йĕрсе каçару ыйтрĕ. Каччă шухăша путрĕ. Вăл çак хĕрпе икĕ çул каярах мĕнле паллашнине, ăна чунтан-чĕререн савса ачашланине, çепĕççĕн

кăна чуп тунă самантсене тепĕр хут аса илчĕ. Хĕре юратнипе, Совет Çарне кайса килсен авланас шухăшĕ те пурччĕ унăн. Çакăн хыççăн вара каччăн çирĕп шухăш-туйăмсем пĕтĕмпех саланса кайрĕç. Хĕре шеллерĕ пулин те, малашне пĕрле пулма кăмăл туртмарĕ. Юратнă хĕрĕнчен уйрăлса кайма питĕ йывăр пулчĕ ăна, чунĕ те хурланчĕ. Çапах та вăл, юратăва упрама пĕлмен хĕре каçармарĕ, пĕтĕм чун-чĕрине хытарса савнийĕпе сывпуллашрĕ.

Часах Георгий вĕренсе тухрĕ, çар службине кайиччен, хулари сĕт-çу заводĕнче, автомашинăпа çӳрерĕ. Çуркунне вара ăна хĕçпăшаллă çарсен ретне илчĕç. Пĕтĕм ялйышпа ăсатрĕç. Ялтан тухса кайнă чухне вăл Катьăсен килĕ умĕпе утса иртрĕ. Пĕрене çинче хурлăхлă ларакан хĕре асăрхарĕ пулин те, чун тарăхăвĕ ăна ун патне туртмарĕ.

Каччăпа хĕр хушшинчи туслăхпа юрату тымарĕсем татăлнă пулин те, салтака юратнă хĕрĕн хитре сăн-сăпачĕ, таса та тулли кĕлетки вĕçĕмех канăçсăрлантарчĕ. Çав шухăшсемпех служба майĕпен иртсе пычĕ, çапах та вăл хĕр патне пĕр çыру та ямарĕ. Çулталăк çурăран кăна кĕске сроклă (20 кун) отпуска киле ячĕç. Паллах, ку шута çул çине панă кунсем те кĕреççĕ. Салтакшăн вĕсем темрен те хаклă, çавăнпа та хăйне уйăрса панă кунсене вăл поездпа çӳресе пĕтермерĕ: çар чаçĕ вырнаçнă хуларанах, самолетпа вĕçсе, икĕ кун хушшинче яла çитрĕ. Амăшĕпе ашшĕ, мăнаккăшĕ, шăллĕсемпе йăмăкĕсем ăшшăн кĕтсе илчĕç ăна. Салтак та савăнăçне пытармарĕ: килтисемшĕн кунсерен тунсăхланипе тата Совет Çарĕн отличникĕ пулнипе ăна командовани, Çĕнĕ çул умĕн, тăван чăваш çĕршывне курма янă та.

Каçхине Георгий ялти клуба çитсе кĕчĕ. Çамрăксем сахал мар иккен. Кунтах, хуларан канма килнисем те пур, вĕсем хушшинче – Катя та. Пурне те сывлăх сунса, çывхарса килекен Çĕнĕ çул ячĕпе саламланă хыççăн, салтак чĕри Катя еннеллех туртăнчĕ. Чылай хушă курманран, вĕсем уйрăлмасăрах калаçса тăчĕç. Катя шкул пĕтернĕ хыççăнах Шупашкарти чăлхапа трикотаж фабрикине ĕçлеме вырнаçни, паллах, япăх мар. Хĕр хăй çинчен тата тем каласшăн пулчĕ, анчах шарламарĕ. Клубран тухсан, килелле утнă май, хĕр кулкаласа илчĕ те:

– Сана çамрăксем ман çинчен мĕн каласа пачĕç-ха? – тесе ыйтрĕ.

– Эпĕ никамран та нимĕн те илтмен, – ответлерĕ каччă.

– Апла пулсан часах илтетĕн, – çаплипех кулчĕ Катя.

Хĕре каччă килне çитиех ăсатса ячĕ пулин те, çав сăмахсен пĕлтерĕшне вăл ниепле те чухлаймарĕ.

Тепĕр кунне Катя ирех хулана тухса кайрĕ. Юлташĕсем каласа панă тăрăх, салтак çакна пĕлчĕ: Катя кӳршĕ каччипех çӳренĕ иккен. Иртнĕ Çĕнĕ çул касĕнче те пĕрле пулнă вĕсем. Кун хыççăн вăл йывăр çын пулса юлнă, анчах та ачине çуратман, кӳршĕ хĕрарăмĕ аборт тума пулăшнă. Кайран леш каччи куçа та курăнман, çӳреме те пăрахнă. Çак ырă мар хыпар ялта сарăлнине хĕр лайăх ăнланнă, анчах та ун çинчен вăл хăйĕн чĕлхипе кама та пулин каласа панă-ши? Чăнлăха çиеле кăларас шутпа каччă, отпускран çар чаçне кайнă чухне, çула май, Катя пурăнакан общежитие кĕчĕ. Анчах та кунта тĕл пулаймарĕ ăна. Хĕре курса калаçаймасăрах, салтак тепĕр ирхине самолетпа Шупашкартан вĕçсе кайрĕ.

Чаçе çитнĕ-çитменех салтак Катя патне тарăн содержаниллĕ çыру çырчĕ. Унта вăл хăй мĕн илтнине тата мĕншĕн ун пек тума пултарнине ăнлантарса пама ыйтрĕ. Çак çыру çине ответ парасса кĕтрĕ пулин те, усси пулмарĕ. Çавăн хыççăн вара вăл хĕр хăйне ялта мĕн каласшăн пулнине тинех ăнланчĕ. Анчах та савнипе курса калаçас шухăш çав-çавах пуçран тухмарĕ.

Салтак служби вĕçленсе пычĕ. Çуллахи пĕр ăшă та лăпкă кун Георгий икĕ çул пĕрле пулнă çывăх юлташĕсемпе, командирсемпе тата вăрман варринче вырнаçнă мотострелковăй полкпа сывпуллашрĕ те хулана каякан автобус çине васкарĕ. Улан-Удэ – Байкал леш енчи авалхи хуласенчен пĕри. Пĕрре çеç мар пулнă кунта салтак, патрульте те çӳренĕ. Халĕ, акă, ăна та юлашки хут курать. Тек нихăçан та вăл кунта урăх таврăнас çук. Чугун çул вокзалĕнче халăх хĕвĕшет кăна, салтаксем те пур. Нумай та вăхăт иртмерĕ, Владивостокран Мускава каякан поезд тапранчĕ. Касса умĕнче халăх нумай тăнă май, билет илме ĕлкĕреймерĕ Георгий, вокзалран чупса тухса вагона кĕме васкарĕ. Проводница ăнланчĕ, вырăн та тупса пачĕ. Свердловск хулине çитсен салтак анса юлчĕ те Шупашкара самолетпа вĕçрĕ.

Тăван чăваш çĕршывĕн тĕп хули салтак кăмăлне çĕклерĕ. Çитнĕ кунах вăл тăванĕсем патне кĕчĕ, инçе çул çинчен килнĕскер, хула мунчине кайса тасалчĕ. Тепĕр кунне вара хулари пĕр заводра ĕçлекен Петĕр юлташĕ патĕнче пулчĕ, унпа пĕрлех Катя пурăнакан

общежитие кĕчĕ. Хĕрсем пурăнакан пӳлĕмсене каччăсене кĕртмеççĕ, Совет Çарĕнчен таврăнакан салтака вара чармарĕç.

Алăк уçăлса кайсанах, пӳлĕмре никам та курăнмарĕ, кровать çинче выртакан Катя çеç тăрса ларчĕ. Анчах унăн пит-куçĕнче савăнăç шевлийĕ курăнмарĕ. Темшĕн вăл хăйне малтанхи пек мар, пачах урăхла тыткаларĕ. Халăх хушшинче сарăлнă сăмахсен чăнлăхне пĕлес шутпа панă ыйтусем çине те ответлеме шутламарĕ. «Эпĕ ун çинчен илтсе те, калаçса та йăлăхнă», – терĕ çеç. Ку вара салтака тата та ытларах тĕлĕнтерчĕ. Нумай шухăшласа тăмарĕ вăл, тарăхнипе общежитинчен тухса утрĕ.

Çапла вĕçленчĕ каччăпа хĕр хушшинчи пилĕк çула пынă туслăхпа юрату. Каччăн пĕрремĕш таса юратăвне хаклама тата упрама пĕлмен хĕр çăмăлттайлăхĕ уйăрчĕ вĕсене пĕр-пĕринчен.

*1966-1971-мĕш çулсем.*



**Элĕк районне кĕрĕкен Мăн Ямаш шкулĕнчи 8-мĕш класран 1969-мĕш çулта вĕренсе тухнă Мăн Ямашпа Яккушкăнь тата Акташпа Шуркасси ял хĕрĕсем.**

**Пĕрремĕш ретре (сулахайран):** *Галя Семёнова (Шуркасси), Зоя Енилова (Мăн Ямаш), Валя Молотова (Яккушкăнь), Зоя Леонтьева (Мăн Ямаш), Роза Лаврентьева (Яккушкăнь), Анфиса Максимова (Акташ), Рита Ильдер (Мăн Ямаш).*

**Иккĕмĕш ретре (сулахайран):** *Ольга Петрова (Шуркасси), Юлия Ефимова тата Нина Скворцова (Яккушкăнь), Юлия Семенова тата Люся Семенова (Шуркасси), Люся Лермонтова (Мăн Ямаш).*

**Виççĕмĕш ретре (сулахайран):** *Галя Семенова (Шуркасси),* **Галя Андреева** *(Мăн Ямаш), Юлия Григорьева, Валя Рдыкова, Люба Бармина (Яккушкăнь), Люба Ильдер (Мăн Ямаш), Надя Александрова (Яккушкăнь).* **1969-мĕш çулхи июнь.**

## Утать салтак ял урамӗпе



Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Ленин ячӗпе хисепленекен колхоза кӗрекен Сӗнтӗкҫырми ялӗнче 1918-мӗш ҫулхи майӑн 1-мӗшӗнче ҫуралса ӳснӗ Сергей Ефимович Андреев вӑрҫӑччен те, ун хыҫҫӑн та уй-хир ӗҫӗсенче вӑй хунӑ. Калас пулать, пур йывӑр ӗҫсене те ун чухне лашасем пурнӑҫланӑ. Шел пулин те, фронтовиксен шучӗ ҫулсеренех чакса пырать. Ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинче Германи рейхсканцлерӗ Адольф Гитлер Совет Союзне хирӗҫ пуҫарнӑ 1941-1945-мӗш ҫулсенчи вӑрҫа хутшӑннӑ ентешӗн кунҫулӗ те 2009-мӗш ҫулхи апрелӗн 25-мӗшӗнче сӳннӗ. *1997 ҫул.*

# ТУПМАЛЛИ

УМСĂМАХ ...............................3
*Çулĕсем таçта васкаççĕ* ..........7
*Кӳршĕ ял каччи* ......................10
*Общественный корреспондент* ....12
*Активист печати* ..................15

СĂВĂСЕМ
Икĕ юлташ ...........................18
Çурхи лăпкă каçсенче .........19
Туслăха упрасчĕ ..................20
Хĕрсем – хитре чечексем .....21
Шухăшсем ............................22
Хăçан пулĕ-ши йĕрке? ..........28
Çумăр, эсĕ ăçта-ши? .............31
Вĕлле хурчĕ .........................32
Пчелы ......................................33
Соседка ...................................34
Манаймастăп .........................35
Пулаймарăмăр пĕрле ............36
Ултавлă юрату ......................37
Юратушăнах çунаççĕ ...........38
Çĕнĕ çул умĕн ......................39
Паян пирĕн юбилей ............40
Эрех-тăшман, çавна ан ман..42
Эрехшĕнех ан çунсам...........43
Эрех чури – Урине .............44
Сăмах – тăван ял çинчен ......45
Ямашсем .................................55
Тăвансем .................................62
Тăван кил ..............................66
Юратса пурăнмалла .............67
Пурнăç майлашса пырать ...72
Пурнăç ĕçпе тăсăлать ............73
Пĕр-пĕрне телей сунар .......74
Салтак арăмĕ ........................75
Мирлĕ тăтăр çут тĕнче ........76
Салтака каяççĕ каччăсем .....77
Çар салтакĕ ..........................78
Ударница ................................79
Кăмашасем ...............................80
Пĕрлĕх кирлĕ халăха ............81
Ватăлма эс ан васка .............89
Кил хуралçи ..........................90
Пирĕн çунатлă туссем ..........91
Чĕрчунсемшĕн тăрăшатăп ...92
Йĕкехӳресем ............................93
Талант .......................................94
Маттурсем ...............................95
Колхозра ĕçсем нумай .........96
Колхоз вара арканать ............97
Киноискусство .......................99
ГОЭЛРО ................................100
Уйрăлу ...................................101
Тĕлпулу .................................102
Телее пĕрле шырар ...............103
Ан мансам ............................104
Çуркунне ...............................105
Çурхи илем ..........................106
Палан .......................................107
Вăрман ....................................108
Куккук .....................................109
Çумăра кĕтсе ..........................110

ЮРĂСЕМ
Канăçа çухатрăм .................112
Ытамрах пулăн .................114
Çĕмĕртсем çеçке çурсан .....116
Сирень чечекĕ .....................118
Аса илетĕп… .......................120
Шанчăк .............................122

*ИКĔ КАЛАВ*
*Çулçӳрев* .................................124
*Юратнă-ши вăл ăна?* .................135

*Сăнӳкерчĕксем – автор архивĕнчен.*

## Для заметок

## Для заметок

**САВЕЛЬЕВ Геннадий Александрович**

# ПОЮ О ЛЮБВИ

**Стихи и песни**
*На чувашском языке*

Дополненное и обновлённое издание

Редактор-корректор *Г.А. Савельев*
Компьютерный набор *Т.А.Архиповой, И.М. Николаевой*
Верстка *А.Г.Максимовой, Е.Н. Наумовой*
Дизайн обложки *Н.Л.Лукиной*

*На обложке – автор книги Г.Савельев в 2008 году*

Сдано в набор 5.05.2010. Подписано в печать 10.06.2010 - 2.12.2010.
Формат 60x84/16. Физ. печ. л. 9. Бумага офсетная. Печать офсетная.
Основной тираж – 300, дополнительный – 200 экз. Заказ № 90, 353.

Типография ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46. E-mail: newtime1@mail.ru.